

# Ялав

ИЮЛЬ—АВГУСТ
1946

7-8

# 1947 çулшăн ÇАК ЖУРНАЛСЕНЕ ÇЫРĂНСА ИЛМЕ ВАСКĂР!

## ЯЛАВ

Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕн уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литература журналĕ.

Журналта чăваш совет писателĕсен çĕнĕ произведенийĕсем—повĕçсем, калавсем, пьесăсем, сăвăсемпе поэмăсем, критикăпа библиографи, публицистика тата искусство ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем пичетленеççĕ.

ХАКĔ: çулталăка — 48 тенкĕ, ултă уйăха — 24 тенкĕ, виçĕ уйăха — 12 тенкĕ. Уйрăм номерĕ—4 тенкĕ.

Ăна кашни почта уйрăмĕнче тата почтальонсем урлă çырăнса илме пулать.

## ТĂВАН АТĂЛ

Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕн виçĕ уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литература альманахĕ.

Альманахра паллă чăваш совет писателĕсен çĕнĕ произведенийĕсем—романсем, повĕçсем, калавсем, пьесăсем, сăвăсемпе поэмăсем, критикăпа библиографи тата искусство ыйтăвĕсемпе çырнă статьясем пичетленеççĕ.

Уйрăм номерĕн хакĕ—8 тенкĕ.

Ăна кĕнеке-хаçат сутакан пур магазинсемпе киосксенче тата почтальонсенчен илме пулать.

Чăвашгосиздат 1947 çулта чăваш чĕлхипе çырнă çĕнĕ кĕнекесем пичетлесе кăларать. Çав шутра В. И. Ленин, И. В. Сталин кĕнекисем, шкул ачисем валли тăван чĕлхепе çырнă учебниксем, вырăссемпе чăвашсен паллă писателĕсемпе поэчĕсем çырнă романсем, повĕçсем, поэмăсем, сăвă кĕнекисем, калавсен пуххисем пулаççĕ. Кусемсĕр пуçне, политикăллa-массăллă кĕнекесемпе брошюрăсем, тĕрлĕ справочниксем пичетленсе тухаççĕ.

**ВУЛАКАНСЕМ!** Çитес çула валли «Ялав» журнал çырăнса илĕр, çав вăхăтрах хăвăр юлташăрсене те çырăнса илтерĕр.

Чăваш кĕнекисене тата «Тăван Атăл» альманаха КОГИЗ магазинĕсенче, Союзпечать киоскисенче, ялпо магазинĕсенче илме пулать.

ЧĂВАШГОСИЗДАТ.

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# Ялав

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литература, критика тата искусство журналĕ

**№ 7-8** ИЮЛЬ—АВГУСТ **1946 ç.**

## ЖУРНАЛТА ПУРРИ:

Çĕнтерӳçĕ халăха тивĕçлĕ литературăшăн (умстатья).

***Н. Дальнов***—Сестра (сăвă).
***А. Лазарева***—Алимпи (калав).
***Г. Савгай***—Ĕмĕтпе пурăнăç (калав).
***Ал. Аслут***—Тинĕс (сăвă).
***П. Ялгир***—Инçетрен (сăвă).
***А. Тимофеев***—Юратнă хĕре (сăвă).
***В. Долгов***—Чаплă винтовка (очерк).
***А. Медведев***—Çумăр умĕн (калав).
***А. Толстой***—Вырăс кăмăлĕ (калав).
***Яков Ухсай***—Влтава шывĕ хĕрринче. Ырă çурт (сăвăсем).
***В. Веселов***—Савни парни (калав).
***М. С. Спиридонов*** художник картинĕсем.
***В. Андреева***—Паруççи пукани (ача-пăча калавĕ).
Тăван çĕршывшăн паттăррăн çапăçса пуçне хунă поэтсен сăввисем: Андрей Петтоки, Вл. Бараев, Усли Ваçлейĕ, Кĕçтюк Кольцов тата Максим Ястран сăввисем.
***А. Алга***—Ырă ят (статья).
***Н. Степанов***—Юрă ăсти (статья).
***Литература архивĕ***: Ф. П. Павловăн халиччен пичетленмен сăввисем.
***Г. Алендей***—Леонид Агаковăн Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи произведенийĕсем (критикăллă статья).
***В. Алагер***—Пурăнăçа тĕрĕс мар кăтартакан пьеса (критикăллă статья).
***В. Долгов***—Шкул ачи çинчен çырнă калав (критикăллă статья).
Ачасем валли чи паха художествăллă кĕнекесем çырас тĕлĕшпе ирттерекен конкурсăн условийĕсем.
***Г. Хирбю***—Юрату вальсĕ (юрă. Сăвви А. Эсхелĕн).
Пĕлетĕр-и эсир?
Журнала Сизов, Харлампьев, Осинский художниксем иллюстрациленĕ.
Пĕрремĕш хуплашки çинче М. С. Спиридонов художник картинĕ.



*Эпир—çĕнтернисем—паян*
*Пĕлĕт çине куç ывăтатпăр:*
*Хĕвел тухса сарăлнăран*
*Кăвак тӳпе хĕлхемĕ янкăр.*

*Хĕлхемлĕ янкăр тӳпере—*
*Курсамăр—ушкăн-ушкăн кайăк...*
*Курсан, чунпа хĕре-хĕре,*
*Тӳссе тăраймăн—вĕçсе кайăн!*

*Епле çунат çумне çунат,*
*Хушса вĕçеççĕ; йăлтăр-йăлтăр*
*Çунат çинче илем çунать,*
*Вăл тĕнчипе мухтавлă çăлтăр.*

*Епле пропеллер, çил касса,*
*Чуна çĕклентерет пит ыррăн!*
*Саватпăр савнăçлă сасса:*
*Вăл тĕнчипе мухтавлă юрă.*

*Вĕçме çуралнисем çинчен*
*Юрлать паян çĕнтернĕ халăх,*
*Кайăксемпе пĕрле инçе*
*Юрри вĕçет хавасланмалăх.*



# ÇĔНТЕРУÇĔ ХАЛĂХА ТИВĔÇЛĔ ЛИТЕРАТУРĂШĂН

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Ленин хулинче тухса тăракан „Звезда“ тата „Ленинград“ журналсем çинчен 1946-мĕш çулхи августăн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ, унтан драмăллă театрсен репертуарĕпе ăна лайăхлатасси çинчен августăн 26-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ, хальхи литературăпа искусствăра пулнă пысăк йăнăшсемпе çитменлĕхсене тарăннăн уçса кăтартнипе пĕрлех, социализм çĕршывĕнчи литература вăйĕсем умĕнче тăракан паянхипе малашнехи ĕçсен программине сарлакан та уçăмлăн, тĕрĕссĕн тата витерӳллĕн кăтартса параççĕ.

Темиçе çул хушши совет литературинче совет саманин çинчен элеклекен писательсен халăхшăн сиенлĕ произведенийĕсем журналсенче вырăн йышăнма пултарнă. Çавнашкал, Зощенко писатель хăйĕн нимĕне юрăхсăр калавĕсенче совет çыннисене культурăсăр, ухмахла, айваннăн, обывателле йăласемпе кăна пурăнакансем пек туса, суйса, элеклесе кăтартнă; çапла вара вăл совет çĕркисем çине хулиганла пăхни пулать. Вăл, Зощенко, Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче, нур вăя хурса тăван халăха пулăшас вырăнне, çавнашкал пасквилле „пултарулăхĕпе“ çапкаланса, йĕкĕлтетсе çеç пурăннă пулин те, политика сисĕмлĕхне çухатнă çынсем ăна совет журналĕсенче вырăн панă. Çакăн пекех, Ахматовăн нихăçан халăх ĕмĕчĕшухăшĕсемпе çыхăнман „искусство-искусствăшăн“ текен декадентсен исленнĕ çулйĕрĕнче, ишĕлнĕ саманан пăнтăхнă ванчăкĕсем хушшинче выртакан пессимизмла, тĕлсĕр хуйха-суйхăллă, идеологи тĕлĕшпе сиенлĕ сăввисем журналсенче вырăн йышăнма пултарнă. Çаксемпе пĕрлех юлашки çулсенче хăшпĕр ытти çамрăкрах писательсем те идейăсăр, политика тулашĕнче тăракан юрăхсăр е сиенлĕ произведенисем çырса кăларнă. Çав произведенисенче совет саманине, социализм тапхăрĕнчи çынсене тĕрĕс мар сăнласа кăтартнă.

Литература ĕçĕ—государство ĕçĕ. Совет государстви, совет халăхĕ хăй çинчен элеклекен писательсене, пурăнăçра халăха нимĕнле пулăшу та паман çыравçăсене, пуçран шăлса ачашлас çук, вĕсен суя та сиенлĕ произведенийĕсене хирĕçлемесĕр, пурăнăçран шăлса ывăтмасăр тӳссе тăма пултараймасть. Центральнăй Комитет çакна хăйĕн постановленийĕсенче питĕ вырăнлă та вăхăтлăн асăрхаттарать.

Центральнăй Комитет политика тулашĕнче тăракан идейăсăр произведенисем пирки çапла витерсе калани тата çавнашкал çыравçăсем совет саманипе унăн çыннисене тĕрĕс мар сăнласа пани çинчен асăрхаттарни, литература умĕнче тăракан ĕçсен программине таррăннăн та уçăмлăн кăтартни—çаксем пурте чăваш совет литературине те тĕрĕс тĕллевлĕн пырса тивеççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче чăваш писателĕсем, хамăр халăхăн паттăр ывăлĕ-хĕрĕсемпе пĕрле çапăçу хирĕсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç хĕçе-хĕç тăрса вутра пулнисем те, аслă фронтсенчи çĕнтерӳсемшĕн пĕтĕм вăйне хурса тылра ĕçленисем те,—нумайĕшĕсем сахал мар лайăх произведенисем çырчĕç. Пирĕн литература тематика енчен аслăланчĕ, форма тĕлĕшĕпе пуянланчĕ; пирĕн писательсенчен нумайĕшĕсем хăйсен вăйлă шухăшĕсемпе хĕрӳллĕ кунсемпе тан пыма пултарнине кăтартрĕç. Куншăн вĕсене тăван халăх мухтаса хаклать. Лайăх ĕçлесе пынă писательсен илемлĕ произведенийĕсем пирĕн пичетре те тивĕçлĕ хак илчĕç.

Асăннă çитĕнӳсемпе пĕрлех пирĕн литературăра сиенлĕ йăнăшсемпе çитменлĕхсем те пулчĕç. Хăçан, ăçтан тата мĕн пирки пулма пултарнă-ха çав йăнăшсем? Мĕнле йăнăшсем вĕсем, тата епле вĕсене пĕтермелле?

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ хăйĕн постановленийĕсенче кăтартнă литературăри йăнăшсемпе çитменлĕхсем пирĕн чăваш совет литературинче çак юлашки çулсенче, нихăçанхинчен ытла вăрçă хыççăн, писательсем хушшинче идеологи ĕçне кирлĕ таран туса пыманнинчен килсе тухнă. Идеологи фронтĕнчи ĕçсене вăйсăрлатни политикăллă сисĕмлĕхе çухатии патне илсе пырать, вăлах паянхи кунсен историллĕ задачине таррăннăн ăнланса илме чăрмантарать. Ку ĕнтĕ писательсене те, вĕсен ертсе пыракан органĕсене те тивет.

Отечественнăй аслă вăрçă хыççăн, паянхи кунсен задачине тĕплĕн ăнланса илеймен пиркиех, писательсем хушшинче тепле „чуна кантарас“ шухăш-хăмăр сĕрĕмленсе тухрĕ. Вăйлă та киревсĕр тăшмана хĕрӳллĕ те хăрушă вăрçăра хамăр умма чĕркуçлентернĕ хыççăн, тăватă çулталăк хушши тăшмана хирĕç хĕçе-хĕç тăрса, юн юхтарса çапăçнă хыççăн, хуçалăха хăвăртрах ура çине тăратса малалла аталантарас шутпа халăх çĕнĕрен пысăк ĕçсем тума тытăнсан, хăшпĕр писательсен чунĕсенче лăш! сывласа илес кăмăл хускалнă-мĕн.

Çапла вара вулакан „чунне кантаракан“ сăвăсем çуралса тухкаларĕç те, вĕсем пирĕн журналсенче хӳтĕ вырăн тупма пултарчĕç. Хузангайăн „Ялавăн“ 4-мĕш номерĕнче пичетленнĕ сăввисем пурте политика тулашĕнче тăраççĕ; вĕсем—идейăсăр, хуйхăсуйхăллă сăвăсем. Çамрăксене коммунистла воспитани парас вырăнне (поэтăн пархатарлă шухăшĕ çакă пулмалла çке-ха), çавнашкал хуйхăллăн нăйăлтатакан кĕвĕсем, çамрăк этем куçне пессимизм сĕрĕмĕпе витсе, малаллăха уççăн пăхма чăрмантараççĕ, унăн чун ырлăхне сивĕ хурлăхпа сĕвĕрĕлтереççĕ. Çавăн евĕрлех, Тукташ поэтăн юлашки çулсенче „Тăван Атăл“ альманахпа „Ялав“ журналта пичетленнĕ хăшпĕр сăввисем, политика тулашĕнче тăнипе, нимĕнле идейăсăр пулса тухнă. Вĕсем те, çамрăксене кирлĕ воспитани парас вырăнне, тĕрлĕрен вăрттăнхĕттĕнлĕ шухăш пеккисемпе çамрăк çынна алхасма, иртĕнме кăна йĕкĕлтеççĕ. Çавнашкал идейăсăр, юрăхсăр сăвăсем хăшпĕр çамрăк поэтсен те пичетленсе тухкаларĕç. Çапла вара, хайхи „чуна кантарас“ шухăш сиенлĕ произведенисем çырасси патнех илсе çитерет.

Çĕршывăмăр историллĕ çĕнĕ ĕçе тытăнчĕ. Çĕнтерӳçĕ халăха, малалла çĕнтерӳсем тума, пархатарлă, вăйлă, ырă шухăшсемпе хавхалантаракан поэзи кирлĕ.

Писательсемпе искусство çыннисем хушшинче идеологи ĕçне вăйлăлатса пыман пиркиех, пирĕн драматургинче те пысăк йăнăшсемпе çитменлĕхсем пулчĕç. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ августăн 26-мĕшĕнче драмăллă театрсен репертуарĕпе ăна лайăхлатасси çинчен йышăннă постановленийĕ чăваш совет драматургине те пырса тивет. Вăрçă вăхăтĕнчи тылри пурнăçа тĕрĕс мар кăтартакан пьеси-

хавасла пулма, хăйĕн ĕçне ĕненекен, йывăрлăхсемпе чăрмавсенчен хăраман, кирек те мĕнле чăрмавсене çĕнтерме хатĕр тăракан пулма воспитани парассинче тăрать".

Политика тулашĕнче тăракан идейăсăр пушă „илемлĕ" произведенисем, паллах, совет çамрăкĕсене коммунистла воспитани пама пултараяс çук.

Çулте кăтартнă йăнăшсемпе çитменлĕхсем, тĕрĕс сăмаха тÿррĕнех каласан, пирĕн чăн-чăн критика çуккинчен те килнĕ. Чăнах та, юлашки çулсенче пирĕн чăваш литературинче йĕркеллĕ критика пулман; критикăллă статьясем пичетленкелесе тухнă пулин те, вĕсем илемлĕ произведенисене, авторне кÿрентерес мар, е унăн умĕнче йăпăлтатас тесе, принципсăр, нимĕне юрăхсăр мухтанă кăна. Пире, литература ĕçне вăйлăлатас та лайăхлатас тесен, çирĕп шăллă критика кирлĕ; паянхипе малашнехи çулсемшĕн марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕсенчен тухса тăракан наукăллă критика кирлĕ.

Илемлĕ литература пирĕн çĕршывра халăха воспитани парас ĕçре мĕн тери аслă вырăн йышăнса тăнине яланах пысăк шута хунă. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ чăваш литературишĕн те, кашни халăхсемшĕн пекех, литературăна аталантарма пысăк майсем туса пачĕ. Пирĕн республикăра „Тăван Атăл" альманах тата „Ялав" журнал тухса тăраççĕ. Илемлĕ произведенисене пичетлесе пымашкăн икĕ журнал пурри—пирĕн писательсемшĕн пысăк телей. Анчах та манас пулмасть: çав журналсем урлă писатель халăхпа калаçать, халăх писательсенчен нумай тата лайăх произведенисем ыйтать.

Журналăн идея тĕлĕшĕпе уçă тĕллевĕ пулмалла. Журналăн задачине ВКП(б)Центральнăй Комитечĕ хăйĕн постановленийĕнче уççăнах кăтартса пана: вăл—совет çыннисене, пуринчен ытла çамрăксене, коммунистла воспитани парас ĕçре Совет государствине пулăшса пырасси; вăл—совет стройĕн пурăнăç никĕсĕ пулса тăракан совет политики кăтартнипе ĕçлесси. Çакă пирĕн куллен-кунхи ĕçсен программи.

Литературăра ĕçсем нумай, ĕмĕтсем пысăк. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, акă çаксене паян кун асра тытса тăма кирлĕ: вăл—писательсем хушшинче, марксизм-ленинизм наукине вĕренсе пырса, идеологи ĕçне вăйлăлатасси, писательсен, ытларах халăхпа пĕрле тăрса, пурăнăçа тарăннăн вĕренесси, хăйсен произведенийĕсенче пуринчен ытла паянхи кунăн пултаруллă ĕççыннине сăнласа кăтартасси. Вăл çын—вăрçăран çĕнтерсе тухнă мухтавлă çын. Вăл пысăк пултарулăхпа, никам çĕнейми вăй-халпа, хăйĕн ĕмĕтне нихăçанхинчен ытла çирĕп шанчăка хурса, коммунизм çулĕпе пырать. Апла пулсан, ăна сăнласа кăтартни урлă пĕтĕм халăха хăйĕн историллĕ ĕçĕнче пулăшасси, çапла государствона пулăшасси—писателĕн пархатарлă, чи кирлĕ ĕçĕ.

Эппин, çĕнтерÿçĕ халăха тивĕçлĕ, таса та тарăн шухăшлă илемлĕ литературăшăн!

---

# СЕСТРА

## *НИКОЛАЙ ДАЛЬНОВ*

Хаяррăн çĕкленчĕ ун чух çилтăман.
Тискеррĕн шавларĕ суранлă вăрман.
Атака пуçланчĕ... Тăшман йăвине
Аркатнă чух ÿкрĕм пĕр йывăç çумне...

Çăл еврĕ тапса вĕри юн юхнă май,
Куççем тĕксĕмленчĕç. Çухатрăм тăна.
Пĕлместĕп: эп выртнă кăштах е нумай,—
Суран ыратнийĕ вăратрĕ мана.

Çут ир килнĕ пек тĕттĕм кас вырăнне,
Сестра ăнсăртран тухрĕ куçăм умне.
Васкавлăн, ачашшăн тасатрĕ юна,
Çыхса вăл сиплерĕ вĕри сурана.

Йĕтре çапнипе йăванас йывăççем.
Чĕр юн шыраса шăхăрас пульăсем.
Çапах та пĕр шиксĕр, хăюллăн сестра
Мана илсе тухрĕ тискер çулăмран.

Тÿлеккĕн пăхса вăл тулли кăмăлпа
Каларĕ: „Ан хуйхăр, сывалăн часах".
Лăпланчĕ суранăм темле хăватпа,
Вăй илчĕ хавшанă ÿт-пÿ те шăпах.

Юратнă сестрaçăм—çут кунăм, телей,
Сана виличчен те манаймĕ чĕрем.
Мана эс хăтартăн хăруш вилĕмрен,
Хупланнă кунçулшăн çĕклерĕн хĕвел.

---




*Ӳкерчӗкӗсем П. Сизовӑн.*

*Калав*

## АЛЕКСАНДРА ЛАЗАРЕВА

Ҫӳллӗ ыраш хушшипе хӗрпе каччӑ васкаса утаҫҫӗ. Ыраш пучаххисем, вӗсене ӑсатнӑ пек, пуҫӗсене тая-тая юлаҫҫӗ. Умри вӗҫӗ-хӗррисӗр хирте хум хыҫҫӑн хум явкаланса чупать...

Каччӑ ҫурӑмӗ ҫинче йывӑр кутамкка пулин те, питӗ васкаҫҫӗ вӗсем, сӑнӗ-пичӗсем ҫинче ҫав тери шухӑша кайса, тимлесе пыни палӑрать.

Часах вӗсем хурӑнлӑ ҫул ҫине тухрӗҫ. Кунта ҫак тӑрӑхри темиҫе ялтан фронта кайма тухнӑ ҫынсем пухӑнса тӑнӑ. Команда пуҫтарӑнасса кӗтсе, вӗсем тӑванӗсемпе, ҫывӑх тусӗсемпе юлашки хут сывпуллашнӑ.

Каччӑпа хӗр пӗр ҫӳллӗ те яштака хурӑн айӗнче чарӑнса тӑчӗҫ.

— Ну, чунӑм Алимпи, тем пекех тавтапуҫ эс мана кунта ҫити ӑсатнӑшӑн.

Вӑл васкаса пирус тивертсе ячӗ. Унтан хӗр ҫине йӑвашшӑн пӑхса илчӗ те:

— Асӑрха-ха ҫак хурӑна,—терӗ.—Сан пекех яштака та вӑрӑм вӑл, сан пекех илемлӗ, кӑтра пуҫлӑ.

— Ма вара?—тӗлӗнчӗ хӗр.

— Эпӗ ку хурӑна катаранах суйласа илсе, утрӑм. Акӑ, эпӗ ун ҫине хам ята ҫырса хуратӑп, ҫакӑнтан иртсе ҫӳренӗ чух ӑна курса мана асӑнӑн,—терӗ те каччӑ, кӗсъинчен пекӗ кӑларчӗ.

Унтан вӑл, хурӑн ҫине пысӑк саспаллисем касса, „Иван" тесе ҫырса хучӗ.

Вӑл пӗр хушӑ чӗнмесӗр тӑчӗ, унтан сылтӑм аллине хӗрӗн хулпуҫҫийӗ ҫине хучӗ.

— Алимпи, епле пулсан та, хӑвна нимрен хакла хуракан Ивана ан ман, эппин. Ытлах манма пуҫласан, ҫакӑ шурӑ хурӑн ҫине килсе пӑх. Юрӗ-и?

— Эпӗ сан пек лайӑх калама пӗлместӗп, Иван,—ответ пачӗ ӑна Алимпи.—Пурне те калама хӑюлӑх та ҫитмест манӑн. Сана эпӗ...—хӑвах пӗлетӗн—чунтан юрататӑп. Ӗмӗрне те манассӑм ҫук. Вӑрҫӑ пӗтсен курӑн акӑ... Юрӗ, ҫак илемлӗ хурӑн курса тӑраканни пултӑр...

Вӗсем пӗр хушӑ чӗнмесӗр тӑчӗҫ.

— Эпӗ манмӑп-ха, ун ҫинчен сӑмах ҫук. Анчах та, Иван, эсӗ вӑрҫа каятӑн-ҫке... Сана темрен тем пулсан, мӗн тӑвас вара манӑн?

— А эсӗ ун ҫинчен ан шухӑшла, Алимпи. Вилӗм хӑй хӑратӑр пирӗнтен.

— Юрӗ, Иван, манмӑп. Хам сӑмахӑма тытма пӗлетӗп эпӗ, ҫавна эсӗ яланах асту,—терӗ юлашкинчен Алимпи ҫирӗппӗн.

Кутамккасем, чемодансем, пӗчӑк арчасем тиенӗ лавсем Шупашкар еннелле хусканса кайрӗҫ, вӗсем хыҫҫӑн ҫураннисем те утрӗҫ. Иван Алимпине хӑй ҫумнелле туртса илсе чуптурӗ те, вӗсем уйӑрӑлчӗҫ.

Хуллен кӑна ӑшӑ ҫил вӗрчӗ, шурӑ хурӑнсем кӑтра пуҫӗсемпе вӑштӑртатса илчӗҫ. Лавсем хыҫҫӑн кӑвак тусан йӑсӑрланса юлчӗ. Тӑванӗсене, тусӗсене ӑсатма тухнӑ хӗрарӑмсем, ватӑ-вӗтӗсем куҫҫулӗсене шӑла-шӑла, вӑрҫа каякансем хыҫӗнчен шурӑ тутӑрсемпе сулса юлчӗҫ.

Иван лавсене хуса ҫитсе куҫран ҫухалсан, Алимпие калама ҫук салху пулса кайрӗ. Хӑй сисмерӗ—питҫӑмартийӗсем тӑрӑх куҫҫулӗсем шӑпӑртатса анчӗҫ. Унӑн Иван хыҫҫӑн чупас килсе кайрӗ, анчах та урисем темшӗн вырӑнтан хускалмарӗҫ. Хӑваласа ҫитсен те, ӑна пурӗпӗр каялла таврӑс ҫук-ҫке.

* * *

Алимпи Ивана ӑсатсан темиҫе кунтанах, пӗр лӑпкӑ уяр кун, кӑнтӑрла иртсен, колхоз правленийӗ умӗнчи ешерекен ҫӑкасем айӗнче ялти пӗтӗм халӑхӑн пухӑвӗ пулчӗ. Унта колхоз председателӗ Анна Тимофеевна ӗнер кӑна Сталин юлташ радиопа каланӑ сӑмаха вуласа пачӗ. Пӗр сӑмахне сиктермесӗр итлерӗҫ ӑна ялҫыннисем.

— „Тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма халӑхӑн пӗтӗм вӑйне хурар! Хамӑрӑн ҫӗнтерӳшӗн малалла!„—вуласа пӗтерчӗ те Сталинӑн сӑмахне Анна Тимофеевна хӗруллӗн, хӑй умӗнче ларакан ҫынсене пӑхса ҫаврӑнчӗ.

— Тӗрӗс! Ҫапла тумалла! Ҫаплах тӑватпӑр!—тесе тӳрех сиксе тӑчӗ пӑлханса кайнӑ бригадир Уксах Якку.—Ӗмӗрне те нимӗҫ айне пулас ҫук эпир!—каклишкине ҫӳлелле ҫӗклесе силлерӗ вӑл.—Пӗлетӗп эпӗ вӑл ылханлӑ йӑха! Ҫирӗм ҫичӗ ҫул ӗлӗкрех паллашма тӳр килчӗ мана вӗсемпе... Аманнипе тыткӑна лексен, татмалла мар урана татса ячӗҫ. Урам сывӑ пулнӑ пулсан—паян тухса кайӑттӑм вӗсене тӳнккеме, ан тив, хам алларан иртнӗ пултӑр, ҫапах...

Уксах Якку хӗрнӗҫемӗн хӗрсе пычӗ, унӑн хӗрелсе кайнӑ ҫамки ҫине шултра тар тумламӗсем тапса тухрӗҫ.

— Акӑ мӗн калам сире, тӑван ял йыш! Сталин юлташ халӑха мӗн-мӗн тума хушнине пурте ӑнлантӑр ӗнтӗ. Пӗр минут сая ямасӑрах ҫавсене тума тытӑнмалла пирӗн. Унсӑрӑн ӗҫ тухмасть. Ӗҫ тухмасть, тетӗп, илтрӗр-и? Фронт ҫирӗп пуласси пирӗнтен, тылра юлнисенчен килет! Ҫӗрне-кунне, ырмаканма пӗлмесӗр ӗҫлес пулать пирӗн. Ӗҫлес пулать! Веле-селе, унталла-кунталла пӑхкаласа ӗҫлекенсе-



же малашне куçăм ан куртăр мавăн, илтрĕр-и? Пĕтĕм халăхпа ылханатпăр, этем вырăнне хумастпăр ун пеккисене!..

Тата нумай каларĕ Уксах Якку. Питĕ вĕри каларĕ,—вăл ун пек калаçма пултарасса никам та шухăшламанччĕ. Юлашкинчен, самантлăха чарăнса тăнă хыççăн, пурне те пăхса çаврăнчĕ те, хыттăн ыйтрĕ:

— Ну, мĕн калăр ĕнтĕ мана хирĕç?

Пуху тӳрех шавласа кайрĕ.

— Мĕн каласси пултăр...

— Сăмахху питĕ тĕрĕс!

— Ĕçлес пулать ĕнтĕ, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле!

— Унсăр, эс калашле, ăçтан май килтĕр?

— Хамăршăн вĕт, хамăршăн...

— Фронтрисене пăшăрхантармăпăр, хăйсем çирĕп пулччăр çеç... Пирте ĕç тăмĕ!

— Чимĕр-ха, чимĕр, пурте пĕр тăрук ан шавлăр,—терĕ çакă вăхăтра Анна Тимофеевна, аллине çĕклесе.—Сăмах ыйтăр, пуху йĕрки пултăр. Кам калас тет?

Шав чарăнсан, хыçалти ретсенче ларакансем хушшинчен хĕрарăм сасси илтĕнчĕ:

— Эп калам-ха, эппин...

Пурте каялла çаврăнса пăхрĕç. Сăмах ыйтаканни Алимпи пулчĕ. Сталин сăмахне вуланине итлесе ларнă чух та, унтан Уксах Якку каланă чух та, вăл çав тери хумханса ларчĕ... Куçĕ умĕнче пĕрмай Иван сăнĕ тăчĕ. Таçта инçетре, хĕвеланăçĕнче, хаяр çапăçусем пыраççĕ, кунталла ăнтăлакан тискер тăшмансене чарма тăрăшса, пирĕн салтаксем паттăррăн вĕçене хирĕç тăраççĕ... Сталин та каланă ав ун çинчен... Çав паттăррăн çапăçакансем хушшинче—Иван, манăн юратнă, никамран хаклă Иван!.. Манăн—Иван, тепĕрин—Петĕр, тепĕрин—Васли...

— Кала, Алимпи,—терĕ Анна Тимофеевна.

— Эп кăшт çеç, темиçе сăмах...—пуçларĕ Алимпи чĕтрекен сасăпа.—Якку пичче каларĕ ĕнтĕ: хытăрах ĕçлемелле, терĕ. Эпĕ те çавăн çинченех... Эппин, вăрçăрисене эпир хамăр пулăшмасан, кам пулăштăр? Пурте хамăран-çке унта, хамăршăн юн тăкаççĕ; камăн чунĕ чăттăр çак вăхăтра аллисене усса ларма? Алăсене усса ларма мар—халĕ пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлемелле! Эпĕ хам акă пур ĕçе те икĕ хут ытларах туса пыма пулатăп. Ытти хĕрсем те манран кая юлмĕç, тесе шутлатăп. Урăх ман ним каламалли те çук...

— Вот, ку тĕрĕс!—сиксе тăчĕ Уксах Якку, Алимпи каласа пĕтерсен.—Тĕлĕнмелле тĕрĕс!.. Ну, хĕрсем, илтрĕр-и Алимпи мĕн каланине? Мĕн шутлатăр, каласа парăр!

Темиçе самант хушши шăп пулчĕ. Унтан Сахвине ятлă хĕр кăштах çĕкленчĕ те:

— Йышăнатпăр,—терĕ.—Алимпирен кая юлма эпир уксах-чăлах мар вĕт!

— Халиччен ĕçре намăс курманна—тинех курмăпăр!—хушса хучĕ унпа юнашар ларакан Зоя.

Уксах Якку каклишкипе çĕре чышса илчĕ.

— Эх, маттур та пирĕн хĕрсем!

* * *

... Ял хыçĕнчи сарлака Çăка улăхĕнче, акăшсем евĕрлĕ, шап-шурă кĕпеллĕ хĕрсем çав тери хĕрсе кайса утă çулаççĕ. Вăшшăн-вăшшăн, чăн-чăн! янăраççĕ çава сассисем. Паккус хыççăн паккус ӳкет, илемлĕ йăрансем пек пулса юлать. Хушшăн-хушшăн шавлăн калаçнисем, янравлăн кулнисем анлă улăха ырă саванăçпа тултараççĕ. Улăх çинче, тӳпере, чĕвĕлти кайăксем вĕçсе çӳреççĕ.

Ах, çӳллĕ те çăра ӳснĕ-çке куракĕ! Тинĕс пек хумханать çаранĕ. Тĕрлĕ тĕслĕ чечексем, утă çулакансене саламланă пек, варкăш çил вĕрнĕ май, пуçĕсене сула-сула илеççĕ. Ĕнтĕ Атăл пек анлă улăх каталать, ансăрлансах юлать. Ĕç ăнса пынă чух кирек камăн та чĕри хаваслăхпа тулать. Акă, хĕрсем паккус вĕçне тухса темиçе самантлăха канма ларсан, улăх тăрăх юрă янраса каять.

> Юратсах паян ĕçлерĕм
> Эп колхозăн хирĕнче-хирĕнче...

Çак самантра çĕр çинче хаяр вăрçă çук пекех туйăнать. Яланхи пекех çутă хĕвел кулать, çутă хĕвел шăранса ирĕлет. Пĕтĕм улăха хĕвелпе типекен утă шăрши сарăлать.

Улăх варрипе çиппе çапнă пек тӳрĕ сукмак тăсăлать. Çав сукмакпа Валя-почтальон велосипедпа ыткăнса килни курăнчĕ. Акă вăл канма ларнă хĕрсем патне çитрĕ кăна, сывлăш çавăрса илме те ĕлкĕреймерĕ, хĕрсем сике-сике тăрса ăна йĕри-тавра сырăнса та илчĕç.

— Валя, кама телей кӳтĕн паян?

— Мана çыру пур-и?

— Мана пур-и тата?

— Никамран малтан мана пар, Валя!

Валя, çамки çинчи тарне шăлса илсе, сăран сумкăран пĕр ывçă çыру кăларчĕ. Унтан çиелти çырune илсе çӳлелле çĕклерĕ.

— Васильевой Олимпиаде!

Алимпи тӳрех çырăва илме аллине тăсрĕ, анчах Валя çырăва çурăмĕ хыçне пытарчĕ.

— Çук, çук,—терĕ вăл чеен кулса.—Ку çырушăн ташламалла пулать.

— Тĕрĕс! Тĕрĕс!

> „Линка-линка авкаланма
> Юман хăма кирлĕ...

Ал ҫупса юрласа ячӗ пӗр хӗрӗ ҫавӑнтах. Унтан тепӗри,—ушкӑнӗпех...

Ух, авкаланса ташша ячӗ вара Алимпи! Ун хыҫҫӑн Варварине, Сахвинене, Зояна ташлаттарчӗҫ.

— Ыттисем ан кулянӑр, сире ташлама ыран черет ҫитӗ,—терӗ Валя, велосипед ҫине ларса.

— Ну, хӗрӳ-праҫ, пурне те салам сире! Иван ҫырать,—терӗ Алимпи, куҫӗсемпе ҫырӑвӑн малтанхи йӗркисем тӑрӑх чупса тухсан.

— Вула, Алимпи, пире итлеме юрать пулсан...

— Вӑрҫӑран ҫыракан ҫырура вуламалла марри мӗн пулма пултартӑр?

— „Ҫапӑҫу хирӗнчен хӗрӳллӗ салам сире, тӑван колхоз хӗрӗсем,—вула пуҫларӗ Алимпи.—Усал тӑшман пирӗн ҫӗр ҫине шалтан-шала кӗме пикенет. Анчах эпир ҫав сӗмсӗр нимӗҫсене, эсир утӑ ҫулнӑ пекех, пулемётсенчен ҫулатпӑр. Ҫакна ҫеҫ ан манӑр, хӗрсем: эпир ҫӗнтересси сирӗнтен те килет. Колхозра вирлӗрех ӗҫлӗр! Эсир ӗҫсемпе хытӑрах пулӑшсан, вӑрҫӑ часрах вӗҫленӗ, эпир нимӗҫсене тӗп туса килсене часрах таврӑнӑпӑр.

Сывӑ пулӑр, сирӗн аллӑрсенче ӗҫ ӑнтӑр!

Салампа, сирӗн ял каччи—Иван Горбачов".

Тепӗр хучӗ ҫине ҫырнине Алимпи хӑй ӑшӗнче вуларӗ.

„Манӑн шурӑ хурӑнҫӑм, Алимпи!

Нимӗҫсемпе хаяррӑн ҫапӑҫу пырать-и, ӑҫтан та пулсан пӗр-пӗр ухмах пуля шӑйӑрса кайнипе вӗри юн шӑпӑртатса анать-и, эпӗ пурӗпӗрех, яланах санпа пӗрле"...

Фронтран илнӗ ҫырусене вуланӑ хыҫҫӑн, хӗрсем каллех ҫӗнӗ вӑйпа ҫулма пуҫларӗҫ. Анлӑ Ҫӑка улӑхӗ каллех ӗҫ шавӗпе тулчӗ.

Виҫӗ кун хушши ҫулмалли улӑха хӗрсем икӗ кунтах ҫулса пӗтерчӗҫ.

— Ну, пултаратӑр та иккен, хӗрӳ-праҫ! Камӑн алли ҫӑмӑл-ши кунта?—терӗ халь ҫеҫ ялтан пынӑ бригадир Уксах Якку.

— Алимпин, Алимпин! Вӑл паян пуринчен иртерех тухса ҫулма пуҫланӑ,—терӗҫ хӗрсем харӑссӑн.

Унтан хӗрсем ҫависене хулӗсем ҫине хучӗҫ те ялалла утрӗҫ.

Улӑх тӑрӑх каллех юрӑ янӑраса кайрӗ.

„Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн,
Ма вӗҫетӗн пӗр пӗччен?.."

* * *

Тата темиҫе кунтан хӗрсем тырӑ вырма тухрӗҫ. Пуҫланчӗ вара хӗрӳ ӗҫ ыраш пуссинче. Хӗрсен харсӑр аллисенче ирпе ирех пуҫласа тӗттӗм пуличченех ҫутӑ ҫурла вылярӗ. Виҫ-тӑват кунтан пӗтӗм ыраш пусси ҫӗмелсемпе тӗрленчӗ.

Алимпи канма пӗлмесӗр вырса пычӗ. Хӑва пек хӗрӗн пилӗкӗ те ыратмарӗ пулмалла. Хӑй сӑмахне ҫирӗп тытрӗ вӑл: нормӑна икӗ хут ытла тултарса пычӗ. Юлташӗсем те унтан юлмарӗҫ. Вара Вускасси хӗрӗсем ҫинчен хаҫатра та мухтаса ҫырчӗҫ.

...Унтан анкартисем хыҫӗнче кунӗн-ҫӗрӗн молотилка кӗрлеме пуҫларӗ. Чӑн малтан ҫапнӑ таса ыраша хӗрсем ҫӗленӗ шап-шурӑ михӗсем ӑшне тултарчӗҫ, михӗсене лавсем ҫине тиесе, хулана хатӗрлев пунктне ӑсатрӗҫ.

Ку—Вускасси колхозӗ ҫӗнтерӳ валли панӑ малтанхи парне пулчӗ...

* * *

Кун хыҫҫӑн кун иртрӗ, ӗҫ хыҫҫӑн ӗҫ пулса пычӗ. Ялан ӗҫпе пурӑннӑ хӗрарӑмсем ҫу иртнине те асӑрхаса юлаймарӗҫ. Акӑ, кӗркунне те ҫитрӗ. Сарӑ хӗвел самантлӑха кӑна пӗлӗтсем хыҫӗнчен тухса вӑрттӑн йулкаласа илет. Час-часах кассӑн-кассӑн сивӗ ҫил вӗрет. Ылттӑн тӗслӗ ҫулҫӑсем ҫӗре тӑкӑнаҫҫӗ. Карти-картипе тӑрнасем вӗҫсе иртеҫҫӗ.

Ку вӑхӑтра колхозра татах темӗн тӗрлӗ ӗҫ те тумалла. Анчах каҫсерен хӗрсем пӗр ҫӗре пухӑнса ал ӗҫне тума та манмаҫҫӗ. Ҫук, тӗрӗ тӗрлемеҫҫӗ вӗсем, чӗнтӗр ҫыхмаҫҫӗ, сурпан-масмак тумаҫҫӗ. Вӑрҫӑри салтаксем валли ӑшӑ алшиш, чӑлха, кӗпе-йӗм хатӗрлеҫҫӗ. Ку ӗҫре ертсе пыма та Алимпие хушрӗҫ

Малтанах Алимпи Райок юлташӗпе пӗрле килӗрен-киле ӑшӑ тумтирсем пухса ҫӳрерӗ. Хӗрарӑмсем хыпаланса кам алшиш-чӑлха, кам ҫӑм-тир, кам ҫӑматӑ, кам кӗпе-йӗм параҫҫӗ. Ухилка арӑмӗ патӗнче ҫеҫ кӑштах тытӑнса тӑмалла пулчӗ.

— Ҫук та ҫук,—тет.—Мана кам туса парать,—тет.

— Ну, юрӗ, инке. Сирӗн пек хыткукарсен ӗмӗрех ҫук ӗнтӗ. Ҫаплах пултӑр. Анчах та, вӑрҫӑ пӗтсен, салтаксем киле таврӑнсан, вӗсене эсир епле пулӑшни ҫинчен каласа паратпӑрах,—терӗ Алимпи.

Вӗсем алӑка хыттӑн хупса урамалла тухрӗҫ.

— Тӑхтӑр-ха,—терӗ Ухилка арӑмӗ, вӗсем хыҫҫӑнах чупса тухса,—эпӗ халех!

Часах кӗлет алӑкӗ хӑлтӑртатни илтӗнчӗ. Тепӗр минутранах Ухилка арӑмӗ икӗ мӑшӑр ҫӑм тӑла илсе тухса пачӗ.

— Ҫак тӑла пурри ҫинчен мансах кайнӑ эпӗ,—терӗ вӑл васкавлӑн.

Халӑх намӑслантарасран хӑрарӗ пулмалла...

— Тавтапуҫ парнӳшӗн, анчах тек ун пек хытӑ ан пул,—терӗҫ Алимпипе Райок кулса.

Ҫӗрӗпех ӗҫлерӗҫ хӗрсем. Ашӑ япаласем пухса ҫитерсен, вӗсене майла-майла посылкӑсем ҫӗлерӗҫ..



Харпăр хăйĕн посылкисем ăшне кĕскен те питĕ илемлĕн çырнă çырăвĕсене тирпейлесе чикрĕç. „Манăн чĕре çумĕнчи сăмахăм паттăр салтакăн кăмăлне кайтăр, унăн чунне ăшăтма пултартăр. Кучченеçĕмпе çырăвăм хамăн савни патне çитинччĕ.“ Кашни хĕр çапла шухăшларĕ хăй ăшĕнче. Унтан шухăшĕсене пĕрне-пĕри каласа пĕлтерчĕç...

Çапла иртсе пычĕç кĕрхи кунсем.

Пĕрре каçалапа Алимпи ял вĕçĕнчи халăх пухăвне кайрĕ.

Пуху вăрăма тăсăлмарĕ. Кĕскен кăна сăмах каларĕ колхоз председателĕ Анна Тимофеевна.

— Юлташсем, пирĕн халĕ нумай калаçса тăма вăхăт çук. Вăрçă хаярлансах пырать. Хăвăрах ăнланатăр—пирĕн халĕ пĕтĕм вăя фронта пулăшас ĕçе памалла. Çапла-и, юлташсем?

— Çаплах ĕнтĕ, çаплах, ун çинчен пурте пĕлетпĕр,—терĕç пухурисем.

— Акă, пирĕн колхозран халĕ тăватă çын чугун çул валли вăрман касма, икĕ çын Сăр шывĕ урлă кĕпер тунă çĕре ĕçлеме каймалла. Тен, ача-пăчасăррисенчен хăйне ирĕккĕн каяс текенсем пулаççĕ? Ĕçĕ пĕр-ик кунлăха мар, чылай вăхăта пырать. Паллах, колхозран ĕçкунĕ шутласа паратпăр вĕсене...

Пĕр хушă чĕнекенсем пулмарĕç. Унтан Алимпи сасси илтĕнчĕ:

— Мана ярăр...

— Çук, Алимпи, сана ĕç панă, эпир, эсĕ фронта ăшă тумтирсем пухса ярассине хăвăртрах туса çитер.

— Пĕтĕмпех хатĕр, хулана леçмелле çеç...

— Пит аван, эппин. Апла-тăк, Сăр шывĕ хĕррине кай, хирĕçлеместĕп. Анчах икĕ кунтан лере пулмалла.

— Юрĕ, ĕлкĕрĕпĕр...

— Тен, тата кам та пулин каяс тет?—ыйтрĕ Анна Тимофеевна.

— Эпĕ каятăп.

— Эпĕ те!

— Мана та ан хăварăр,—пĕрерĕн-пĕрерĕн сасă пачĕç ытти хĕрсем те.

* * *

... Сăр хĕрринче тем чухлех халăх ĕçлет, пуринчен ытла—хĕрарăмсем. Кашнин аллинчех кĕреçе, е лом, е пăчăкă та пуртă. Нумайĕшĕ носилкăсемпе. Халăх питĕ тимлесе ĕçлет. Акă, пирĕн Алимпипе Райока та кĕреçесем тыттарчĕç, унтан çĕр чавакансен çирĕм виççĕмĕш номерлĕ бригадине ячĕç.

Вăл—халь çеç йĕркеленĕ бригада пулнă-мĕн, унта бригадирне те уйăрман-ха. Кăнтăрлапа бригадăна икĕ çын пычĕç,—вĕсем техниксем пулас. Кунти пысăк кĕпер вăрçă валли грузсем турттарма кирли, çавăнпа та ăна часрах туса пĕтерме тăрăшмалли çинчен каласа пачĕç вĕсем. Унтан бригадир уйăрасси çинчен сăмах хусканчĕ. Кунта никам та пĕр-пĕрине пĕлмен, палламан, тĕрлĕрен районсенчен, тĕрлĕрен ялсенчен пухăннă çынсем пулнă. Пурпĕрех, бригадире Алимпине уйăрчĕç, мĕншĕн тесен техниксем вăл ыттисенчен хăюлăрах пулнине часах асăрхарĕç. Унтан ăна бригадирăн мĕн-мĕн тумаллине ăнлантарса пачĕç.

— Чи малтан санăн хăвăн пример кăтартса пымалла.

Пуçланчĕ вара хĕрӳллĕ ĕç. Çĕр чавасси—питĕ ывăнтаракан ĕç. Çапах та Алимпи ертсе пыракан хĕрсен бригади намăс курмарĕ. Малтанхи кунах задани çĕр çирĕм процент тулчĕ. Хĕрсем ырми-канми ĕçлерĕç. Каç пулса тĕттĕмленсен тин барака таврăнса апат çисе выртаççĕ те ирхине кăвак çутăпах тăрса ĕçе тытăнаççĕ. Иккĕмĕш кунĕнче задани çĕраллă процент тулчĕ.

Çапла иртрĕç кунсем. Хура кĕркунне пуçланчĕ. Сарă хĕвел ĕнтĕ тачка пĕлĕтсем хыçне ĕмĕрлĕхех пытаннă пек туйăнать. Час-часах çӳмăрпа хутăш вĕтĕ юр чалăшшăн çаптарса çукалать.

Пурпĕрех, усал çанталăк тăрăшса ĕçлекен халăха кансĕрлеймерĕ. Икĕ километра яхăн тăсăлакан кĕпер ӳссех пычĕ.

...Пĕрре, урлă-пирлĕн йĕпе тăман çуса тăчĕ пулин те, Алимпи ертсе пыракан бригада, хăйне панă заданийе пурăнаçлас тесе, çĕрлеччененех ĕçлерĕ. Алимпи, ăшша пиçнипе, тумтирне хывсах ĕçлерĕ. Ĕç тĕттĕм пулсан тин пĕтрĕ. Хĕрсем барака таврăннă чух юр çума чарăнчĕ, анчах хирĕçле сивĕ çил вĕрсе тăчĕ. Вĕриленсе кайнă Алимпи чылайччен сăкманне тӳмелемесĕр, юлташĕсемпе калаçса пычĕ.

— Ыран ĕçе иртерех кайса халăхран малтан пĕтерĕпĕр те, часрах килсене саланăпăр...

Анчах та çĕрле, кĕтмен çĕртен, Алимпи калама çук йывăр чирлесе ӳкрĕ. Вутри пек вĕриленсе çунма, йынăшма, ахлатма тытăнчĕ вăл. Баракри хĕрарăмсем шалтах хăраса ӳкрĕç.

— Шăнса пăсăлчĕ-ши?

— Куç ӳкрĕ пулĕ, чиперскере.

Çав вăхăтра барак патне санитарнăй машина пырса тăчĕ. Сестра Алимпие нумай пăхса тăмарĕ, машина ăшне кĕртсе вырттарчĕ те хула больницине илсе кайрĕ. Алимпи вĕсене нимĕн те астумарĕ.

... Тухтăрсем калана тăрăх, Алимпин шăннипе ӳпкисем пăсăлнă пулнă. Çавăнпа та унăн больницăра чылаях выртма тивнĕ. Сывалма пуçласан, вăл нимрен малтан Ивана аса илчĕ. Ку таранччен яла çырусем темиçе те килчĕç пулĕ, тесе, шухăшĕпе киле часрах çитесшĕн пулчĕ. Çавăнпа та, кăшт сывалма пуçласанах, вăл тухтăртан хăйне киле яма ыйтрĕ, анчах тухтăр ăна итлесе те тăрасшăн пулмарĕ.

— Юрамасть, вăхăт çитсен сана хамăрах пĕр минут та ытлашши тытса тăрас çук,—терĕ вăл.

* * *

Ĕнтĕ пĕтĕм ял шап-шурă çемçе юрпа витĕннĕ. Юрĕ татах лăпăстатса çăвать-ха. Кашни килĕн мăрьисенче кăвак тĕтĕм йăсăрланса тăрать. Урамсенче, картасем çинче, салакайăксем чĕвĕлтетсе сиккелесе çӳреççĕ.

Пĕчĕк пӳртре тĕксĕм те кичем. Хура кĕтесре кивелсе кайнă турăшсем палăраççĕ. Икĕ чӳрече хушшинче пĕчĕк куçкĕски çуталса тăрать. Куçкĕскинчен аялларахран çĕмĕрт пек куçсем Алимпи çине йăвашшăн пăхаççĕ. Ку сăнӳкерчĕкне Иван авăн çапнă чухнех ярса паначчĕ. Çавăнтан вара вăл урăх çыру та яман.

— Анне, кайса пĕлсе кил-ха, Иванран чăнах та

çыру пулман-и вара?—терӗ Алимпи тӗпел кукринче мӗшӗлтетекен ватӑ амӑшне.

— Эй, аптӑранӑ хӗрӳпе! Каланӑ сана, çук тесе. Амӑшӗнчен те яланах ыйтатӑп,—кӑмӑлсӑр ответ пачӗ Алимпие амӑшӗ.

Алимпи салхуллӑн сывласа илчӗ, вара нумай вӑхӑт чӳрече умӗнче чавсаланса ларчӗ. Пӗтӗмпех аса илчӗ вӑл: вӗсем ача чухне Иванпа пӗрле уя пӑрçа татма кайнине, Хурӑн варне ӗне çитерме çӳренине, унтан, кӑштах пысӑклансан, выртмана çӳренисене... Хӑш чухне вӗсем çапӑçатчӗç те, унтан каллех туслашатчӗç. Унтан вӗсем шкула та пӗрлех çӳренӗччӗ, урокӗсене те пӗрлех вӗреннӗ. Пуçламӗш шкултан вӗренсе тухсан, амӑшӗ чирлесе ӳкнипе, Алимпи малалла вӗренеймерӗ. Иван татах малалла кайрӗ, çичӗ çул таранах вӗренчӗ вӑл. Унтан, ашшӗ вилсен, вӑл та урӑх вӗренеймерӗ вара.

— Çурçӗр те иртрӗ пулӗ, çывӑрах ӗнтӗ, хӗрӗм. Ара мӗн ун пекех асапланатӑн, упӑшку мар вӗт, каччӑ тени вӑл татах тупӑнӗ-ха,—терӗ кӗтмен çӗртен Алимпи амӑшӗ.

Алимпи çывӑрма выртрӗ, анчах та вӑл нумаях çывӑраймарӗ. Темшӗн, чунӗ лӑпкӑ пулмарӗ унӑн. Çавӑнпа та ирхине ирех тӑчӗ вӑл. Урамра шӑпах пулнӑ, пӗр сасӑ та илтӗнмен. Вӑл пӗр юлташӗ патне кӗрсе пӑхрӗ, тепӗри патне—нихӑшӗ те çук. Ялти хӗрсем пурте вӑрман касма кайнӑ иккен.

Алимпи Ивансен килӗ еннелле пӑхса ассӑн сывласа илчӗ те тӳрех хурӑнлӑ çул еннелле утрӗ.

Акӑ вӑл—çаралса юлнӑ яштака хурӑн. Вӗсем Иванпа юлашки хут çак хурӑн айӗнче уйрӑлнӑччӗ. Халӗ ӗнтӗ шурӑ хурӑн тавра шап-шурӑ юр выртать.

Алимпи çултан пӑрӑнса хурӑн умне пырса тӑчӗ. Вӑл хурӑн çинчи „Иван" тесе çырнине шырарӗ, анчах та, çӗçӗпе каснӑ картсене юр тулнӑран, саспаллисем палӑрмарӗç. Алимпи хурӑн çинчи юра алшишӗпе шӑлса тӑкрӗ, унтан „Иван" тесе çырнине курчӗ. Нумай вӑхӑт çавӑн çине пӑхса тӑчӗ вӑл. „Иван, Иван!",—хӑй тӗллӗн пӑшӑлтатрӗ Алимпи. Иванӑн çӗмӗрт пек куçӗсем, каялла çавӑрса хунӑ йӑм хура çӳçӗ халӗ те куç умӗнчех. Епле ӑсӑччӗ тата вӑл! Аллисем епле ӑстаччӗ—тем тума та пултаратчӗç. Хуткупӑсне туртса ярсан вара—никам та лӑпкӑн тӑраймастчӗ.

Çак вӑхӑтра хурӑнлӑ çул тӑрӑх утса пыракан сӑран сумкӑллӑ хӗрача Алимпи тӗлне çитсе чарӑнчӗ.

— Алимпи! Эсӗ вӗт ку? Мӗн туса тӑратӑн кунта?—кӑшкӑрчӗ Валя почтальон катаранах.

— Ахальрен çеç, уçӑлмалла тухас, терӗм. Тухтӑрсем мана чирленӗ хыççӑн ытларах уçӑ сывлӑшра пулмалла, терӗç те—ятарласах уçӑлса çӳреме тухрӑм. Итле-ха, каллех çыру çук-и Иванран?

— Ç-у-ук!—темӗнле шухӑша кайнӑ пек тӑсса каларӗ Валя.

— Валя, кала тӗрӗссине! Мӗн эс тытӑнчӑклӑ çын пек...

— Çук, нимӗн те мар.

— Суятӑн, Валя. Эпӗ тӳрех сисрӗм, ан та ӳкӗтлеттер.

— Анчах мана ан ятлӑç...

Валя сӑран сумкӑран сарӑ конверт кӑларса Алимпие тыттарчӗ. Алимпи ӑна пӗр сывламасӑр вуласа тухрӗ.

Ку хут Иван нимӗçсене Мускав патӗнчен хӑваласа янӑ чух герой вилӗмӗпе вилни çинчен пӗлтернӗ. Алимпи ӗненмесӗр татах тепӗр хут вуларӗ. Тӗп-тӗрӗсех, хутне штабранах янӑ, пичет пуссах...

Мӗн пулчӗ вара? Çук, малтан Алимпи ӗненмерӗ те, макӑрмарӗ те, унӑн чӗри кӑна чул пек хытса ларчӗ. Кӑштах тӑхтасан тин вӑл шурӑ хурӑна ыталаса илчӗ те—сасӑпа ӗсӗклесе ячӗ.

Валя нимӗн чӗнме аптӑраса тӑчӗ. Вӑл пӗлтерме васканӑшӑн хӑйне-хӑй ятлаçрӗ. Унтан хӑй те Алимпипе пӗрле йӗрсе ячӗ.

Кӗтмен çӗртен, таçтан çил кашласа килчӗ. Хурӑн тӑррисем лӑстӑр-лӑстӑр туса илчӗç. Телефон пралукӗсем çав тери хурлӑхлӑн ӳлесе макӑрма тытӑнчӗç. Унтан, ерипен, кустӑрма пек юр вӗçсе кайрӗ, кайран вӑл тинӗс хумӗ пек. пысӑкланнӑçемӗн пысӑкланса вӑйланса пычӗ. Акӑ ӗнтӗ, çывӑхри хурӑнсем те палӑрми пулчӗç.

Хӗрсем кӑна та асӑрхамарӗç, хурӑн хӳттинче çавçавах вӗсем шӑппӑн макӑрчӗç. Халӗ тӗнче пӗтсен те, кунтах шӑнса хытса вилсен те—Алимпишӗн пурпӗрех... Вӑл темӗнле тӗлӗкри пек пулса кайрӗ.

— Тепре çилтӑвӑл тухиччен яла çитсе ӳкер,—терӗ Валя, Алимпие хулран тытса.

— Ниçта каяссӑм та килмест ӗнтӗ манӑн...

— Çук, çук, Алимпи, атя, утар! Çул çинче каласӑпӑр...

— Чим-ха, ан васка,—терӗ Алимпи.—Халех...

Вӑл ӑнсӑртран кӗсъинче пулнӑ хачӑпа каларчӗ те унӑн вӗçӗпе хурӑн çине „Иван" тесе çырни çумне „Паттӑр" тесе çырса хучӗ. Çав шурӑ хурӑн çинче паян кун та „Иван паттӑр" тесе çырни палӑрса тӑрать.

* * *

Çав-çавах вӑрçӑ чарӑнмарӗ, вӑл кунран-кун вӑйланса пычӗ. Ӗнтӗ Сталинград патӗнче нимӗçсене пирӗн çарсем тӗппипех аркатса тӑкрӗç. Ку—вӑрçӑри пирӗн телейӗн пуçламӗшӗ пулнӑ, çавӑнпа та пӗтӗм совет халӑхӗ çӑмӑллӑн сывласа ячӗ.

Анчах пӗтӗм тӗнче ылттӑнпа çуталсан та, Алимпи ӗмӗчӗ текех нихăçан та çуталас çук пулӗ. Пӗтӗм тӗнче хӗррипе тан телей пулас пулсан та, Алимпи чӗри нихӑçан та тулли пулас çук пулӗ. Алимпи хӑйне-хӑй ӗçпе кӑна лӑплантарать. Ӗçре анчах хуйхӑ манӑçа юлать пек.

Ӗçне вӑл чӑн та вичӗ çыншӑн ӗçлерӗ, темелле. Унӑн хӑйӗн ӗçӗпе Иваншӑн тавӑрасси килет.

Нумай пулмасть ӑна Сӑр шывӗ патӗнче лайӑх ӗçленӗшӗн Шупашкара чӗнтерсех „За трудовое отличие" медаль пачӗç. Çак вара унӑн чӗрине хавасलантарчӗ, çӗклентерчӗ. Епле хаклама пӗлесӗ иккен çыннӑн ӗçне пирӗн çӗршывра! Таçти ялти хуйхӑрса пурӑнакан чӑваш хӗрне те манман!

Шупашкартан каялла таврӑннӑ чух çул çинче ӑна хӗрӗнкӗрех Карасӑм, сельпо приказчикӗ, хавалаласа çитрӗ. Çул тӑршшипех вара Алимпие хӑй ӑна тахçантанпах юратни, ӑна халех качча илме хатӗрри çинчен пакӑлтатса пычӗ.

Алимпи ӑна хирӗç сӑмах хушманнине кура:

— Эсӗ ытлашши ан пысӑклан, Алимпи,—терӗ юлашкинчен Карасӑм.

— Ӑçта эп пысӑкланни?—ыйтрӗ Алимпи.

— Ма, эппин, манпа калаçмастӑн?

— Калаçатӑп, тӑхта,—терӗ те Алимпи. Карасӑма пӗр хурӑн патнелле çавӑтса илсе пычӗ.—Куратӑн-и, мӗне пӗлтерет ку?—терӗ вӑл, хурӑн çине „Иван паттӑр" тесе çырнине кӑтартса.—Эпӗ ӑна юрататӑп,

урăх мана никам та кирлĕ мар. Çавăнпа та эсĕ мана паянхи сăмахсене текех нихăçан та ан кала.

— Вăл вилнĕ вĕт-ха, Алимпи!

— Пурпĕрех, вилнĕ пулсан та, эпĕ ăна нихăçан та манмастăп.

— Эсĕ мĕн, ухмаха тухнă пулĕ, вилнĕ çынна юратса пурăнма?

— Вилнĕ пулин те, вăрçăра вилнĕ савнине сан пек йĕке-хÿрепе улăштармастăп.

— Урăхла сăмах çук-и санăн мана валли, Алимпи?

— Çук. Пулас та çук.

Çакнашкал йывăр та вирлĕ сăмахĕсене Алимпи асăну çине хурлăх капланса çитнипе тата çумĕнче пыракан çынна нихăçан та юратманнипе тÿрех тĕрĕсне каланă.

Вĕсем хурăнлă çулран ик еннелле уйăрăлса харпăрхăй ялĕсене уттарчĕç.

* * *

— Вăрçă чарăннă! Вăрçă пĕтнĕ! Германи парăннă! —терĕ пĕр ирхине пĕтĕм халăх.

Пирĕн урамра çав тери пысăк уяв пуçланчĕ вара. Тÿпери хĕвел вăл кун ытла та кăмăллăн шăранса тăчĕ. Пур çĕрте те хуткупăс сассисем, хавассăн юрланисем, ташланисем илтĕнсе тăчĕç. Урамсенче мĕн иртенпех хĕрлĕ тутăрсем хĕвел çуттинче ялкăшрĕç. Унта-кунта ачасем савăнса чупса çÿрерĕç.

Часах пуçланчĕ ĕçки-çики, унтан юрри, вăййиташши. Колхоз хĕрĕсем илемлĕн тĕрленĕ шап-шурă кĕпесем тăхăнчĕç. Ял-ял урлă, уй-хирсем тăрăх юрă янăрарĕ. Таканлă лашасен юртти-чуппи пек тăпăртатрĕç атă кĕлисем.

Çак савăнăçа тăвата çул хушши кĕтмелле пулчĕ вĕт-ха. Çавăнпа та паян вунă çулхи ача та, илемлĕ çамрăк пике те юнашар тăрса ташларĕç. Çитмĕл çулхи кинемейĕ, кунашкал чăтмалла хурлăх çĕр çине урăх ан килтĕр, тесе, çичĕ хутчен кĕлтурĕ.

Ĕнтĕ вăрçă пĕтнĕ пулин те, вăрçăра пуçĕсене хунисем киле таврăнас çук. Çапах та, юратнă çын, вăл вилнĕ пулин те, нихăçан те асран тухас çук. Антив, вилменнисем чипер таврăнччăр, çынсем савăннине курса, Алимпи савнă Иванне асра тытĕ те яланах чĕрине йăпатса пурăнĕ. Çапла пусарчĕ хăй хуйхине Алимпи. Çавăнпа паян вăл та савăнăçран юлмарĕ.

... Каллех, яланхи пекех, хĕвелпе пĕрле ĕçе тухаççĕ колхоз хĕрĕсем. Шăкăр-шăкăр шăкăртатса, кашни хăйĕн чĕри патĕнчи шухăшĕсене каласа парать. Куллен-кун кĕтнĕ савăнăç туха-туха тăрать-çке вĕсен умне, кунран-кун каччăсем таврăнаççĕ тăван колхоза.

Алимпи никама та мар—пурне те кĕтрĕ. Вăл пуриншĕн те савăнчĕ, вăл пурне те кăмăллă пулчĕ. Тепĕр чух çеç, чĕрене темĕнле тунсăх пырса кĕрсен, вăл вăрман хĕррине, хурăнлă çул çине тухса юрлатчĕ. Паллах, çамрăк чун тунсăхлатех, çамрăк чунăн сÿннĕ шанчăкĕшĕн вĕри чĕри ырататех. Вăл хăй те ăнланмасть, мĕн кирлĕ-ши татах? Таçтантаçтан, инçетрен такам килсе тухас пек, вара сана вăл ăшă сăмах калас пек...

* * *

Пĕрре, хĕвел анас умĕн, Алимпи хиртен таврăнчĕ те, хăйсен килĕ умĕнче салтак тумтирлĕ каччă ларнине курчĕ. Унăн кăкринче, шÿлкеме çакнă пекех, орденсемпе медальсем йăлтăртатаççĕ.

— Васильева Олимпиада эсĕ мар пуль?—ыйтрĕ вăл, Алимпи çывхарса пынă чух, ура çине тăрса.

— Эпĕ-çке,—тĕлĕннипе шăппăн кăна каларĕ Алимпи.

— Апла пулсан—паллашар, эпĕ Баранов Алексей, Йĕлме-Кассисем, сирĕн ялти Иван Горбачовăн чи çывăх тусĕ. Эпир унпа Мускав патĕнче пĕрле çапăçрăмăр.

Вĕсем пÿрте кĕчĕç. Алимпи хăнана тĕпелелле ирттерсе лартрĕ. Хăй çав тери пăлханчĕ...

— Епле вилчĕ вăл, каласа парăр мана,—чĕтрекен сасăпа ыйтрĕ Алимпи.

— Сан çинчен эпĕ тахçанах пĕлетĕп, — пуçларĕ хăна хăй сăмахне.—Ваня сана ялан аса илетчĕ... Пĕр атакăра ăна пĕр харăс тăвата нимĕç тапăннă пулнă. Виççĕшне вара вăл чиксе пăрахнă, анчах тăваттăмĕшĕ хăйне хыçалтан пырса чикнĕ. Çавă тăваттăмĕшне эпĕ чупса çитсе персе антартăм. Анчах Ваньăна лешĕ вилмеллех амантнă. Вилес умĕн темиçе сăмах çеç калама ĕлкĕрчĕ: „Манăн Алимпи патне кĕрсе тух“—терĕ те, вара урăх сывлăш тухмарĕ унăн.

Алимпи питçăмартийĕсем тăрăх çут шăрçа пек шултăра куççулĕсем йăрлатса анчĕç.

— Эпĕ сана макăртас теменччĕ, каçар,—терĕ Баранов.

— Çук, эсĕ мана ан пăх, иртет вăл,—терĕ Алимпи, куççулĕсене çатса.

Часах Алимпи амăшĕ, хăйсем патне мĕнле çын килнине пĕлсе, сĕтел çине çăмартапа чăкăт ăшаласа пырса лартрĕ. Нумайччен калаçса ларчĕç вĕсем сĕтел хушшинче. Иван çинчен пĕтĕмпех пĕлчĕç. Чăн та паттăр пулнă иккен вăл, чăн та илемлĕ хĕрĕн юратăвне тивĕçлĕ пулнă.

—Тавтапуç сире, кĕтмен хăна пултăм,—терĕ Баранов юлашкинчен, каяс шутпа ура çине тăрса.—Сывă пулăр тепре куриччен, —Алимпипе амăшĕн аллисене тыта-тыта çирĕппĕн чăмăртарĕ вăл.

Унтан кутамккине çурăм хыçне çакрĕ те алăк патнелле утрĕ. Алимпи ăна урама тухсах ăсатрĕ.

— Иван пекех çирĕп, вăйлăскер, — шухăшларĕ Алимпи, ăна хыçалтан пăхса юлса.

Çакăн хыççăн тепĕр эрне çеç иртрĕ. Колхоз хирĕнче хĕрсех ĕç пыратчĕ ун чух. Каллех пĕр каçхине Алимписем патне çав Баранов тенĕ салтак пырса кĕчĕ. Вăл мĕншĕн татах килнине Алимпи малтанах ăнланса илеймерĕ... Анчах çакăн хыççăн Алимпипе Алексей хушшинче пысăк туслăх пуçланчĕ. Пуçланчĕ те—часах кирлĕ пек вĕçленчĕ вăл, часах вĕсен туйĕ пулчĕ...

Çав тери кĕтмен çĕртен пулчĕ ку япала. Мĕнле манчĕ-ха Алимпи хăйĕн малтанхи савнине? Неушлĕ Алимпи хăйĕн юратнă Иванне хăвăртах, ĕмĕрлĕхех манчĕ? Тĕлĕнмелле! Çамрăк хĕрсен чунĕсем мĕн тери çăмăллăн улшăнаççĕ иккен... Халĕ ĕнтĕ, такам та пĕлет, Алимпи телейлĕ, тунсăхламасть, нимĕншĕн те кулянмасть. Унăн упăшки чаплă салтак, Иван паттăр пекех, лайăхскер... Çавăнпа та Ивана урăх аса илмесен те юрать-ши? Анчах, вăл вăрçăра герой пулса вилнĕ-çке-ха! Апла пулсан Алимпи, таса чĕреллĕ хĕр, епле ăна çав тери час манма пултарчĕши?—тесе, нумай шухăшларăмăр эпир. Анчах ку тĕрĕс пулман иккен.

... Ĕнтĕ вăрçă пĕтни иккĕмĕш çул пырать. Пĕр ирхине, кăвак шуçăм тап-таса çуталса хăпарнă чух, ешĕл симĕс улăх çутă кĕмĕл сывлăмпа йăлтăртатса тăнă вăхăтра, Алимпин ывăл çуралнă. Çак пĕчĕк çеç çĕнĕ çын, телейлĕ ĕмĕр çынни, çав тери таса, сывă та мăнтăркка пулнă.

—Иван, манăн паттăр Иванăм,—тенĕ Алимпи, ывăлне кăкăрĕ çумне пăчăртаса.

# ЁМЁТПЕ ПУРĂНĂÇ

***Калав***

***ГРИГОРИЙ САВГАЙ***

I

Шартлама сивĕре ăшă кăмака çинче ларнинчен ырри çук, атьсемĕр.

Ача чухне эпĕ, Киремет тăвайкки çинче кун-каçа чуччу ярăнса киле таврăнсассăн, асаттесен йăлипе тӳрех кăмака çине улăхса каяттăм. Сăхманпа çĕлĕке хывса, çăпатасене салта-салта пăрахаттăм та, шăнса кайнă урасене вĕрирех тĕле пусса лараттăмччĕ. Калама çук лайăхчĕ çавнашкал çĕрте çанçурăма ăшăтса лармашкăн. Ара, çапла пулмасăр! Кашни кирпĕч хăй ăшшине ятарласах сана панă пекех туйăнать те...

Мĕн çинчен кăна калаçмастăмăр-ши эпир, Мĕтри ятлă пиччепе иксĕмĕр, çавнашкал пушă вăхăтра? Киреметри усал шуйттансем çинчен те, Ĕйе çырминчи харсăр ĕйесем çинчен те, Хурчкаварти арçурисем çинчен те халлаплаттăмăр. Çапла шăкăлтатса калаçса ларнă хушăрах йăвана-йăвана кайса ыйăх чăпти айне пулаттăмăр хăшпĕр чухне. Халь ĕнтĕ çав ача чухнехи вăхăт тахçан ĕлĕк-авал ыйăхра курнă тĕлĕк пекех туйăнать...

Пĕринче çапла, вăйăран таврăнсан, манпа пĕрле Петĕр ятлă кӳршĕ ачи те пирĕн пата пырса, ăшăнма тесе кăмака çине улăхса ларнăччĕ.

— Ку сирĕн кăмака мар, пирĕн,—терĕм эпĕ Петĕре. Ара, мухтанас килетчĕ-çке...

— Сирĕн çав,—терĕ Петĕр.—Эпĕ сирĕн мар теместĕп вĕт...

— Ăшăннăшăн мĕн паратăн?—терĕм эпĕ татах. Петĕр мана хирĕç сăмах та чĕнмесĕрех йĕм кĕсъинчен пĕр ывăç кантăрвăрри кăларчĕ те пачĕ.

Çапла эпир кантăрвăрри çие-çие халлап тапратса ятăмăр. Чип-чипер калаçса ларнă хушăрах Петĕр аллисемпе хăлаçланса илчĕ те: „—У-у-у-у, р-р-р-р“ тесе ячĕ.

— Эс мĕскер аташатăн вара?—тетĕп çакна.

— Яроплан курсаччĕ эп, çавна аса илтĕм,—тет Петĕр.—„У-у-у-у, р-р-р!“ тесе пĕлĕте касса пырать, хăямат.

Çĕр çине анса ларас пулсассăн,—мĕне тĕлпулнă, çавна хыпса-çăтса ямалла. Сергей ĕмпичей, карчăкки çав яропланран хăранипе нӳхрепе анса пытаннă, тет...

— Чăнах-и?—тетĕп эпĕ тĕлĕннипе.

— Тупата туршăн,—терĕ те Петĕр, хăй сăмахне алай туса хĕрес хывса илчĕ.

— Ăçта кайса кĕчĕ-ши çав яроплан?—тетĕп эпĕ чăтаймасăр.

— Энĕшкасси урлă Çĕрпӳ еннелле... Эсĕ Çĕрпӳ ярмăркине кайса курнă-и çак?

— Ара, кайнă пулмасăр! Конешнă, кайнă,—тетĕп эпĕ хавасланса,—Каруççель лаши çине те утланса ярăннă, упа та курнă, хĕрлĕ шыв та ĕçнĕ—икĕ стакан...

— Курнă пулсан юрать хăть,—терĕ Петĕр, манпа пĕр каварлă пулса.

— Аçта кайса кĕчĕ-ши çав яроплан?—пĕлес килнипе татах ыйтрăм эпĕ Петĕртен.

— Хăйсен килне кайрĕ пуль,—терĕ вăл, пĕлнĕ пек пулса.

— Апла вĕсен килĕ те пур-ши-мĕн?—тетĕп эпĕ татах.

— Пулмасăр! Конешнă, пур!—тесе хучĕ Петĕр эпир чухлайманнине кура.—Килсĕр нимĕнле япала та çук. Яроплан çинче çынсем ларса çӳреççĕ унта. Çав çынсен килĕсем пулмаллах вĕт-ха...

— Çапла пуль çав,—тесе ятăм эпĕ те, ун шухăшĕпе килĕшсе.

— Эх, çав яропланпа вĕçекен çынсене курасчĕ ман. Курасчĕ те хамăн вĕçме вĕренесчĕ!—терĕ Петĕр вăраммăн сывласа.

— Манăн та вĕçсе пăхасчĕ!—сăмалланса каларăм эпĕ те.

Петĕр сăмахĕнче пурна-киле çитсе тăрас ĕмĕт пур пек туйăнчĕ мана.

Эпир калаçнине Мĕтри итлесе ларнă пулнă.

— Мухтанчăксем!—терĕ вăл, пире ним вырăнне хумасăр.—Вĕçме пикенетĕр мар-и эсир?

— Ăмма пикенес мар-ха?—тетпĕр эпир, иккĕн пĕр майлă пулса.

— Кукшасем! Яроплан яхăнне пырса курма хăратăр вĕт эсир,—тесе хучĕ Мĕтри, хăйне мăнна хывса.

— Хăрамастпăр! Эсĕ ху хăравçă...

— Яроплан курас тесессĕн, малтан салтака каймалла. Лексей Иванчă салтакра ултă çула яхăн пурăнтăм, тет. Темĕн те пĕр куртăм, тет вăл... Яропланне те, яропланпа вĕçекенсене те...

— Пуян Петĕр те курнă!—терĕм эпĕ пиччепе тавлашса.—Вĕсем хăйсен Ваçлейĕпе иккĕшĕ Ярослава кайнă та каялла таврăннă чухне Мускавра яроплансем ларакан тĕле çитнĕ-тăнă, тет. Йĕркипе лартса тухнă, тет хăйсене: пĕринпе юнашар тепĕри... Çывăхах пырса курас тенĕччĕ, тет Пуян Петĕр, анчах йĕплĕ пралукпа карта тытса лартнă, тет йĕри-тавра. Çитменнине, салтаксем хурал тăраççĕ, тет тата...

Эпĕ каласа пĕтерессе кĕтмерĕ Мĕтри:

— Çынсем курни мĕнех вăл! Ху куçупа курас пулсан калани вырнаçуллă пулĕччĕ...

Калаçнă май сисмесĕрех пĕр ывăç кантăрвăррине шĕкĕлчесе пĕтертĕм эпĕ. Петĕр мана татах тепĕр ывăç кăларса пачĕ те ак çапла каларĕ:

— Эх, хăçан салтак ячĕ тухĕ-ши пĕреххут? Кунашкал пĕрмай вуннăра пурăнса пулмасть-ха, часрах вуникке каясчĕ, вунçиччĕ тултарасчĕ те, çирĕме çитесчĕ те, салтак ачи пулса, хулпуççи тулли парне çакса тултарасчĕ те салтака каясчĕ. Унтан вара—яропланпа вĕçмешкĕн!..

## II.

Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă пуçлансан пĕр-икĕ эрнеренех Андрей Михайловича салтака илсе ячĕç. Тепĕр çичĕ уйăхран Марье инке ывăл ача çуратрĕ. Ку Энтри салтакăн пиллĕкмĕш ачи пулчĕ ĕнтĕ.

— „Пуяна—укçа-пухча, чухăна—ача-пăча“, тенĕ авал,—терĕ Марье инке çак пиллĕкмĕш ачи çуралсассăн. Ачи, пĕчĕккĕскер, ăна-кăна пĕлмесĕр янăратса çухăрать.

— Çухăр, ывăлăм, янрат пӳртне,—терĕ апăс-карчăк, тин çуралнă ачана амăшĕ кăкăрĕ патне йăтса пырса.—Çуралсанах усă сасăпа янратса çухăракан ачаран маттур этем пулать, теççĕ... Унтан хăех, ачана ырласа куç ӳкерес мар тесе, хурласа пăрахрĕ, тет.—Тьфу, ачи ытла та чикан пекех хуп-хура, тикĕт лакунĕнчен тухнă пуль ку...

Чăпăл туса таса кипкепе чĕркесе нутăркаса çыхаççĕ те ачана, кивĕ аçам сарса тăрăх сак çине вырттараççĕ.—Ӳс ачам! Çитĕн те салтак пек çирĕп этем пул!—çапла сăмахпа ырă сунать ачине мĕскĕн амăшĕ.

Пилĕк ачаран нихăшĕ те сухапуç тытмалăх пулайман-ха. Марье инке ырми-канми ĕçлесен те ал çитерейместь. Пĕр пĕччен утă çулать вăл, çĕртме тăвать; килти мĕнпур хурапа шурра тасатать, ачисене пăхать. Аслă ачи вунна кайнă пулин те, арçын ĕçне ĕçлеймест-ха.

Ал çитмен пиркиех кĕçĕн ывăлне ят хуртараймасăр виçĕ уйăх иртсе кайрĕ. Ачи кулать ĕнтĕ, аллисемпе хăлаçланать, алла тытсассăн чĕрçи çинче сиккелеме пикенет. Тăваттăмĕш уйăх çине кайсан—ачана Урхас-Кушкă чиркӳне ят хуртарма илсе каяççĕ те, ача, хăйне хĕрес хывма тăнă пачăшкăна сухалран çăлса илет...

— Маттур! Тăшман кулли пулас этем мар! Тур çырлах, тур ан пăрах, амин!—тесе пиллет те пачăшка: „Ну, Петр Андрейчă, ырă сывă пурăнса пурăнăç çулĕ çине тухсам,“—тесе ачана хĕрес хывса светуй шывĕпе сапса ярать...

Çапла тертленсе пурăнать салтак арăмĕ Марье. Пуç сывă пулсан, асапне тӳсме пулĕ-ха, анчах йĕпе çине-сапа. Çав çулхине яла тĕрлĕрен чир-чĕр пырса кĕчĕ. Ачасем хĕрлĕ шатрапа, вăйпитти çынсем вĕри чирпе тăкăнма пуçларĕç... Çава çинче кунсерен çĕнĕ хĕрессем хутшăнса пыраççĕ, ялйыш катăлчĕ.

Икĕ эрне хушшинче Марье инке тăватă ачине кайса пытарчĕ. Пĕчĕк Петĕр кăна амăшне йăпанмалăх пĕр пĕччен тăрса юлчĕ.

Йывăр инкек пусать салтак арăмне. Катанпир пек шурса пĕтсе кайрĕ Марье инке. Таçта кайса кĕчĕ унăн илемлĕ сăн-пуçĕ...

Пĕринче çапла, кĕрхи каç, вĕт çумăр пĕрĕхсе хаяр çил уласа тăнă вăхăтра, Петĕрсем патне пĕр уксах салтак пырса кĕчĕ.

— Андрей Михайлов салтакăн килĕ çак пулатьши?—терĕ вăл алăк уçса ярса.

— Çакă...

— Килхуçи арăмĕ эс пулатăн пуль?

— Эпĕ...

— Марье ятлă пулас пулать?

— Марье.. Сана кам кирлĕччĕ вара?

— Кам калас... Усал хыпар пĕлтерме килтĕм эпĕ... Ан ятласамăр,—терĕ те салтак, хăрах алтупанĕпе сухалне сăтăрса илсе, татах калама тытăнчĕ.

— Сан упăшку Андрей Михалчă хăй вилес-мĕн пулсан мана сан пата çыру çырса яма хушнăччĕ. Анчах та хам хут пĕлместĕп эпĕ. Çавна пула вăхăтра çырса пĕлтерме пулмарĕ. Маншăн çынна пуç çапасси—вилĕм. Халĕ ак киле курма таврăнатăп та, çула майлă кĕрсе тухам, терĕм. Калатăп çке: эпир позицире лараттăмăр. Сасартăк тăшман енчен пĕр яроплан вĕçсе пычĕ те, шăпах пирĕн окоп тĕлне бомба пăрахса хăварчĕ. Хай бомба çĕр çĕмĕрсе çурăлса кайрĕ. Сирĕн мăшăруна вĕлерсе пăрахрĕ: унăн ӳтне нимĕн латтисĕр таткаласа йĕри-тавра сирпĕтсе хăварчĕ. Этем кĕлетки мар, чĕп-чĕрĕ юнлă какай татăкĕсене çеç пуçтаркаласа чикрĕмĕр...—Çакна каларĕ те салтак, чĕрипеле чăтаймасăр ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ...

— Андрей Михайлович мана ак çапла каласаччĕ: „Тантăшсем, чун усала сисет ман... паян-ыран пуçа хуратăп çак вăрçă хирĕнче... Эсĕ ырă-сывă юлсассăн, тăван çĕршыва таврăннă чухне Вăрмар станцинче поезд çинчен ан та пирĕн пата çитсе ман телейсĕр кунçул çинчен юратнă арăмпа ачасене каласа пар“, терĕ. Салтак йăлипе юлташ сăмахне манăçа ярас мар тесе, ятарласах килтĕм эпĕ сирĕн пата. Ырă хыпар пĕлтермерĕм те, ан ятласамăр мана...

Мĕн пĕчĕккренех ашшĕсĕр çитĕнме лекрĕ Петĕре. Çапах та пуçа тайса çӳрекен ача мар Петĕр. Маттур ача! Петĕр—ĕçе юратаканскер. Хăйă чĕлет те хĕç тăвать вăл, тăм çăрать те утлă çар салтакĕсем валли лашасем тăвать...

Пĕринче, пĕлĕт тăрăх сывлăш касса çӳрекен яроплан курсанах, хăма татăкĕсенчен яроплан кĕлетки туса хурать. Петĕр ярópланĕн кĕлетки кăна та мар, сасси те пур иккен: „Р-р-р-! У-у-у-!“ çапла каласа хаваслăнса ĕçлет Петĕр. Пурăнăçра курасси темле те, ĕмĕчĕ—паха!..

Кунран кун, çулран çул иртсе пырать. Пуçламĕш шкултан вĕренсе тухрĕ Петĕр, унăн малалла вĕренмешкĕн те ĕмĕт пур... Анчах инкек куçа курăнса килмест-мĕн: Петĕр амăшĕ сасартăк халсăр пулса ӳкет. Чĕре ыратнипе çĕркаçа асап курать те шурăмпуçĕ çуталса килнĕ тĕле вилсе выртать. Вуникĕ çулта тăлăх-турат пулса юлчĕ Петĕр. Пурăнăç çулĕ такăр мар. Тĕрĕс çул çине тухиччен пайтах асап тӳсме тӳр килет тăлăх-турата. Кам тĕрĕс çул тупса парĕ Петĕре? Кам пулăшĕ ăна пурăнăç сакки çинче тивĕçлĕ вырăн йышăнмашкăн?

Вататă учитель Леонид Маркович Петĕре хăй патне илсе усрав ывăл турĕ.

## III.

Леонид Маркович, уçă сывлăш тесессĕн, тем тăрринчен сикĕччĕ...

— Таса сывлăш—эмел вăл, эмел,—тет учитель. Çава тухсан вара килте те, шкулта та кантăксене ярах уçă тăрататать вăл.

Унăн усрав ывăлĕ Петĕр те хапăл тăвать уçă сывлăша, анчах вăл тӳпери сывлăша нимрен мала хурать.

— Тӳпери сывлăшпа Чкалов пек кăкăр тулли сывлăттăм!—тесе тăтăшах каланă Петĕр.

Леонид Маркович шикленнĕ:

— Тӳпери сывлăш инçе вăл...

Петĕр хăйне майлах ĕмĕтленнĕ:

— Пĕлĕт тăрринче Коккинаки пек ярăнса çӳресчĕ...—Çакнашкал ĕмĕт нихăçан та манăçа кайман унăн.

Надежда Петровнăпа Леонид Маркович Петĕре ҫитĕнтерсе учитĕле вĕрентсе кăларасшăн пулнă.

— Вăтăр ҫул шкулта ĕҫлерĕм. Сывлăх пулсан, тепĕр вăтăр ҫул та ĕҫлеме хатĕр. Сана та учитель пулмашкăн ырă сунатăп,—ҫапла канаш панă Петĕре ҫемьере.

Вуннăмĕш класран вĕренсе тухсан, пĕр кĕркунне, Леонид Марковичпа Надежда Петровна ывăлне Шупашкара вĕренме ăсатса ячĕҫ... Петĕр аслисен сăмахĕнчен тухмарĕ. Хăйне ачашласа ӳстерсе пурăнаҫ ҫулĕ ҫине кăларнă стариксен кăмăлне хуҫас мар тесех, учитĕле тухмалли институтах вĕренме кĕчĕ вăл. Ҫапах та ҫын шухăшĕпе ĕмĕтне карта тытма ҫук, теҫҫĕ...

Институтпа юнашарах—аэроклуб. Студент Петр Андреев институтри лекцисем хыҫҫăн аэроклуба ҫӳресе сывлăш хуҫи пулма вĕренет.

Вăхăт шăвать—ҫулсем иртеҫҫĕ... Тăвата ҫул сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ.

Пĕринче ҫапла, шăматкун, институтран вĕренсе тухас майпа диплом ҫырса пĕтерсен, Петĕр аэродрома тухса чупать. Паян унăн хăй тĕллĕн сывлăша хăпармалла.

— Эпĕ пурпĕрех вĕҫме вĕренетĕп,—ҫак пĕчĕкрен ĕмĕтленнĕ ĕмĕте аса илет Петĕр. Асне илет ачалăх кунĕсене те. Ашшĕне курман та вăл: амăшĕ вилни те нумай пулать. Ҫапах та кăмака ҫинче ăшăнса ларнă чухнех лĕтчик пулма ĕмĕтленнĕ вĕт Петĕр. Леонид Маркович, Надежда Петровна.. Вĕсем пулман пулсан, ăҫта пулĕччĕ-ши Петĕр? Института кĕмелĕх вĕренесси пулатчĕ-ши унтан? Кам пĕлет?...

Паян Петĕре вĕрентекен инструктор Соломаха хыҫалти кабинăна ларать. Штурвал паян Петĕр аллинче.

— Контакт!

— Есть контакт!— ответ парать моторист, пропеллĕре ҫавăрса. Мотор кĕрлет... Самолĕт вырăнтан тапранать те малалла кустарать. Татах пĕр самант... Акă вăл виҫесĕр тӳпери ирĕк сывлăш!

Соломаха кăмăллăн кулкалать. Петĕр те чĕрипеле хĕпĕртесе юрра ярать.

„...Ача чухне ҫуралнă ĕмĕте
Пурнăҫларăм эпĕ ĕмĕрте!.

Аэродрома таврăнсан Петĕре юлташĕсем сырса илчĕҫ...

— Петро!—терĕ ăна Соломаха.—Ĕлĕк эпĕ хамăн тăван ҫĕршывра Днепр ҫине кайса канаттăмччĕ. Халĕ ĕнтĕ, Атăл таврашĕнче ĕҫленĕ май, ыранхи кун Шупашкар ҫыннисен йăлипе йăлăма кайăпăр та пулă тытса шӳрпе пĕҫерсе ҫийĕпĕр, юрать-и?

— Юрать!—терĕ Петĕр шантарса.

Анчах тепĕр кунне ирех радио усал хыпар илсе ҫитерчĕ:

— Вăрҫă... Кĕтмен ҫĕртен, вăрă-хурахла, урнă йытăсем пек асса кайнă нимĕҫ ҫарĕсем ҫĕрҫитмĕл халăхлă Совет ҫĕршывĕ ҫине килсе тапăнчĕҫ. Вăрҫă... Ҫурҫĕртен кăнтăра ҫитиччен мирлĕ хуласемпе ялсем ҫунаҫҫĕ... Кам чĕри чăттăр-ха ҫакнашкал ылханлă чĕртăшмана хирĕҫ мĕнпур чунхавалпа ҫапăҫмасăр?

Аслă Сталин ĕнентерсе каларĕ: тăшман вăйлă та тискер, анчах пирĕн халăх ăна аркатса тăкма пултарать.

Ҫулпуҫăн уҫă сăмахĕ кашни ҫыннăн чĕрине кĕрсе вырăнаҫрĕ. Хальччен мирлĕ пурăннă ĕҫлĕ халăх хĕҫ тытрĕ. Атăл таврашĕнчи ялан лăпкă пулнă аэродром ҫинчен те хурҫă самолетсем пĕлĕте хăпарчĕҫ. Кăнтăрла та, ҫĕрле те кĕрлеҫҫĕ моторсем. Ырми-канми лĕтчиксем хăйсен хĕҫҫисене хăйраҫҫĕ.

Пуҫа усса мар, хастарлă юрă юрласа ҫапăҫăва тухрĕ ҫамрăк лĕтчик Петр Андреев.

„...Ырă кăмăлпа килекене
Хăна туса ярăпăр:
Хĕҫпе килнĕ тăшман пуҫне—
Хĕҫпе касса татăпăр!..“

Отряд командирĕ лейтенант Соломаха хăй отрячĕ валли ятарласах ҫын суйларĕ. Унăн отрячĕнче—Петр Андреев, Хаймулла Каюмов, Анатолий Зеленкин...

— Туссем!—терĕ Соломаха хатĕрленсе ҫитсен.—Пирĕн отряд №-мĕш авиаполка хутшăнать. Малашне пирĕн начальник—майор Мухин пулать. Ҫитес кунсенчех пире „ĕҫ“ хушма пултарĕҫ. Астăвăр, ҫапăҫура пĕрне-пĕри пулăшăр, тăшмана хыҫалтан пырса тапăнма ан парăр...

...Вăхăт ҫитрĕ. Приказ килчĕ. Петр Андреев хăй юлташĕсемпе пĕрле Мускав пĕлĕтне хурал тăма вĕҫсе кайрĕ. Мĕн-мĕн аса килмерĕ-ши Петĕре: ача чухне кăмака ҫинче ларнă кунсенче вĕҫме вĕренесси ҫинчен кантăрвăрри шĕкĕлче-шĕкĕлче калаҫни те, ун пирки Мĕтри ятлă юлташĕпе тавлашни те...

„Леонид Маркович таса сывлăша юратать“...—шухăшларĕ Петĕр. Анчах кунта сывлăш таса мар... Тăшман Мускав яхăнне ҫывăхарнă. Хуласемпе ялсене, МТС-семпе колхоз фермисене, фабрикăсемпе заводсене вут хыпса илнĕ. Ҫăра тĕтĕм мăкăрланса пĕлĕтри сывлăша пăсать... „Мессершмиттсен“ тискер сасси касать. Вĕсем хĕвеланăҫ енчен пирĕн ҫĕршыва вилĕм илсе килеҫҫĕ. Пирĕн халăх юнне сăхаҫҫĕ вĕсем.

Сисмен хутран пĕр „Мессершмитт“ Соломаха самолĕчĕ хыҫне ҫывăхарнине сăнарĕ Петĕр. Сывлăшра вăраххăн шухăшлама вăхăт ҫук. „Мессере“ вĕҫерĕнсе кайма ирĕк памасăр, Петĕр кĕске черетсемпе тăхлан ҫутарма пуҫларĕ... Сисрĕ тăшман... вăл пулемĕтпа пеме тытăннине. Анчах сывлăшра ҫĕр ҫинчи мар иккен... Таҫтан хăяматран татах тепĕр виҫĕ „Мессер“ сиксе тухрĕҫ. Кĕрлеҫҫĕ тăшман моторĕсем, ҫураҫҫĕ пĕлĕте. Сасартăк тăшман Хаймулла самолĕтне вут тĕртсе ячĕ... Петĕрĕн ҫывăх тусĕ—Хаймулла инкеке лекрĕ...

„Юншăн—юн, вилĕмшĕн—вилĕм!“—Петĕр лайăхрах тĕллерĕ те хăй „Мессершмитт“ ҫине тапăнса унăн хӳрине персе татрĕ. Ҫӳлте югран йăхравсăр килнĕ „хăна“ персе анчĕ ҫĕр ҫине...

Лейтенант Соломаха тăшманăн тепĕр „Мессерне“ персе антарчĕ: нимĕҫ лĕтчикĕ хăй самолĕтĕнчен сиксе тухса парашютне сарса ячĕ. Анатолий Зеленкин ҫав парашюта винтпа пĕрех пырса ҫапрĕ те тăшмана тĕптурĕ. Нимĕҫсен тепĕр икĕ самолĕчĕ тарса хăтăлма ĕлкĕрчĕҫ.

Ҫапла пулса иртрĕ пĕрремĕш ҫапăҫу.

Сывлăшран ҫĕр ҫине таврăнсассăн Петĕр кабинăран тухрĕ те аттине хыврĕ.

— Сана мĕн пулчĕ тата?—терĕ ăна Соломаха. Ҫав вăхăтрах сасартăк сăнаса илчĕ вăл: Петĕрĕн сылтăм ури чĕп-чĕр юн...

— Суран пулни ҫинчен сывлăшрах пĕлтерме кирлĕччĕ,—терĕ Петĕре командир.

— Сиксе каçичченех х-х-о-п!—теме хушмаççĕ украинецсем,—таврăчĕ Петĕр.

— Чăвашсем те çаплах иккен. Пирĕн халăх пĕр шухăшлă,—терĕ ăна Соломаха.

Суранĕ çăмăл пулин те, Петĕре сывалма ăсатрĕç.

— Госпитале каймастăп эпĕ,—терĕ Петĕр.—Çапăçурах сывалатăп...

— Сывалма кайманшăн сана суда паратăп,—терĕ Соломаха кула-кула.—Чапаев калашле, сана валли—трибунал...

Госпитале каяс умĕн армирен приказ килчĕ: рядовой лётчик Петр Андреева „лейтенант" званине парас, тенĕ приказра.

Лётчиксем хушшинче лара-тăра пĕлмен çынсем пайтах тĕлпулаççĕ: вăй-халне ниçта кайса шăнăçтарма пĕлмесĕр аптăраççĕ çавнашкал çынсем. Пушă вăхăтра ĕççĕр тунсăхласа ларас мар тесе пулас, хăшпĕрисем хутран-ситрен сыпма та юратаççĕ... Петĕр апла йышши этем мар вара. Анчах госпитальре выртмашкăн тунсăх.

„—Ытахальрен кĕрĕк арки йăвала",—терĕ те Петĕр, дневник çырма тытăнчĕ. Дневникне вăл çырупа пуçларĕ.

*„1 XI. 1941. Мускав.*

Ырă кун сире, хисеплĕ атте-анне!

Вăрçă пирки ман учитĕле вĕренсе тухни харамах кайрĕ тесе калатăр пуль эсир? Çук, апла каласа ан пăшăрхансамăр. Эпĕ—çар лётчикĕ. Институтра вĕренни летчик пулас ĕçре маншăн калама çук усăллă пулчĕ.

Ĕнер сывлăшри çапăçура пултăмăр. Нимĕçсен икĕ самолётне персе антартăмăр.

Маншăн ан шикленĕр. Эпĕ ырă сывах. Сылтăм урана кăштах амантрĕç те, суранĕ йывăр мар. Тепĕр эрнерен тӳрленет, теççĕ тухтăрсем...

Хăвăр пурăнăç çинчен çырса пĕлтерĕр.

Эсир мана пăхса ӳстерсе Тăван çĕршывшăн çапăçма тивĕçлĕ çын турăр. Тавтапуç сире çавăншăн!

Çапăçуран таврăнсанах халăх телейĕшĕн мĕнпур вăйне парса ĕçлекен коммунистсен партн ретне кĕме тесе заявлени патăм. Хама-хам парти членĕ пулма тивĕçлĕ пуль, тетĕп...

Сывă пулăр!

Хĕрӳллĕ салампа—

Сирĕн ывăлăр ПЕТĔР."

---

# ÇАМРĂКСЕН САССИ

## Тинĕс

**_Ал. АСЛУТ_**

Чарлансем вĕçеççĕ ăмăртасшăн
Тинĕсри васкавлă хумсемпе.
Çук! Хумсем чупаççĕ хăвăртраххăн,
Тавлашаймăн пурпĕр вĕсемпе.

Тинĕс, тинĕс, эс шавла хăватлăн!
Çӳлерех çĕкленччĕр хумусем.
Шуррăн-шуррăн хумханса, сăпайлăн,
Пĕрхĕнтерччĕр çутă тумламсем!

Эп сана саватăп, юрататăп.
Сан еннех туртать мана чĕре.
Сăнупа эс кăмăла уçатăн,
Сан кĕввӳ чуна çĕклентерет...

## Инçетрен

**_ПЕТР ЯЛГИР_**

Çавал шыв хĕрринче пур ман ялăм,
Нихăçан вăл тухмасть асăмран.
Ун тавра çитĕнет-çке йăмралăх,
Ешерет аслă улăх-çаран.

Çавăнта пурăнать манăн тусăм,
Чĕререн кăмăллана пике.
Ун сăн-пичĕ—ирхи çутă шусăм,
Кĕлетки яштак хурăн пекех.

Ун патне, ман çыруçăм, çитсемччĕ,
Каласамччĕ хĕрӳ салама.
Эпĕ çыртăм: „Савниçĕм, кĕтсемччĕ,
Ан хуçсам çамрăк кăмăлăма".

---

## Юратнă хĕре

**_А. ТИМОФЕЕВ_**

Çĕрĕм-шывăм, куратăн, илемлĕн
Çитĕнет, суранран чĕрĕлсе...
Савнăçа юратмашкăн иленнĕ
Пирĕн çамрăк, таса чĕресем.

Окопсем çĕрпе тан тикĕсленчĕç,
Кăмрăксем çинче шăтрĕç ялсем.
Çуркунне чечекпе илемленчĕç
Юнпа шӳнĕ суранлă варсем.

Анчах сан асунтан ан çухалтăр
Хăв юратнă тусу нихăçан:
Вăл—хаяр вăрçăра вилнĕ паттăр,
Сан каччу—тăшмана парăнман.

Пурнăçра тепĕр хут эс юратăн.
Пĕр йăл хыпĕ, пĕр сӳнĕ кăвар...
Вăл пулать. Анчах савăш çуратнă
Ырă кăмăл сӳнме тивĕç мар.




*Очерк*

*В. ДОЛГОВ*

Пĕрре, хĕллехи ăшă кун, Волхов фронтĕнче чухне, манăн Рушинова çулĕпе вăрман витĕр каймалла пулчĕ. Вăрманти çул тăваткалне—çул тăвакă çĕрелле каякан çĕре—çитрĕм те пĕр красноармеецпа тĕлпултăм. Ниçталла кайма пĕлмен пирки вăл иртен-çӳренсене кĕтсе тăрать-мĕн. Эпĕ унпа танлашрăм, ун çине асăрхаса пăхма тытăнтăм. Лутра кĕлеткеллĕ çын вăл. Пичĕ сарлака, сăнĕ тĕксĕм. „Восточный тип" теççĕ ун пек сăнарлă çынсем çинчен. Эпĕ вара ирĕксĕрех: „ку е тутар, е чăваш",—тесе шухăшларăм.

— Командир юлташ,—пуçларĕ вăл вырăсла чĕлхепе, тытăнчăклăрах каласа,—манăн Н-ски полка каймалла. Эсир мана çул кăтартса памăр-ши?

„Ку çын тутар пулĕ..." шухăшларăм эпĕ каллех: сăмахсене тутарларах çавăрса калаçать.

— Кăтартса парасси парăп та... анчах эсĕ кам пултăн-ха?

— Эпĕ—красноармеец Терентьев.

„Терентьев" тесен эпĕ пĕр иккĕленмесĕрех:

— Эсĕ чăваш пулас?—терĕм малтанлăха вырăсла.

— Чăваш,—пĕлтерчĕ Терентьев, тутарларах акцентпа.

Эпир иксĕмĕр те хамăр тăван чĕлхепе калаçма тытăнтăмăр. Терентьев, Никифор Антонович, хĕрĕх çулти çын. Вăл пушкăртсем хушшинчи чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн чĕлхинче чăвашла, пушкăртла сăмахсем пĕрлешсе кайнă. Çавăнпа та вăл пирĕн пек мар, кăшт урăхларах калаçать.

Эпĕ хам та Н-ски полка каятăп та... çула май, çакăнтан тытăнса, иккĕн пĕрле утрăмăр. Манăн юлташ пулчĕ вăл. Вăрманти çул çинче эпир иксĕмĕрех пултăмăр.

Пирĕн умра хĕллехи яка çул тӳп-тӳррĕн курăнса выртать. Йĕри-тавра чăрăш вăрманĕ. Çил пачах та çук. Хĕл хĕллекен кайăк-кĕшĕксем—кăсăясемпе уйăпсем тата темĕнле ытти кайăксем, турат çинчен турат çине сиксе, хăйсен çепĕç чĕлхипе темĕскер чĕвĕлтетеççĕ. Пирĕн сасса илтсен, кăштах хăраççĕ те ĕлĕк ял пулнă вырăна уçланкă урлă пĕрин хыççăн тепĕри вĕçеççĕ.

Çапла, çул çинче малалла утнă май, красноармеец Терентьев мана хăйĕн пурăнăçĕ çинчен каласа, хăй вăрçа мĕнле килни çинчен пĕлтерчĕ. Юлашкинчен:

—Сире тата тепĕр истори каласа парам-ха,—терĕ вăл, тем çинчен аса илсе.—Ку ĕç 1919-мĕш çулта пулса иртрĕ...

* * *

Никифор Антонович каласа панă „историне" эпĕ, хамăр землянкăна таврăнсанах, васкаса хут çине çырса хутăм, асăнмалăх юлтăр, терĕм.

„Çип ăçтан çинçе, çавăнтан татăлать", тет халăх сăмахĕ. Çинçе çип пекех пулнă Терентьевсен пурăнăçĕ те. Çамрăк Микихвер тăлăха юлнă. Кăшт çитĕнсен вара, шăпах граждăн вăрçи вăхăтĕнче, Урал ятлă ялта кĕтӳ пăхма кĕрĕшнĕ.

Пĕррехинче, кĕркунне, ăшă та илемлĕ кун, Микихверĕн кĕтĕвĕнчи сурăх-такасем курăк çисе тăраннă та вăрман хĕрринче лăпкăн канса выртнă. Микихвер те юман каска çине канма ларнă. Çамрăк ача шанкă пухса вут хунă, кĕл çинче паранкă пĕçернĕ...

Çак вăхăтра ĕнтĕ кĕтӳçĕ ик юланута курах каять. Сиккипе чуптарса пыраççĕ вĕсем Микихвер патнелле. Иккĕшĕ те çамрăк, маттур йĕкĕтсем. Пĕри пăшалпа, тепĕри—хĕçпе. Сумкăсем пур хăйсен. Сумкисенче туллиех граната.

— Çамрăк тус!—тет пĕри йăсăрланса выртакан вут патне çитсенех.—Эсĕ кам пулатăн?

— Эпĕ—кĕтӳçĕ, Анттун чăваш ачи—Микихвер, чухăн çын...

— Ну, эппин эсĕ—пирĕн тус. Анчах эпир камне эсĕ пĕлетĕн-и?—ыйтать хайхискер каллех.

— Пĕлетĕп.

— Ну, кала—камсем?

— Хĕрлисем.

— Мĕнле пĕлтĕн?

— Çăлтăртан палларăм. Пĕлетĕп, эсир хĕрлисемех... Эпĕ те хĕрли...

— Вот што? —кулса тĕлĕнет юланут çинчи йĕкĕт.

— Ну, эппин, шуррисем ăçтине пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп.

Кун хыççăн икĕ каччă хăйсен урхамахĕсем çинчен ялт сиксе анаççĕ те нумайччен Микихверпе лаççĕ, тăвансем пек калаçаççĕ. Шуррисем ăçтине тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлеççĕ вĕсем. Вĕри кĕл çинче кĕрпеклене пиçнĕ паранкăпа хăналать вĕсене çамрăк кĕтÿçĕ.

— Пăшална кăтарт-ха!—ыйтать Микихвер пĕринчен.—Çитĕнсен эпĕ сирĕн пата, шуррисене хĕнеме, пыратăп.

— Эсĕ çитĕнсе çитнĕ çĕре шуррисем пулмаççĕ. Эпир вĕсене часах ак тĕптăватпăр,—ăнлантарать Микихвере хĕрлĕ салтак. Унтан вăл хăйĕн винтовкине кăгартма тытăнать.—Хитре вĕт!—тет хăй.

— Хитре!—тĕлĕнет çамрăк кĕтÿçĕ.

Антун ывăлĕ вĕсен пăшалне тытсах пăхать, хĕвелпе кушăркаса кайнă аллисемпе шăлса ачашлать ăна. Пăшал кĕпçине хăйĕн çивчĕ куçĕсемпе виçсе:

— Çитĕнсе çитсен,—тет вăл,—эпĕ те сирĕн пек тумтир тăхăнатăп, хĕрлĕ салтак пулăп эпĕ те...

Пăшал вулли çинчи картсене курать те уйăх ачи, пулас салтак, вĕсене уйрăммăн-уйрăммăн шутласа, тĕлĕне-тĕлĕне ыйтать:

— Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр. Ку картсене мĕншĕн тунă? Вăл картсем мĕн паллисем?

— Тепĕр белогвардееца вĕлерсен, вунă карт пулать,—ăнлантарать пуринпе те интересленекен ачана пăшал хуçи.

— Вунпĕр вĕлерсен вара?

— Вунпĕр карт пулать.

— Апла-тăк ăнлантăм, ăнлантăм... Эпĕ те çавăн пек тăвăп, Шуррисене вĕлерĕп—пăшал вулли çине картсем картăп...

Çаксем вара Микихвере, асăнмалăх тесе, вĕр-çĕнĕ шлĕм парса уйрăлаççĕ. Кĕтÿçĕ шлĕма çав тери савăнса, хĕпĕртесе илет. Ăна вĕт ку вăхăтчен никам та çавнашкал парне паман, никам та çын вырăнне хурса хавхалантарман. А халĕ кусем, ăна малтанхи хут çеç курнă пулин те, хĕрлĕ çалтăрлă, вĕр-çĕнĕ шлĕм парса хăвараççĕ. „Лайăх çынсем вĕсем, пăхсах паллă, вĕсем—пирĕн çынсем"—тенĕ шухăшсем вĕçленеççĕ Микихвер пуçĕнче. Да, лайăх çынсем вĕсем! Анчах вĕсен вăхăт çук. Çавăнпа та юланутçăсем лашисене çавăраççĕ те каялла, вăрман витĕр, çил евĕр вĕçтереççĕ. Салтаксем хыççăн сарă çулçăсем çеç, лутра шĕшкĕсем çинчен ÿксе, вĕçсе юлаççĕ...

Çав икĕ йĕкĕт Чапаев отрядĕнчен килнĕ. Разведчиксем пулнă вĕсем. Разведчик пăшалĕ тап-таса, паха, хитре... Пулас салтак Никифор Терентьев унăн номерне те шухăшĕпе ăнкарса юлнă. „Виççĕ, виççĕ, пĕрре, унтан çиччĕ" шутланă вăл. Çак цифрăсене пĕр çĕре хушнă та, вунтăваттă пулса тăнă. „14-мĕш номерлĕ винтовка" тесе шутланă Микихвер, анчах винтовкăн чăн-чăн номерне, вăл калама пĕлмен. Пинсем таран шутлама пултарайман вăл, вĕренмен... Анчах çав цифра унăн пуçĕнче, таçта шухăш тĕпĕнче, пытанса юлнă-юлнах...

Юланутçăсем тахçанах вăрман хыçне пытаннă, тахçанах хăйсен юлташĕсем патне çитнĕ, шуррисем çинчен хăйсен командирне йĕркипе каласа панă.

Хăйне панă хаклă парнешĕн кĕтÿçĕ нумайччен савăннă. Çак ăшă кĕрхи кун ăна ытла та телейлĕн туйăннă. Йăваш çил ăшшăн вĕрнĕ. Йывăçсен тăррисем те урăхла хумханнă пек, хĕпĕртесе-савăнса хуллен-хуллен юрланă пек туйăннă. Çÿллĕ-çÿллĕ тÿпери чăлт шурă пĕлĕт татăкĕсем калама çук илемлĕн курăннă. Пĕрре кăпăкланса шуралса çитĕннĕ вĕсем, тепре çу пек ирĕлсе савăнтах çухалнă. Ку вăхăтчен çĕтĕк-çатăк тумтирпе çÿренĕ Микихверпе пĕрле çак вырăнти уйхир, вăрман, çырма-çатра, унта юхакан, пухăнса тăракан шыв-шур савăннă, шыв хĕрринче ирĕн-каçăн пăшăлтатса ларакан хăях-хăмăшсем савăннă, çÿллĕ йывăçсем çинчен вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçсе ÿкекен ылттăн-кĕмĕл çулçăсем савăннă,—пурте, пурте савăнса хĕпĕртенĕ, пурте хăйсен çеммипе, хăйсен туйăмĕпе савăннă, çын илтмелле мар сасăпа хуллен-хуллен юрланă, сĕрленĕ... Çавăн пек вăл çут тĕнченĕн вăрттăн шавĕ, çавăн пек унăн пире ачашлакан кăмăлĕ, чĕрене кĕрсе чун хĕлĕхне пырса тивекен çинçерен те çинçе хĕлхемĕ... Эпир ăна хамăр туйăмсемпе сисетпĕр, вăхăтлăха пурне те манатпăр, таврари илемлĕхе парăнса, çут тĕнчен йăвашлăхне пула ачашшăн савăнса тĕлĕнетпĕр... Çакăн пек чухне вара, атсемĕр, пирĕн кăмăл тĕлĕрсе савăнать... Çил вăштăр-вăштăр вĕрет-и, хуллен-хуллен пăшăлтатса илет-и, çемçен вĕçсе çулçă ÿкет-и, хурт-хăмăр сасси, инçетре кайăк юрри илтĕнет-и,—сисейместпĕр те, кăмăл каллех вăранать, каллех, каллех...

...Красноармеец Терентьев хăйĕн ача чухнехи пурăнăçĕ çинчен, уйрăмăнах кĕтÿ пăхнă çĕрте пулнă „истори" çинчен мана ăшшăн та кăмăллăн каласа пачĕ те хăйĕн винтовкине хулпуççийĕ çинчен вĕçерчĕ, унтан винтовка номерне кăтартрĕ.

— 3317-мĕш номер. Тĕлĕнмелле винтовка,—терĕ тахçанхи пек, ача чухнехи пек савăнса,—унтан пăртакçă сассине хăпартрĕ те:—Ку винтовкăпа ĕлĕк шуррисене тÿнккенĕ, халĕ вăл мана пулăшать, нимĕçсене шаккатăп унпала. Вăт, капитан юлташ, мĕнле пăшал манăн алăра!—терĕ.

— Тĕлĕнмелле винтовка!—çирĕплетсе каларăм эпĕ те, салтакăн чун-хавалне татах та çĕклес тесе.

2.

Виç-тăват уйăхран мана пĕррехинче тутар, чăваш салтакĕсем хушшинче калаçу ирттерме хушрĕç. Рота командирĕ патне пытăм та хам мĕншĕн килни çинчен пĕлтертĕм.

— Ун пирки мана паçăрах каласа пачĕç. Сире кĕтетĕп. Эпĕ ĕнтĕ тутарсемпе чăвашсене пухрăм. Пĕтĕмпе тăватă çын,—терĕ те командир, капитан Марченко, çав салтаксем патне çул кăтартса ячĕ.

Эпĕ куртăм, пĕр тарăн лапамра, пĕчĕк хăвасем хушшинче лараççĕ вĕсем. Илемлĕ лапам тăрăх авкаланса выртакан сукмак çине тухрăм та эпĕ тÿрех салтаксем патне çул тытрăм. Пĕчĕк шăлан çырли аврисене атăпа пусса аманта-аманта утса салтаксем патне çитрĕм.

Тăватă красноармеец пĕр çĕре пухăннă та тем çинчен шăкăлтатса калаçса лараççĕ. Пĕр красноармеецĕ винтовкăпа тăрмашать.

Чун пек пăшал, тĕлĕнмелле винтовка, —тет вăл, хăйĕн аллинчи винтовкине шăлса ачашласа.

„Тĕлĕнмелле винтовка" тенине илтсен, эпĕ чăваш салтакне Терентьева, Никифор Антоновича, аса илтĕм. „Вăл кунта мар-ши?" шухăшларăм хам. Мана курсан, боецсем пурте ура çине хăвăрт тăчĕç те, сылтăм аллисене тăнлав тĕлне тытса, саламларĕç. Эпĕ вĕсене сывлăх сунтăм.

— Ларăр!—терĕм вырăсла. Унтан винтовка тытнă

красноармеец патне пырса:—Ну, юлтӑш, кӑтарт-ха тӗлӗнмелле винтовкуна,—ыйтрӑм эпӗ унран.

Эпӗ тӑван чӗлхепе пуплеме пуҫласан, салтаксенчен иккӗшӗ пӗр харӑссӑн:

— Капитан юлташ, эсир чӑваш иккен!—тесе тӗлӗнчӗҫ.

— Чӑваш!—терӗ пӗри. Ку хайхи Терентьев, вӑрманти ҫул ҫинче хӗлле курнӑскер, чӑваш салтакӗ пулчӗ. Унӑн пичӗ-куҫӗ ҫуллахи хӗвелпе саралса кайнӑ, куҫӗсемпе шӑлӗсем ҫеҫ шап-шурӑ курӑнаҫҫӗ.

— А эпӗ—чӑвашла тутар,—пӗлтерчӗ Терентьевпа юнашар лараканни.—Ятӑм-хушаматӑм: Ибергенов Юзкей.

Чӑвашла тутар хӑйӗн юлташӗсем ҫине пӑхрӗ те:

— Кусем пурте тап-таса чӑвашсем, манӑн сывӑх туссем!—тесе паллаштарма тытӑнчӗ.—Ку—Терентьев, ак ку—Прокопьев, а лешӗ—Владимиров. Урал чӑвашӗ, Саратов чӑвашӗ, чӑвашри чӑваш...

— Терентьев юлташа эпӗ тахҫанах пӗлетӗп,—тесе пурне те алӑ парса тухрӑм.

Паллашнӑ хыҫҫӑн эпӗ хам сӑмаха пуҫларӑм, фронтри лару-тӑрусем ҫинчен, хамӑр ҫӗршыври пурӑнӑҫ мӗнле пыни ҫинчен, тӗрлӗ примерсемпе усӑ курса, тӑван чӗлхепе каласа патӑм. Юлашкинчен, Тереньтев винтовки ҫине куҫрӑм, ӑна тем пек ырларӑм...

Тӳррипе калас-тӑк, эпӗ пӗлместӗп: Терентьев юлташ 1919-мӗш ҫулта чӑнахах та ҫак хӑйӗн аллинчи винтовкӑна курнӑ-ши, е урӑххине-ши?.. Анчах Терентьев пӗтӗм чӗререн, чунтан ӗненет. „Ҫак винтовках“ тет, „урӑххи пулма пултараймасть“... тесе ӗнентерет вӑл. Анчах та вӑл ҫав винтовка номерне мар, номерти цифрӑсен суммине—вунтӑватта ҫеҫ (з + з + 1 + 7 = 14) лайӑх астӑвать...

Вӑт, пӑхӑр та курӑр, юлташсем!

Терентьев, унӑн юратнӑ винтовки ҫинчен эпӗ каланӑ хыҫҫӑн, сӑмах хушмасӑр чӑтаймарӗ. Вӑл тӑван чӗлхепе, хушӑран пӗрер-икшер сӑмах тутарла каласа, чаплӑ пӑшал ҫинчен сӑмах пуҫларӗ.

— Ҫак винтовкз пулман пулсан,—терӗ вӑл,—эпӗ, иптешсем, такҫанах ҫӗр айӗнче ҫӗрсе выртнӑ пулӑттӑм. Винтовка — хаяр пӑшал, вӑл—санӑн тусу, тетчӗ пире командир яланах. Вырӑс винтовки пек тӗл, ҫирӗп перекен пӑшал тӗнчере урӑх ҫук та, тетчӗ вӑл пире. Чӑн сӑмах ку, эпӗ те ҫавнах калатӑп, иптешсем!

Терентьев кӑшт чарӑнчӗ те:

— Эсир, капитан юлташ, март уйӑхӗнчи ҫапӑҫура пулнӑ пулӗ?—тесе ыйтрӗ манран.

— Пултӑм,—ответлерӗм эпӗ.

— Ну, эппин, эсир ман сӑмаха часах ӑнланмалла.

Терентьев юлташ хӑйӗн винтовки ҫине пӑхса илчӗ. Унтан каллех сӑмахне хускатрӗ.

— Иптешсем, ку винтовкӑн номерӗ 3317. Эпӗ ӑна халӗ кӑна мар, тӗлӗкре те, вилсен те манас ҫук...—терӗ вӑл ерипен.

— Ну, сват, мӗншӗнне эсӗ ҫаплах каламарӑн-ха,—хутшӑнчӗ Саратов чӑвашӗ Владимиров.

— Чӑнах та, кала хӑвӑртрах, — килӗшрӗ унпала Прокопьев.

— Каласам ара!..—терӗ Ибергенов.

— Ну, Терентьев юлташ, кала,—сӗнтӗм эпӗ те.

* * *

...Инҫе те мар авалхи хула—чаплӑ Новгород. Ун ҫумӗнче Кирилл Монастырӗ. Хулара та, ҫав настырьте те нимӗҫсем. Вӗсем кунта 1941-мӗш ҫулта август уйӑхӗнче килнӗ те, мурилесшем, пирӗн ҫӗре арланла чаваласа, шӑтӑкласа кӗрсе сӑвӑс пек вырӑнаҫнӑ, авалхи монастырь стенисем айне ҫӗрпӳртсем, дзотсем туса тултарнӑ.

Ҫуркунне ҫак вырӑнта пысӑк ҫапӑҫу пуҫланса кайрӗ. Ҫав хаяр ҫапӑҫура Терентьев та пулнӑ. Йывӑр вӑхӑт килсе тухнӑ та,—шыв тулса ларнӑ воронкӑра иртен пуҫласа каҫчен выртнӑ вӑл. Ҫурхи ҫанталӑк сулхӑнӗ, сивӗ нӳрлӗх унӑн кӗлеткине витӗр туртнӑ, чӑтма ҫук шӑннӑ салтак, анчах ӑҫта каяс: йӗри-тавра фашистсем, пуҫа ҫӗклесенех—пульӑ шӑхӑрать.

Ҫыран хӗрринче пысӑк дзот. Ҫав дзотран нимӗҫ пулемётчикӗсем пӗр вӗҫӗмсӗр вут сирпӗтеҫҫӗ.

Катаран-катаран каҫ пулса килсен, тӗнчене тӗттӗм чаршав хупласан, выҫӑ шаккалсем тухаҫҫӗ вӑрҫӑ хирне. Нимӗҫ салтакӗсем вӗсем ҫав выҫӑ шаккалсем. Вилӗсене ухтараҫҫӗ, аманнисене вӗлереҫҫӗ, чӗррисемпе ҫапӑҫаҫҫӗ.

Терентьев ҫак картинӑна курса, сӑнаса выртнӑ. Вут сирпӗтсе ларакан дзотри фрицсем, каҫ пулса ҫитсен, ҫапӑҫу хирне вӑрра тухнӑ, выҫӑ йӗке-хӳресем пек сиккелесе, хӑра-хӑра унта-кунта вӑркӑнса ҫӳренӗ... Мародӗрсен кӗтӗвӗ йышлансах пынӑ.

...Шӑнса, ӗнтӗркесе кайнӑ чӑваш салтакӗ Терентьев, темиҫе кун хушши куҫ хупман пулин те, сыхӑ пулнӑ, винтовкине аллинчен вӗҫертмен. Воронкӑра никам курмалла мар вырӑнаҫса ларнӑ вӑл, унӑн пӑшалӗн пульисем ӗнтӗ тӑшман салтакӗсем ҫине вӗҫмелле.

— Вилсен те винтовкӑна алӑра тытса вилем!—тесе пусӑрӑнтарнӑ вӑл хӑйӗн чунне.

Инҫе те мар—Волховец юхан-шывӗ. Вырӑнӗ-вырӑнӗпе ҫурхи пӑр ҫӗмӗрӗлнӗ, тупӑ йӗтрисем пырапыра ӳкнипе ванса кайнӑ. Халӗ тата пӑр ҫине шыв тапса тухнӑ.

Шӑнкӑр-шӑнкӑр шӑнкӑртатса мар,— васка-васка юхать ҫурхи шыв. Сарӑлсах, тулсах пырать вӑл, пуян та тулӑх ҫур шывӗ.

Нимӗҫсем шыв урлӑ каҫма шут тытнӑ, хӑмасем сӗтӗре-сӗтӗре пынӑ та пӑр татӑлса кайнӑ ҫӗре каҫӑ хунӑ. Терентьев вӗсене курса, асӑрхаса выртнӑ, пӑшалне ӗнтӗ тӗлленӗ, унӑн шӗвӗр пӳрнийӗ курок патне вырӑнаҫнӑ. Вӑрӑм нимӗҫ каҫӑ ҫине кӗнӗ,—Терентьев пӑшал персенех ҫав фашист шыва персе аннӑ, унтан тепӗри каҫма тытӑннӑ—вӑл та кутӑнпуҫӑн шыва чӑмнӑ, виҫҫӗмӗшӗ те ҫавах—лешсем хыҫҫӑн тайкаланса ӳкнӗ, тӑваттӑмӗшӗпе пиллӗкмӗшӗ тата та интереснӑрах татӑлса аннӑ... Вӗсем ӗнтӗ, аманнӑскерсем, пӑрлӑ шывра ишнӗ-ишнӗ, шӑмпӑлтатнӑ-шӑмпӑлтатнӑ та, юлашкинчен вара, йытӑ чӗлхи пек чӗлхепе—„Майн готт“ тесе хӑрушшӑн кӑшкӑрса, ахлатса, ӗсӗклесе, йӗрсе, Волховец тӗпне анса ларнӑ...

— Пӗтсен те нимӗҫсене вӗлерсе пӗтем,—тесе пенӗ ун чухне хӑюллӑ салтак Никифор Терентьев. Ҫапла пуля хыҫҫӑн пуля вӗҫтерсе фашистсене шыва чӑмтарнӑ. Унтан вӑл хӑй сиксе тӑнӑ та, ҫав шыв урлӑ тепӗр ҫӗртен каҫса, тӑшман пулеметне ҫырма хӗррине туртса пынӑ. Монастырьти нимӗҫсем ӑна курнӑ, пеме тытӑннӑ. Совет воинӗн аллинчи пӑшал—туртса илнӗ нимӗҫ пулемӗчӗ—нимӗҫсене хӑйсенех ҫунтарнӑ, ӑшаланӑ... Анчах персен-персен патронсем пӗтсе ҫитнӗ, Терентьев вара тӑшман пулемётне шыва пӑрахнӑ.



*Калав*

***АЛЕКСЕЙ МЕДВЕДЕВ***

Фетÿççишĕн вăрçă кунĕсем ытла та йывăра килчĕç. Унăн упăшки, Христухвур, вăрçăн малтанхи çулĕнчех нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçса вилчĕ. Фетÿççин хăйĕн упăшки ятне асăнмалăх пĕр уйăхри ывăл ачи кăна юлчĕ. Çак вăхăтрах тата ăна колхозра чи юлса пыракан бригадăн бригадирне лартрĕç.

Икĕ уйăхран, ĕçе лайăх организацилесе ярсан, унăн ялан кайра юлса пыракан бригади колхозра чи малти вырăна тухрĕ.

Çапла Фетÿçси мĕн вăрçă пĕтиччченех бригадирта ĕçлерĕ. Çĕнтерÿçĕсем киле таврăнма пуçларĕç. Колхозри хăшпĕр ертсе пыракан ĕçсене, хĕрарăмсем вырăнне, арçынсене лартрĕç. Фетÿçси те çакна кĕтнĕччĕ, анчах ăна колхоз председателĕ улăштармарĕ, бригадиртах хăварчĕ.

— Сан пек ĕçлекен бригадира тупма хĕнтерехха,—терĕ вăл.—Тата ĕçе те лайăх вĕренсе çитрĕн, колхозниксем те сана хисеплеççĕ.

Мĕн тăвас тен? Пăхăнмаллах пулчĕ. Фетÿçси каллех бригадирта ĕçлеме юлчĕ.

Халь колхозра хĕрсе ыраш вырнă вăхăт пырать. Кунĕ паян ытла та уяр пулчĕ. Тата вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлса выртакан сарă ыраш уйĕ çийĕпе ăшă сывлăш хумĕсем кунĕпех вĕлтĕртетсе чупрĕç. Акă халь ĕнтĕ хĕвел те çывăхри вăрман хыçне анса пытанчĕ, çĕр çине ăшă сулхăн ÿкрĕ. Ыраш уйĕ, йывăр пу·

---

— Санăн хуçу шывра,—тенĕ вăл хăйĕн ăшĕнче шухăш вĕççĕн, — пулемётсăр вăрçма ăна йывăр пулĕ...

Чĕмсĕр металл шыва путсан тин совет воинĕн чĕри лăпланнă, анчах çилли лăпланман. Ăна, вуткĕмĕн çунса, ялкăшса, салтак çиллине вăратсах, кускатсах тăракан шухăш малалла чĕннĕ: пĕр нимĕç пĕтет—çĕнтерÿ çывăхарать, иккĕ пĕтет—çĕнтерÿ татах та çывăх пулать... Фашист чĕрĕ юлсан —вăл ман çĕршыва пусмăрлас шухăша пăрахмĕ. Çавăнпа та нимĕç захватчикне вĕлер, тĕп ту!—тенĕ çав шухăш.

Çакăн пек шухăш-кăмăлпа тулса çапăçнă пирĕн салтак, чăваш Никифор Антонович Терентьев.

Тăрсан-тăрсан, инçетри хуласемпе ялсем хыçĕнчен, сĕм вăрмансем урлă, çурхи кăвак тĕтресене ылттăн пайăркисемпе майĕпен çутатса, никамшăн та ăшшине хĕрхенмен вут хĕвел, катмаррăн çĕкленсе, саркаланса тухнă.

— Тусăм, чунăм!...—тесе пăхнă паттăр красноармеец хăйĕн пăшалĕ çине. Винтовка номерне ирхи хĕвел çуттинче курсан, вăл хăйĕн тусне вуникĕ хутчен тытса чуптунă.

* * *

...Терентьев хăйĕн сăмахне каласа пĕтерчĕ те винтовка вулли çинчи картсене кăтартма тытăнчĕ.

— Пĕрре, иккĕ...—шутларĕ вăл.

Çирĕм çичче çитрĕ карт шучĕ.

— Кашни карт пĕр фашист вилĕмне пĕлтерет. Вунтăваттăшне манччченех картнă. Вĕсене çав 1919-мĕш çулта мана шлём парса хăварнă разведчиксем картнă пулĕ, тетĕп. Вĕсен картне кура эпĕ те картма тытăнтăм... Вунвиçĕ карт касрăм...

Вăрман хĕрринче, землянкăсем хушшинче, шăхличĕ сасси илтĕнсе кайрĕ. Ку шăхличĕ красноармеецсене касхи вĕренĕве чĕнчĕ-мĕн: калаçура пулнă салтаксем умланчĕç те, вĕренĕве кайма тесе, ытти юлташĕсем те пĕрле пĕр вырăна, çÿллĕ чăрăшсем айне, пĕтĕм ротипех пухăнчĕç.

Тĕтреленсе, тĕттĕмленсе фронтри каç çывхарчĕ. Пĕтĕм çырана пин-пин шăрăк сырса илчĕ. Вĕсен пĕр çемĕллĕ, пĕр майлă юрри хăлхана йăлăхтарать.

Чăтлăх вăрман витĕр эпĕ хамăр землянкăсем патне таврăнтăм.

— Пурте Терентьев пек çапăçсан—вăрçă миçе кунa пырĕ-и ?—ыйтрăм эпĕ çавăн чухне хамран хам.

... Никифор Терентьев пек хастар совет салтакĕсем асăмран халĕ те каймаççĕ. Яланах, иртнĕ кунсем çинчен шухăшласан, эпĕ çав паттăрсене аса илетĕп. Ун чухне вара совет патриочĕсен паха ĕçĕсем каллех ман умма тухса тăраççĕ, каллех—ылттăнăн, кĕмĕлĕн ялкăшса курăнаççĕ, çав паттăр салтаксем малаллах, малаллах утаççĕ.

Прибалтика—Германия
1944-1945 çç.

чахӗсене усса, тӳлеккӗн сарӑлса выртать. Ҫак уйра теменле мӑнаҫлӑх, ыралӑх пытаннӑн туйӑнать. Мӗскер? Ӑна пӗлме ҫук, анчах ҫав тери ырӑ вӑл. Пиҫсе ҫитаӗ ырашӑн тутлӑ шӑршипе пӗр вӗҫӗмсӗр сывлас килет. Вӑй-хӑват кӗрсе кайнӑ пекех туйӑнать. Симӗс вӑрман тӗксӗмленчӗ, таса кӑвак тӳпе янкӑр уҫӑ, пӗр пӗлӗт тавраш te курӑнмасть. Каҫ умӗн ӗҫлеме ытла та лайӑх...

Шурӑ акӑш пек тумланнӑ колхоз хӗрарӑмӗсем ыраш уйӗн талкӑшӗпех кӗлте ҫӗклесе ҫӗмелсем тӑваҫҫӗ. Пӗр Фетӳҫҫи бригади кӑна, каҫалахи сулхӑна пула, хӗрсех ыраш вырать-ха. Тата ӗнер-виҫӗмкун вырнӑ ҫӗмелсенчи кӗлтесене те вӑл паян ирхине, типӗтес шутпа, салаттарчӗ. Хӑй те пуҫне йӑтмасӑрах ыраш вырать. Вӗсем хыҫӗнче тӗмӗсем шӑкӑрах йӗркелене выртса юлаҫҫӗ.

Ҫанталӑк тӗттӗмленерехпе ытти бригадӑсенчи колхозниксем ялалла ушкӑнӑн-ушкӑнӑн утма пуҫласан, Фетӳҫҫи пуҫне йӑтрӗ те тавраналла тинкерсе пӑхрӗ.

„Эпир кӑна юлнӑ иккен, — шухӑшларӗ вӑл хӑй ӑшӗнче савӑнӑҫлӑ туйӑмпа.—Ҫуллахи кун пӗр ҫул тӑрантарать-ҫке“,—терӗ вӑл, хӑйӗн бригадинчи ӗҫчен те харсӑр колхозниксемшӗн чунран хӗпӗртесе.

Фетӳҫҫи ҫийӗнче таса шурӑ кӗпе. Пуҫӗнче хӗрлӗ тутӑр, умне пасар пирӗнчен ҫӗлетнӗ кӑвак саппун ҫакса янӑ. Пичӗ кӗренрех, вӑл хӗвелпе пиҫсе хӗрелнӗ. Кӑмӑллӑ, килӗшӳллӗ хӗрарӑм.

— Ну, юлташсем, паян ҫакӑн чухлӗ ӗҫленипе ҫитӗ, халӑхпа киле таврӑнсан пире те намӑс пулмӗ,—терӗ те вӑл, ҫавӑнтах кам мӗн чухлӗ вырнине шута илме пуҫларӗ.

Ҫак вӑхӑтра ҫывӑхран:

— Фетӳҫҫи, Фетӳҫҫи!—тесе кӑшкӑрни илтӗнчӗ. Ку колхоз председателӗ пулчӗ. Вӑл ҫул хӗрринче велосипедпа тӑрать.

„Мӗн тума кирлӗ пултӑм-ха?—тесе шутлама кӑна ӗлкӗрчӗ -Фетӳҫҫи.

— Мӗн тӑратӑн? Хӑвӑртрах кил! Сана чӗнетӗп,—кӑшкӑрчӗ колхоз председателӗ, Фетӳҫҫине кӑчӑк туртса.

Фетӳҫҫи часах колхоз председателӗ патне чупса ҫитрӗ.

— Иван Якӑлч, мӗн тума кирлӗ пултӑм? -ыйтрӗ вӑл, ҫитнӗ-ҫитменех.

— Мӗн тума?—хаяррӑн сӑмах хушрӗ колхоз председателӗ.—Е чухламастӑн-и мӗншӗнне? Эпӗ кӗлтесем пирки. Мӗншӗн эсӗ вӗсене пуҫтармастӑн? Е йӗпетсе ярас тетӗн-и?..

— Ҫук, Иван Якӑлч, кӗлтесене эпӗ пӗрре те йӗпетесшӗн мар. Ӑраснах, эпӗ вӗсене типӗтесшӗн. Ҫавӑнпа та, ҫанталӑк уяр чухне, пуҫтармасӑр хӑвартӑм, иртнӗ кунсенче вырнӑ кӗлтесене те салаттартӑм,—терӗ вӑл, хӑй нимӗнпе те айӑпа кӗменнине туйса, лӑпкӑн.

— Так, так...—нимӗн калама аптӑранӑ енне, сӑмахсене вӑрӑммӑн тӑсрӗ колхоз председателӗ.—Типӗтес тетӗн иккен? Лайӑх шухӑш. Анчах йӗпетсе ярсан-тусан, ӗнсене хыҫмалла ан пултӑр. Кӑна эпӗ малтанах асӑрхаттаратӑп.

— Ӑнланатӑп, Иван Якӑлч. Шанма пултаратӑр,—терӗ Фетӳҫҫи.—Эпӗ хам ҫине илнӗ ӗҫе йӗркеллех туса пырасшӑн-ха.

— Ну, юрӗ, шанатӑп. Эпӗ сана паян кӑна мар пӗлетӗп. Халь те эс мана кӳрентермӗн тесе шутлатӑп,—терӗ те колхоз председателӗ, велосипед ҫине ларчӗ, ҫул ҫинчи тусана хуллен мӑкӑрлантарса ял еннелле вӗҫтерчӗ.

Фетӳҫҫи пӗр вӑхӑт вырӑнтан тапранма пӗлмесӗр шухӑша кайса тӑчӗ. Ӑна пӗрре колхозниксене тӗмӗсенче выртакан кӗлтесене пуҫтарттарса ҫӗмелсем тутарас шухӑш та пырса кӗчӗ, ҫав вӑхӑтрах, хӑй шухӑшӗ ҫинче ҫирӗп тӑма пултараймасть, тесреп-и, е хӑйӗн бригади умӗнче ята ҫухатас мар тесе, пӗрре тунӑ ӗҫе ҫаплипех хӑварма шут турӗ. Часах вӑл колхозниксене яла ӑсатрӗ. Хӑй тепӗр колхозницӑпа яла кайма тесе ҫул ҫине кӑна тухнӑччӗ, ҫак вӑхӑтра вӑл ӑнсӑртран хӗвеланӑҫ еннелле пӑхрӗ. Хӑй те сисеймерӗ, унӑн ҫан-ҫурӑмӗ тӑрӑх теменле сӑркӑлту чупса анчӗ. Ӑна янкӑр тӳпере пӗр пӗчӗкҫӗ шупка пӗлӗт кӗренленсе хитреленни хӑратса пӑрахрӗ. Фетӳҫҫи утнӑ ҫӗртенех тӑп чарӑнса тӑчӗ.

Вӑл вара киле пӑч тӗттӗм пулсан тин ҫитрӗ. Чӳречерен пӗчӗк ҫутӑ курӑнать.

„Анне ҫывӑрман-ха иккен. Мана кӗтет пулас. Тен, ачана та чӑпӑл кӳртрӗ пулӗ...“ шухӑшларӗ вӑл.

Пӳрте кӗчӗ. Чӑнах та, Фетӳҫҫин хунемӗшӗ ҫывӑрмасть-мӗн. Вӑл, типшӗм те пӗркеленчӗк питлескер, тӗпел кукринче кункра ҫине ҫӑнӑх аласа тӑрать.

— Кинӗм,—терӗ вӑл,—сана кӗтсе шалт аптӑраса ӳкрӗм. Ӑҫта ҫак тарана ҫити ҫухалса ҫӳретӗн? Петюк та сана кӗтсе ывӑнчӗ...

— Атте патӗнче пултӑм. Калас сӑмахӑм пурччӗ.

— Мӗн сӑмах пулчӗ вара?

— Кӗлтесене пуҫтармасӑрах хӑвартӑм-ҫке. Ҫумӑр палӑрсан-тусан систерме хушрӑм мар-и ҫак.

— Апла иккен...

Фетӳҫҫи пӗчӗк Петюк патне пычӗ. Ывӑлӗ аллисене икӗ еннелле сарса пӑрахнӑ та тутлӑ ыйхӑпа ҫывӑрать. Тутисене вылята-вылята илет, кулан пекки тӑвать.

„Темӗнле лайӑх тӗлӗк курать пулас“,—терӗ Фетӳҫҫи. Петюкӑн пӗчӗк тутинчен ачашшӑн чуптуса илчӗ, вара вӑрахчен ывӑлне ытараймасӑр пӑхса тӑчӗ, ун ҫинчи витӗнкӗҫне майларӗ. Хунемӗшӗ сӗтел ҫине каҫхи апат пырса лартрӗ...

Апат ҫисен Фетӳҫҫи ывӑлӗ ҫумне ҫывӑрма выртрӗ те часах тутлӑ ыйхӑ путрӗ. Нумай-и, сахал-и ҫывӑрнӑ, ӑна вӑл пӗлмест, анчах хӑйне такам чӗннипе сасартӑк ыйхӑран вӑранчӗ. Пӗр вӑхӑт вӑл хӑйпе мӗн пулнине те ӑнланса илеймерӗ, вырӑнтан та тӑрас килмерӗ: ҫав тери тутлӑ-ҫке ыйхӑ!

— Кам унта? Мӗн пулнӑ?—ыйтрӗ вӑл.

— Эпӗ ку, кинӗм, эпӗ,—илтӗнчӗ тӗттӗмре хунемӗш сасси.—Ҫумӑр, вӑйлӑ ҫумӑр килет. Вӑратас терӗм...

— Атте килмерӗ-и?—ыйтрӗ ҫавӑнтах Фетӳҫҫи.

— Ҫук-ха, килеймерӗ... Темшӗн ман кӗҫӗр ыйхӑ килмерӗ, кӑшт кӑна тӗлӗрсе каятӑп, каллех сиксе тӑратӑп. Пӗр-икӗ хутчен те тула туха-туха пӑхрӑм, нимӗн те курӑнмастчӗ, янкӑр тасахчӗ тӳпе. Анчах хальхинче тухсан, хӑрасах ӳкрӗм, ытла та кӑн-кӑвак кӑвакарса килет...

Фетӳҫҫи вӑрт-вартах ура ҫине сиксе тӑчӗ, хӑй умне саппунне ҫакса, килхушшине чупса тухрӗ те тӳрех тӳпенелле пӑхрӗ. Хура пӗлӗт ытла та хӑрушшӑн капланса хӑпарать.

— Кӗлтесем йӗпенсе каяҫҫӗ вӗт!—унӑн сӑмахӗсем хӑйсем ирӗккӗнех тухрӗҫ.—Колхозниксене тӑратас... Анне, эсӗ те вӗсене тӑратма чуп-ха...

Фетӳҫҫи хапха патне чупса пычӗ, анчах хӑлӑйӗн-

чен тытма та ĕлкĕреймерĕ, хапха ăна хирĕç хăех уçăлса кайрĕ те, унăн умне хунешшĕ тухса тăчĕ.

— Атте, лашасене илсе килтĕр-и?—ыйтрĕ вăл, хыпăнчăклă сасăпа.

— Илсе килтĕмĕр...

— Халь хăвăртрах колхозниксене вăратас пулать. Атте, эсир те анаткассене вăратма чупăр-ха...

Часах Фетĕççи колхозниксене чӳречесенчен шаккаса вăратрĕ те пĕр-пĕчченех уялла васкаса чупрĕ.

Тĕттĕм каç. Хура хулăм пĕлĕтсем самаях çӳлелле капланса хăпарни курăнать, анчах çанталăк ытла та тӳлек, йывăçсем те, пур ӳсен - тăрансем те, гутлă ыйăха путнă пекех, пĕр хускалмасăр тăраççĕ. Фетĕççи çакна кура хăйне лăпкăнрах тытма тăрăшрĕ.

„Кун пек чухне çумăр хăвăрт килекен марччĕ,— шутларĕ вăл хăй ăшĕнче.—Ăçтан пĕлсе çитĕн-ха çанталăкăн йăлине? Вăл тепĕр чухне кĕтмен çĕртенех çил-тăман кăларма пултарать...“

Аякра вăрăм та çинçе йĕр туса çиçĕм çиçрĕ, чылай вăхăтран аслати хуллен кĕмсĕртетни тата вăл, инçене-инçене кăлтăртатса кусса кайнă пек, янăрани илтĕнчĕ. Ку Фетĕççине шиклентермеллипех шиклентерчĕ.

„Неушлĕ кĕлтесене йĕпетсе яратăп?—шиклĕ шикленнĕ, кĕрĕкне пĕркеннĕ, тенĕ пек, Фетĕççи чунранах хăраса ӳкрĕ.—Пур колхозниксем те хăвăрт тухĕç-ши?.. Тухмасан—пĕтрĕм вара, пуринчен те лекет. Никамран ытла Иван Якăлчран çителĕклех тивет...“

Фетĕççи—утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса—ыраш уйне çитрĕ. Пăхать вăл тавраналла—хăй куçĕпе курнине хăй те ĕненмест, татах тинкерсе пăхать, чăнахах та иккен, унăн куçĕсем пĕрре те улталаман. Хăй вăратса хăварнă колхозниксем пĕри те уя тухман-ха, вăл хăй кăна, пĕр-пĕччен, тĕттĕм каçра, вăйлă çумăр килес умĕн тăрать.

Фетĕççи хытах тарăхса кайрĕ.

— Чул чĕресем!—терĕ вăл, çиленнĕ сасăпа.—„Бригадир çавăн пек тума шутларĕ. Хăй айăплă, хăй ответ тыттăр“, теççĕ пуль. Çук, эпĕ хамшăн мар, эпĕ пуриншĕн те лайăх пултăр тесе çапла турăм. Анчах... Фетĕççи урăх калаçса тăмарĕ. Вăл çавăнтах тĕммĕнтĕммĕн выртакан кĕлтесене чупсах йăтма пуçларĕ. Аякра çав-çавах çинçе йĕрсем туса çиçĕм çиçет, хуллен сасăпа кăна аслати кĕмсĕртетет. Фетĕççи вĕсем çине халь çаврăнса та пăхмасть, итлесе те тăмасть. Ĕç, ĕç, хĕрӳ ĕç кăна йывăрлăхран хăтарма пултарать ăна.

Çак вăхăтра каç тĕттĕмлĕхĕнчен пĕрин хыççăн тепри—ватăсем те, хĕрарăмсем те, ачасем те чупса тухрĕç. Фетĕççи хĕпĕртесех кайрĕ. Вăл колхозниксемпе татах та хавхаланарах ĕçлеме пуçларĕ.

Хура пĕлĕт çӳлтен-çӳле хăпарса пырать, çиçĕм çывăхрах çиçнĕн курăнать, аслати те хыттăнрах кĕмсĕртетет, анчах çумăр пĕлĕчĕ вĕсенчен чылаях инçетре-ха.

— Тем тесен те ĕлкĕретпĕр. Кĕлтесене йĕпетме памастпăр,—тет Фетĕççи, хăйне те, колхозниксене те хавхалантарса.

Пĕр кĕске вăхăтран кĕлтесене çĕклесе çĕмелсене хывасси нумаях та юлмарĕ. Фетĕççи капланса килекен пĕлĕт çине пăхса самант шухăша кайрĕ.

„Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче кунашкал вăраххăн килекен çумăр хăвăрт килекен çумăртан та хăрушăрах пулаканччĕ. Вăл пĕрре епресе кайсан нумая та пыма пултарать вĕт-ха. Чăнах-та, çавăн пек пулсан, мĕн тăвăпăр-ха? Тырă вырасси те, урăх ĕç тăвасси те пулмĕ... Кĕлтесене халех итем çине кĕртсен юрамĕши?..“

Çапла шухăшласа тăнă хушăра Фетĕççи хăй умĕнчех пĕр колхозник сассине илтрĕ.

— Фетĕççи,—терĕ колхозник,—ман шутпала кĕлтесене итем çине кĕртмелле пек. Куратăн-и, епле çумăр вăрах килет. Ку çумăр пĕрре çума тытăнсан пĕр каç мар, нумайлăхах пыма пултарать.

— Хам та, Пăракух пичче,—терĕ Фетĕççи, колхозниксем те хăй пекех шутланăран хĕпĕртенĕ сасăпа,—çавăн пирки шутласаччĕ. Мĕнле, тен, çавăн пек тусан, лайăхрах пулĕ?

— Ырринчен пуçне нимĕн те пулас çук,—хирĕç таварчĕ колхозник.

Фетĕççи тата ытти колхозниксемпе те ку шухăш тĕлĕшпе калаçса пăхрĕ. Пурте ку шухăша ырларĕç, хирĕçлесе тăраканни никам та пулмарĕ. Вара вăл çине тăрсах колхозниксене лашасем кӳлсе килме уйăрса ячĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ—кĕлтесене йăтса çĕмелсем туса пĕтерчĕç, çав вăхăтра колхозниксем кӳлнĕ лашасемпе килсе çитме те ĕлкĕрчĕç.

— Ну, мĕн тăвăпăр-ха?—ыйтрĕ вăл.—Кĕлтесене кĕртме ĕлкĕрĕпĕр-ши, е тăхтаса пăхар?

— Мĕн тăхтаса тăмалли пур. Тытăнас та, çине тăрсан, ĕçне туса та пĕтерĕпĕр,—терĕç темиçе колхозник пĕр харăс.

— Апла пулсан ĕçе тытăнар!

Вĕсем кăвак шуçăм шуралса килнĕ тĕле кĕлтесене итем çине кĕртсе çитерме ĕлкĕрчĕç. Вĕтĕ çумăр чалăшшăн пĕрĕхсе çума пуçларĕ.

Колхозниксем çăмăллăн сывласа илчĕç. Фетĕççи, хăйĕн ĕçне ăнăçлăн вĕçленĕрен, чунран хĕпĕртесе кулса ячĕ.

Çак вăхăтра колхоз председателĕ итем çине вĕçтерсе çитрĕ.

— Сирĕн кĕлтесене пула чун юлмарĕ,—терĕ вăл, йывăррăн хашкаса.—Йĕпетсе ятăрах пуль терĕм эпĕ. Эсир аптăрасах кайман иккен. Лайăх ĕç, лайăх... —терĕ вăл, хĕпĕртенĕ пек пулса, анчах вăл сасартăк сăнран тĕксĕмленчĕ, пуçне сула-сула илчĕ.— Кĕлтесене итем çине кĕртмеллех мар-мĕн. Кун пек эсир тырра хĕртсе яма та пултаратăр.

— Çук, Иван Якăлч,—терĕ Фетĕççи кăмăллăн,— ăна эпир халех çапма тытăнатпăр.

Колхоз председателĕ савăнăçлăн Фетĕççи умне пырса тăчĕ.

— Мухтанатăп эпĕ санпа, Фетĕççи,—терĕ вăл.— Санăн пур çĕрте те ĕç кал-кал пулса пырать. Ăçтан çавăн пек бригадир ялта урăх шыраса тупăн?...

Колхозниксем те хăйсен бригадирĕ çине мăнаçлăн пăхса тулли кăмăлран кулса илчĕç. Фетĕççи хăй паян çак мухтава илтме шутламанччĕ, ăраснах, вăл хăйне ятласран ытлашшипех шикленнĕччĕ, анчах та ĕç ăнăçлă пулса пынăран вăл чунранах савăнса кайрĕ.

— Эпир ку йышпа нихăçан та намăс курас çук,— терĕ вăл, чунхавалĕнчен хĕпĕртесе...

Тул çутăлса çитрĕ. Фетĕççин бригади авăн çапма пуçларĕ.

# ВЫРĂС КĂМĂЛĔ

*Иван Сударев калавĕсенчен*

***АЛЕКСЕЙ ТОЛСТОЙ***

Вырăс кăмăлĕ!—пысăках мар калавшăн ку ытла та нумая пĕлтерекен ят ĕнтĕ. Анчах мĕн тăвăн, —эпĕ сирĕнпе шăпах çав вырăс кăмăлĕ çинчен каласса пăхасшăн та ĕнтĕ.

Вырăс кăмăлĕ! Çырса кăтарт-ха эсĕ ăна... Паттăрла ĕçсем çинчен каласа парас-и? Анчах та вĕсем çав тери нумай, хăшĕн çинчен каламалла, çухалса кайăн, хăшне ытларах хисеплемелле. Ку тĕлĕшрен мана пĕр çывăх юлташ хăй пурăнăçĕнчи пысăках мар историе каласа парса çăлчĕ. Вăл ылттăн çалтăр çакса çӳрет пулин те, кăкăрне çурри таран орден çакса тултарнă пулин те, эпĕ вăл нимĕçсемпе мĕнле çапăçни çинчен каласа тăмăп. Çынни вăл простой, лăпкă, ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман колхозник. Вăл—Саратов облаçĕнчи Атăл хĕрринче ларакан ял çынни. Анчах, ыттисемпе танлаштарсан, вăл çӳллĕ те тĕреклĕ пӳ-силлĕ, хитре. Вăл танк башнинчен тухнине куратăн та, савăнса пăхса тăратăн,—вăрçă турри! Вăл броня çинчен çĕре сиксе анать, кăтра çӳçлĕ пуçĕнчи шлемне хывать, варланчăк питне пусма таткипе шăлать те, чĕререн, çав тери кăмăллăн кулса илет.

Вăрçăра, ялан вилĕмпе юнашар пурăнса, çынсем лайăхланаççĕ, хĕвелпе пиçнĕ хыççăн усал тир хăйпăнса ӳкнĕ пек, çын тĕрлĕ çитменлĕхрен тасалать, çынра вара—тĕшши кăна тăрса юлать. Паллах ĕнтĕ, ку тĕшĕ пĕр çынăн çирĕпрех, теприн çирĕпех мар, анчах, апла пулин те, начартарах тĕшĕллисем те лайăххисем патнелле туртăнаççĕ, кашниех лайăх та шанчăклă юлташ пулма тăрăшать. Анчах ман çывăх тусăм Егор Дремов вăрçăчен те питĕ тирпейлĕ çын пулнă, хăйĕн амăшне, Мария Поликарповнăна, тата ашшĕне, Егор Егоровича, çав тери хисепленĕ, юратнă. „Атте ман хăйне хăй тыткалама пĕлекен çын, чи малтан вăл хăйне хисеплет. Эсĕ, тет вăл, ывăлăм, тĕнчере нумай япала курăн, ют çĕршывра та пулкалăн, анчах—ху вырăс пулнипе мухтан...“

Егор Дремовăн савнă хĕрĕ пулнă. Хăйсен ялĕсемех пулнă вăл. Савнисемпе арăмсем çинчен пирĕн нумай калаçаççĕ, уйрăмăнах фронтра çапăçу лăплансан, çанталăк япăх тăнă чухне, землянка кăмакинче вут шатăртатса çуннă хушăра, каçхи апат çинĕ хыççăн нумай сӳтсе-яваççĕ. Кунта вара темĕн те пĕр калаçаççĕ, итлеме ан ӳркен. Тĕслĕхрен, пуçласа ярасçĕ вара: „Мĕн вăл юрату?“ Пĕри калать: „Юрату вăл пĕр-пĕрине хисеплениипчен пулать“, тет. Тепри: „Апла мар, юрату вăл çын хăнăхăвĕ, çын хăй арăмне çеç мар, ашшĕпе амăшне те, час-часах выльăха та юрататъ,“ тет. „Тьфу, айван,—тет виççĕмĕшĕ,— юрату вăл ак хăçан пулать: сан ăшăнта пĕтĕмпе вĕресе тăрать, çын ӳсĕр чухнехи пек çӳрет...“ Çапла пĕр сехет, икĕ сехет философилесе лараççĕ, мĕн старшина пырса кĕричченех çапла. Старшина пырса кĕрет те вара, пăхăнтаракан сассипе ыйтăва тин татса парать... Егор Дремов, çак калаçусенчен вăтанса пулас, хăйĕн хĕрĕ çинчен мана пĕр-икĕ сăмахпа çеç пĕлтерчĕ. Питĕ лайăх хĕр, кĕтетĕп тесе каларĕ-тĕк ĕнтĕ, хăрах урапа таврăнсан та кĕтетех...—терĕ вăл.

Çапăçури паттăрла ĕçсем çинчен те нумай калаçма юратмастчĕ вăл. „Ун пек ĕçсене аса илес килмест“ тет те, кулма пăрахса, чĕлĕм чĕртсе ярать. Унăн танкĕн паттăрла ĕçĕсем çинчен эпир экипажри ытти çынсен сăмахĕсенчен пĕлеттĕмĕр. Итлесе ларакансене пуринчен ытла Чувилев водитель каласа тĕлĕнтеретчĕ.

„Пĕлетĕр-и, танксене хамăр каяс çĕрелле пăртăмăр кăна, пăхатăп, хайхи сăрт хысĕнчен туха парать. Кăшкăратăп: лейтенант юлташ, тигр! тетĕп. „Малалла! —кăшкăрать вăл,—пĕтĕм вăйпа малалла!“ Эпĕ ĕнтĕ, хамăра курасран, танка чăрăшлăхпа илсе пыратăп, сылтăмалла, сулахаялла пăратăп. Тигр оруди кĕпçине çавăркалать, анчах нимĕн те курмасть. Печĕ —лектереймерĕ... А лейтенант юлташ пĕрре пачĕ те ăна айккинчен, пылчăк сирпĕнчĕ. Тепре башняран лектерчĕ, орудийĕн кĕпçи кукăрăлчĕ ларчĕ хайхин... Виççĕмĕш хут лектерсен,—тигрăн мĕнпур хушăкĕсенчен тĕтĕм мăкăрланма пуçларĕ. Вут çулăмĕ çӳлелле пĕр çĕр метра яхăн сирпĕнсе кайрĕ пулĕ. Экипаж запаслă люкран тухма тытăннăччĕ. Ванька Лапшин тытăнчĕ хайхисене пулемĕтран çунтарма,— выртаççĕ хайхискерсем урисене тăратса... Пире валли ĕнтĕ çул уçă. Тепĕр пилĕк минутран яла кĕрлеттерсе кĕретпĕр. Кунта вара кулнипе чут варсăр юлаттăм... Фашистсем ăçта куç курать — унта тараççĕ... Урамра пылчăк. Пĕлетĕр-и, хăшпĕрисем, аттисене пăрахса, носкисемпе кăна вĕçтереççĕ. Пурте сарай патнелле тараççĕ. Лейтенант юлташ мана команда парать: „А ну—сарай çинелле!“ Туппине эпир айккинелле пăрса хутăмăр, пĕтĕм вăйпа вара танкпала сарай çине кĕрсе кайрăм... Батюшки! Броня çине каштасем, хăмасем, кирпĕчсем ӳкни илтĕнсе кайрĕ, сарай çине ларнă фашистсем те тăкăнчĕç. Эпĕ тата утюкласа тухрăм,—ыттисем вара „Гитлер капут“ тесе аллисене тăратрĕç.“

Çапла çапăçнă лейтенант Егор Дремов, хăй тĕлне инкек килсе тухиччен. Курск патĕнче çапăçнă чух, нимĕçсем халран туха каялла чакма тытăнсан, тулă пуссинче, сăртра, унăн танкне тăшман снарячĕ лекнĕ. Экипажри икĕ çын çавăнтах вилнĕ, иккĕмĕш снаряд пырса тивсен, танка вут хыпса илнĕ. Водитель Чувилев, малти люкран сиксе тухса, каллех танк çине хăпарса кайнă та, вут хыпнă танкран лейтенанта сĕтĕрсе кăларнă. Вăл ăнран кайнă пулнă, ун комбинезонĕ çунмаллипех çуннă. Чувилев лейтенанта пăртак айккинерех сĕтĕрсе кайма ĕлкĕрнĕ кăна, танк вут-çулăмпа сирпĕнсе кайнă, башни унăн пĕр аллă метра яхăн ыткăннă. Чувилев, вут хыпса илнĕ лейтенанта çăлас тесе, йĕкĕр ывăçи-ывăçипе тăпра иле-иле лейтенант питне, пуçне, тумтирне сапнă. Унтан вара пĕр снаряд лакăмĕнчен тепри патне сĕтĕре-сĕтĕре, лейтенанта перевязка тума илсе тухнă. „Мĕншĕн сĕтĕрсе кайрăм-ха эпĕ ăна ун чух?— каласа парать Чувилев,—мĕншĕн тесен, унăн чĕри тапатчĕ“...

Егор Дремов чĕрĕ юлнă-юлнах, вилмен, куçĕсем те чиперех курнă, анчах пичĕ вара, çуннипе, йăлт кăварчланса ларнă, вырăнĕ-вырăнĕпе шăмăсем курăннă. Сакăр уйăх хушши выртнă вăл госпитальре. Ăна умлă-хыçлăнах пластикăллă операцисем тунă, сăмсине юсанă, тутисене, куçхаршисене, хăлхисене тӳр-

летнĕ. Сакăр уйăхран бинтсене салтса пăрахсан, вăл хăй пичĕ çине пăхса илнĕ. Анчах ку ĕнтĕ унăн пичĕ пулман. Ăна пĕчĕк куçкĕски паракан медсестра аяккалла çаврăнса тăрса макăрса янă. Егор Дремов куçкĕскине çийĕнчех каялла панă.

„Кунтан та хăрушрах пулать, кун пеккипе пурăнма пулĕ-ха",—тенĕ вăл.

„Тек ĕнтĕ вăл медсестраран куçкĕски ыйтса илмен, хăйĕн питне, пĕчĕккĕн хăнăхса пынă пек, ялан аллипе хыпашланă. Комисси ăна стройра çапăçма юрăхсăр тесе пĕлтернĕ. Вара вăл генерал патне кайнă та: „Мана полка каялла кайма ирĕк пама ыйтатăп", тенĕ. „Инвалид вĕт-ха эсир", тенĕ генерал. „Çук, инвалид мар эпĕ, сăн-пит çеç чипер мар манăн, анчах та вăл ĕçре кансĕрлемест. Эпĕ ĕлĕкхи пекех çапăçакан пулăп". (Калаçнă чухне генерал хăй çине пăхасшăнах пулманнине асăрхасан, Егор Дремов сăмах-мĕн чĕнмен, кĕрен те хушăк евĕр тŭптŭрĕ тутисемпе кулса кăна илнĕ). Вăл хăйĕн сывлăхне йăлтах юсаса çитерме çирĕм кунлăх отпуск илнĕ те килне, ашшĕпе амăшĕ патне, кайнă. Ку ĕнтĕ шăпах çак çулхи март уйăхĕнче пулнă.

Станцире апсан вăл лав тытма шутланă, анчах та унăн вунсакăр çухрăма çуранах утма тŭр килнĕ. Пур çĕрте те юр выртнă, йĕперех çанталăк тăнă, сивĕ çил вĕрнĕ, вăл шинель аркине вăркăштарнă, хăлхара салхуллăн шăхăрса тăнă. Яла вăл тĕттĕм пула пуçласан çитнĕ. Акă ĕнтĕ шывăсмалли пусă, çŭллĕ тараси ун чĕриклетсе, сулланкаласа тăрать. Ку тарасаран улттăмĕш кил—унăн килĕ. Вăл сасартăк чарăнса тăчĕ, аллисене кĕсьине чикрĕ. Пуçне сулкаласа илчĕ. Аяккарах пăрăнса хăйсен пŭрчĕ патнелле утрĕ. Чĕркуççи таран юр ишсе пырса чŭречерен пĕшкĕнсе пăхрĕ те амăшне курчĕ,—аран çеç тĕлкĕшен лампа çуттинче вăл, сĕтел çине касхи апат хатĕрлет-мĕн. Çав-çавах тĕксĕм тутăрпа вăл, ĕлĕкхи пекех, шăппăн, васкамасăр ĕçлет, кăмăллă. Хăй ватăлса кайнă, хулпуççийĕсем ырханланнине палăртса тăраççĕ... „Ох, кăна пĕлнĕ пулсан, ăна кашни кунах хам çинчен пĕр-ик сăмах та пулин çырса тăмалла пулнă..." Вăл сĕтел çине пĕр чашăк сĕт, çăкăр татăкĕ, икĕ кашăк, тăвар чашки илсе пырса лартрĕ те, ырхан аллисене кăкăрĕ çине хурса, шухăша кайса тăчĕ. Чŭречерен амăшĕ çине пăхса тăракан Егор Дремов амăшне хăратма юраманнине ăнланса илчĕ.

Ну, юрĕ-çке! Вăл кĕçĕн алăка уçрĕ те картишне кĕрсе крыльца çине хăпарчĕ, алăка шаккарĕ. Шалтан амăшĕн сасси илтĕнчĕ. „Кам унта?" „Лейтенант, Совет Союзĕн Геройĕ Громов" терĕ Егор Дремов.

Унăн чĕри çав тери хăвăрт тапса илчĕ, кайса ŭкес мар тесе, вăл хулпуççийĕпе алăк янахĕ çумне таянчĕ. Çук, амăшĕ ăна сасран паллаймарĕ. Ăна хăйне те хăйĕн операцисем тунă хыççăн улшăннă сассине, янăравсăр, хăрăлтатса, аран-аран тухакан сассине пĕрремĕш хут илтнĕн туйăнчĕ.

„Батюшка, сана мĕн кирлĕ вара?"—ыйтрĕ амăшĕ.

„Мария Поликарповна валли ывăлĕнчен, аслă лейтенант Дремовран салам илсе килтĕм".

Кун хыççăн амăшĕ алăка уçрĕ те ун патне чупса пычĕ, ăна аллисенчен ярса тытрĕ:

„Вилмен, эппин, ман Егор? Сывах-и? Батюшка, ара, эсĕ пŭрте кĕр".

Егор Дремов сĕтел умĕнчи сак çине пырса ларчĕ. Ку сак çинче вăл пĕчĕк чухне нумай ларнă. Астăвать вăл, ун чухне унăн урисем урайне те перĕнместчĕç, амăшĕ вара унăн кăтра пуçне ачашласа апат çиме сĕнетчĕ. „Çи, чĕппĕм", тетчĕ. Вăл амăшне ывăлĕ çинчен, тĕрĕссипе каласан, хăй çинчен каласа пама тытăнчĕ. Вăл мĕнле ĕçсе-çисе пурăнни çинчен, нимĕнле нуша та курманни çинчен, яланах сывă та хаваслă пулни çинчен каларĕ.

„Каласа пар-ха эсĕ, вăрçăра питĕ хăрушă-и?—Егор сăмахне пŭле-пŭле, тĕксĕм, анчах та ăна курман куçĕсемпе пăхса ыйтрĕ амăшĕ.

„Паллах, хăрушă, асанне, анчах та—çын хăнăхать".

Часах ашшĕ, Егор Егорович таврăнчĕ. Ку çулсенче вăл та чылай ватăлнă, имĕш, унăн сухалĕ сăнăх сапнă пек шуралса кайнă. Хăна çине пăхкаласа, вăл алăк патĕнче лŭчĕркенсе пĕтнĕ кăçаттисене шаккакаласа илчĕ, васкамасăр шарфне сŭтрĕ, кĕрĕк пиншакне хыврĕ, сĕтел патне пырса хăнана сывлăхсунса ал тытрĕ,—ах, палланă алă пулнă ашшĕн сарн лака та тĕрĕс алли! Орден çакса тултарнă хăна мĕтума килнине ыйтмасăр-тумасăрах ăнланса илчĕ вăл. Шарламарĕ, ларчĕ те, тĕлĕренçи пулса, итлеме тытăнчĕ. Лейтенант Дремов хăйне паллаттармасăр хăй çинчен, çав хушăрах хăй çинчен те мар калаçса ларнă çемĕн ашшĕпе амăшне чăннине калама май çуккине ăнланса илчĕ. „Атте, анне, палласа илĕр ĕнтĕ мана, çын сăнне çухатнăскере!" теме ниепле те вăй çитес çук унăн. Ăна ашшĕпе амăшĕн сĕтелĕ хушшинче лармаа питĕ аван ĕнтĕ, анчах та çав тери чун тăвăнать.

„Ну, амăшĕ, касхи апат çитер, хăна валли мĕн те пулин хатĕрле,—терĕ те Егор Егорович, кивĕ шкап алăкне уçрĕ. Ку шкапра сулахай енчи кĕтессре шăрпăк коробкинче вăлта йĕппиsем выртатчĕç, вĕсем халĕ те унтах иккен. Унтах çĕмрĕк сăмсаллă чейник ларатчĕ, вăл та унтах. Егор Егорович эрех кĕленчи кăларчĕ,—эрехĕ икĕ стакан çеç юлнă-мĕн, старик вара, урăх тупма май çуккишĕн кулянса, ассăн сывласа илчĕ. Ĕлĕкхи пекех касхи апат тума ларчĕç. Апата ларнă старший лейтенант Дремов амăшĕ унăн кашăк тытнă аллине тимлесех сăнанине асăрхарĕ. Кăна курсан Егор кулса илчĕ, амăшĕ тек пăхмарĕ ун алли çине, унăн пит-куçĕ туртăнса, чĕтренсе илчĕ.

Тĕрлĕ япала çинчен калаçрĕç. Кăçал çуркунне мĕнле килесси çинчен калаçрĕç, халăх çуракине йĕркеллĕ иртттерме пултарĕ-ши терĕç, кăçал çулла вăрçă пĕтессе кĕтмелле терĕç.

„Егор Егорович, мĕншĕн-ха эсир кăçал çулла вăрçă пĕтме тивĕç тесе шухăшлатăр?"

„Халăх çилли тулса çитрĕ",—терĕ Егор Егорович, —халăх вилĕм урлă утса каçрĕ, халĕ ĕнтĕ ăна тытса чараймăн, нимĕçе—капут".

„Эсир каламарăр-ха, киле килсе курма хăçан отпуск параççĕ-ши ăна. Виçĕ çул хушши курман ĕнтĕ, çитĕнсе кайрĕ пулĕ, майăхсемпе çŭрет пулĕ-ха... Куллен вилĕмпе юнашар пурăнса сасси те улшăнса кайрĕ пулĕ?"—ыйтрĕ Мария Поликарповна.

„Килĕ те акă, палласа та илеймĕр",—терĕ лейтенант.

Çывăрма ăна кăмака çине вырттарчĕç. Кунта вăл кашни кирпĕче, стена çинчи кашни хушăка, мачча хăмисем çинчи мĕнпур турат куçĕсене пĕлет. Кăмака çинче тир шăрши, тырă шăрши кĕрет,—вĕсен шăршине вилес сехетре те манаймăн. Тулта март çилĕ шăхăрса вĕрет. Хăмапа пŭлсе тунă пŭлĕмре ашçывăрать. Амăшĕ çывăрмасть, пĕр ен-

чен тепӗр енне ҫаврӑнкаласа, ассӑн сывлакаласа выртать. Лейтенант аллине пуҫайне хурса ӳпне выртрӗ. „Неушлӗ паллаймарӗ анне, неушлӗ паллаймарӗ? Анне, аннеҫӗм!"...—шухӑшларӗ вӑл.

Ирхине вӑл вут шатӑртатса ҫуннине илтсе вӑранчӗ. Амӑшӗ, сас пуласран сыхланса, кӑмака умӗнче кӑштӑртататать. Кантра ҫинче унӑн ҫуса тасатнӑ партенккисем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ, алӑк патӗнче ҫуса тасатнӑ аттисем выртаҫҫӗ.

„Тулӑ икерчи ҫиетӗн-и эс?"—ыйтрӗ амӑшӗ.

Вӑл тӳрех ответлемерӗ. Кӑмака ҫинчен анса гимнастеркине тӑхӑнчӗ, пиҫихине туртса ҫыхрӗ те ҫара уранах сак ҫине пырса ларчӗ:

„Калӑр-ха, сирӗн ялта Андрей Степанович Малышев хӗрӗ Катя Малышева пурӑнать-и?".

„Пӗлтӗр вӑл курсра вӗренсе тухрӗ, халӗ ялта учительница пулса ӗҫлет. Сан ӑна курмалла-им?".

„Ывӑлӑр ӑна салам калама хушса ячӗ". Амӑшӗ кӳршӗ хӗрачине ӑна чӗнме ячӗ. Лейтенант атӑ тӑхӑнма та ӗлкӗреймерӗ, Катя Малышева персе те ҫитрӗ. Унӑн пысӑк та кӑвак куҫӗсем йӑлтраса кӑна тӑраҫҫӗ, питҫӑмартийӗсем ҫинче савӑнӑҫ ҫути йӑлкӑшать. Вӑл пуҫри ҫӑм тутӑрне салтса сарлака хулпуҫҫийӗсем ҫине уртса хурсан, лейтенант чӑтаймасӑр ассӑн сывласа илчӗ:—Чуптуса илесчӗ ҫак йӑлтӑртаттса тӑракан илемлӗ те ӑшӑ ҫӳҫ пӗрчисене!—Вӑл хӑйӗн тусне яланах ҫакӑн пек пулӗ тесе шутланӑ та ӗнтӗ,—таса, ҫепӗҫ, хаваслӑ, ырӑ кӑмӑллӑ, илемлӗ. Акӑ халь вӑл кӗчӗ те, пӗтӗм пӳрт илемӗ кӗрсе кайрӗ...

„Егор салам каласа янӑ, тет-и? (Егор ҫурӑмне чӳрече патнелле туса, пуҫне пӗксе ҫеҫ тӑчӗ, мӗншӗн тесен вӑл сӑмах-мӗн чӗнме хал ҫитерреймерӗ). Эпӗ ӑна ҫӗрӗн-кунӗн кӗтетӗп, эсир ӑна ҫаплах калӑр..."

Вӑл ун патне ҫывӑхарах пырса тӑчӗ. Ун ҫине пӑхрӗ те, хӑранипе, такам кӑкӑртан чышнӑ пекех, каялла чакрӗ. Егор вара хайне хӑй тухса кайма,—паянах тухса кайма сӑмах пачӗ.

Амӑшӗ тул ҫӑнӑхне вӗретнӗ сӗтпе ҫӑрса икерчӗ пӗҫерсе тултарнӑ. Егор каллех Дремов лейтенант ҫинчен кала-кала пачӗ. Анчах халь ӗнтӗ вӑл унӑн ҫапӑҫури паттӑрла ӗҫӗсем ҫинчен каларӗ. Нимӗн те пытармарӗ. Катя ҫине пӑхмарӗ вӑл, унӑн илемлӗ сӑн-питне хӑйӗн чипер мар сӑн-питне кӑтартнипе улшӑнтарасшӑн пулмарӗ. Егор Егорович колхозран лаша илсе килес тесе хыпаланма тытӑнчӗ, анчах та вӑл, ҫуран килнӗскер, станцине ҫуранах тухса утрӗ. Киле килнӗрен вара пулса иртнисем Егор ӑшне ҫав тери вӑркаттарчӗҫ. Нимӗн тума аптӑранӑ енне вӑл, ҫул ҫинче чарӑна-чарӑна тӑрса, хӑйне питӗнчен те чышкаласа илчӗ. „Мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ манӑн?" терӗ вӑл, пӳлӗннӗ сасӑпа.

Егор хӑйсен полкне таврӑнчӗ. Полкӗ вӗсен инҫетри тыла йыш хушма тата ҫӗнӗрен хӗҫпӑшаллanма тухнӑ-мӗн. Ҫапӑҫури юлташӗсем ӑна чун-чӗререн савӑнса кӗтсе илчӗҫ, ҫакна пула унӑн чунӗ лӑпланчӗ. Ҫак таранччен ни ҫывӑрма, ни апат ҫиме, ни сывлама паман хуйхӑ-суйхӑ тамалнӑ пек пулчӗ. Ҫирӗп шухӑш тытрӗ вӑл,—инкекӗм ҫинчен аннем хӑвӑртах ан пӗлтӗр. Катяна ӑна—вӑл шӑрпӑка чӗререн кӑларса пӑрахатӑпах,—терӗ.

Тепӗр икӗ эрнерен амӑшӗнчен ҫыру килчӗ. Амӑшӗ ҫапла ҫырнӑ:

„Аван-и, хаклӑ ывӑлӑм? Сан пата пӗтӗмӗшпех ҫырса пӗлтерме те хӑратӑп, пӗлместӗп, нимӗн шухӑшлама аптӑратӑп. Пирӗн пата пӗр ҫын килсе кайрӗ, санӑн юлташу, тет,—питӗ лайӑх ҫын хӑй, анчах та сӑн-пичӗ чипер мар. Вӑл пӑртак пурӑнасшӑнччӗ, анчах та кӗтмен ҫӗртенех пуҫтарӑнчӗ те тухса кайрӗ. Ҫавӑнтан вара, ывӑлӑм, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе ҫывӑраймастӑп—темшӗн, эсӗ килсе кайнӑн туйӑнать. Егор Егорович ятлать мана ҫавӑншӑн,—ара, эсӗ, карчӑк, ухмаха ертӗн-им: хамӑр ывӑл пулнӑ пулсан, епле паллаттармасӑр кайтӑр, тет. Мӗн пытарса тӑмалли пур унӑн? Хамӑр пата килсе кайнӑ ҫынӑнни пек сӑн-питпе мухтанма тивӗҫ, тет. Ҫапла каласа ӗнентерет ӗнтӗ мана Егор Егорович, анчах та аннӳ чӗри хӑйӗннех калать: вӑлах, вӑл пулнӑ пирӗн патӑрта, тет. Ҫынни кӑмака ҫинче ҫывӑрчӗ. Эпӗ унӑн шинельне тасатма тесе картишне илсе тухрӑм та, ун аркипе пите хупласах макӑрма тытӑнтӑм,—ҫавах ку, ҫавӑн шинелӗ ку, тетӗп. Егорушка, ҫырса пӗлтер, тархасшӑн, ӑса кӗртсем мана, пӗлтер мӗн пулнине? Тен эпӗ чӑнахах та ӑсран тайӑла пуҫланӑ..."

Егор Дремов ку ҫырӑва мана, Иван Сударева, кӑтартрӗ. Хӑйӗн историне каласа панӑ хушӑра вӑл куҫӗсене ҫаннипе шӑлса илчӗ. Эпӗ ӑна: „Ак, кӑмӑлсем тӗлпулчӗҫ. Ухмах эсӗ, ухмах, ҫырса яр аннӳ патне хӑвӑртрах, каҫару ыйт, ухмаха ан ерт... Пит кирлӗ ӑна сан сӑн-питӳ! Каплипе вӑл сана тата ытларах юратма тытӑнать", тетӗп.

Вӑл ҫак кунах ҫыру ҫырса ячӗ: „Хаклӑ атте-анне, Мария Поликарповнӑпа Егор Егорович! Каҫарӑр ухмахланнӑшӑн, сирӗн патӑра чӑнахах та эпӗ пырса кайрӑм". Тата темӗн те пӗр, темӗн те пӗр, вӗтӗ почеркпа тӑватӑ страница ҫырчӗ, —вӑл ҫирӗм страница та ҫыратчӗ-и тен, ҫырма май пулнӑ пулсан.

Пӑртак вӑхӑт иртсен, пӗррехинче эпир унпа полигонра тӑраттӑмӑр. Пирӗн пата пӗр салтак чупса пычӗ те Егор Дремова: „Капитан юлташ, сире чӗнеҫҫӗ" терӗ. Пӗтӗм формӑпа тӑрать пулин те, сӑнран пӑхсан ку салтака эрех ӗҫме шут тытнӑ тейӗн, —ҫав тери хаваслӑ. Эпир поселока кайрӑмӑр, Дремовпа иксӗмӗр пурӑнакан ҫурт патнелле пыратпӑр. Куратӑп эпӗ—вӑл темшӗн питӗ хумханать, ӳсӗркелесе илет. „Танкистне танкист хӑй, ҫапах та, нервисем япӑх—тесе шутлатӑп. Пӳртелле кӗретпӗр, вӑл малтан, эпӗ—ун хыҫҫӑн. Сасартӑк эпӗ илтетӗп:

„Анне, аван-и? Эпӗ вӗт ку..." Куратӑп—пӗчӗкҫӗ карчӑк ун кӑкӑрӗ ҫине ӳпӗнчӗ. Ҫавӑрӑнса пӑхатӑп та, тепӗр хӗрарӑм пуррине куратӑп. Тӗрӗсне калатӑп, хитре хӗрсем татах та пулӗ, вӑл кӑна пулма пултараймасть, анчах та эпӗ халиччен ун пеккине курман.

Вӑл, амӑшӗнчен уйӑрӑлчӗ те, ҫак хӗрача патне пырать. Малтанах каларӑм вӗт-ха, пӳ-сийӗпе вӑл вӑрҫӑ турри пек яштака та тӗреклӗ.—„Катя!—тет, —Катя, ма килтӗр эсир? Вӗт эсир леш Егора кӗтме пулнӑччӗ, кӑна мар..."

Эп ҫенӗхе тухрӑм пулин те, чипер Катя мӗн-мӗн каланине лӑйӑхах илтетӗп. „Егор,—тет вӑл,—эпӗ сирӗнпе ӗмӗр пурӑнма шутлатӑп. Эпӗ сире яланах юратӑп, питӗ юратӑп... Хӑваласа ан яр мана..."

Акӑ мӗнле вӗсем, вырӑс кӑмӑлӗсем! Ҫын питӗ простой пек, анчах та йывӑр самант-мӗн килсе тухсан, пӗчӗк ӗҫре-и, пысӑк ӗҫре-и, ун ӑшӗнче аслӑран та аслӑ вӑй—этем илемӗ ҫӗкленет.

*К. ТУРХАН куҫарнӑ.*

# ВЛТАВА ШЫВĔ ХĔРРИНЧЕ

*ЯКОВ УХСАЙ*

Нимĕçрен хăтарнă Прагăн
Айккинче пĕр-икĕ кун
Чарăнса тăрса пăртакăн
Канчĕ пирĕн батальон.

Аслă çутă тĕнчере
Пысăк вăрçă иртнĕ хыççăн
Çăкăр-тăварпа пит уççăн
Йышăнчĕç чехсем пире.

Килсерен чÿречине
Çĕнтерÿ ялавĕ тирнĕ,
Хÿхĕм Прага хулине
Иртрĕм эпĕ урлă-пирлĕ.

Ывăннă урасене
Кантарасшăн эпĕ тухрăм
Хамăртан пĕр-икĕ çухрăм
Влтава шывĕ хĕррине.

Выртрăм эпĕ шурутиллĕ
Вырăна чавсаланса.
Вĕркелерĕ лăпкă çилĕ
Çÿçĕме авкаласа.

Кĕмĕл сапнă пек çап-çутă
Влтава шывĕ хĕрринче
Шавлани те, калаçу та,
Тĕлĕкри пек, илтĕнчĕ.

Пуçĕ çÿллĕш тĕтрере
Пытанса пĕр çамрăк каччă
Тÿрĕ пилĕклĕ хĕре
Аллинчен тытса тăратчĕ.

ХĔР

Хур чĕппи пек сарă уйăх
Шыв çине ишме тухсан,
Çывăрать тăван чех уйĕ—
Кăвак ту, ешĕл васан.

Уйăхлă хума ачашшăн
Ăшă çил сиктернĕ чух,
Каçсерен сана курасшăн
Çакăнта хурланĕ чун.

Куртăн-и, вĕçет хуркайăк
Пирĕн урлă çурçĕре.
Эсĕ те, тăванăм, кайăн
Ху çуралнă уйхире.

САЛТАК

Кайăп çав.

ХĔР

Сана юратĕ
Урăххи, анчах чĕрем
Касăлнă пекех ыратĕ
Йывăр хуйхă ÿкнĕрен.

САЛТАК

Куçупа пĕрре чĕнсен,
Чех ачи сана ыталĕ,—
Шĕл кăвар пек куçлисем
Мансăр та кунта сахал-и?

ХĔР

Нумайне нумай, анчах
Кăмăла çунтараканĕ—
Хурчăка пекех ача
Аякри килне ăсанĕ.
Эпĕ, çамрăк кăвакарчăн,
Юлăп ĕнтĕ пĕр пĕччен.

САЛТАК

Эпĕ манăп-и чăнран чăн
Хамăн савнă кил çинчен?
Эпĕ манăп-и мана
Хуп сăпка парса сиктернĕ,
Хурăн шывĕ те ĕçтернĕ,
Пÿрт те панă вăрмана?
Халĕ манăп-и мана
Тÿсĕмлĕ кервен ÿт-тирлĕ,
Çитĕнтернĕ тутă хирлĕ,
Тутлă шывлă таврана?

ХĔР

Сапăр пул-ха, мухтанса
Калаçма, тăванăм, чарăн!
Сăрт-тусем çинчи таса
Пирĕн çĕр кунта начар-и?
Каштанпа хупланнă Прагăн
Пĕлĕчĕ çĕрле тÿлек.
Кÿкĕрт çулăмĕ пекех
Курăнать вăл кăн-кăвакăн.
Уншăн юхнă сирĕн юн.

САЛТАК

Ĕлĕк пирĕн аслă Ленин
Пулнă, тет, кунта.

ХĔР

Эс юл!
Пурăна киле иленĕн.

САЛТАК

Пирĕн харсăр йĕкĕтсем
Нимĕçрен хăтарнă Прагăн
Тап-таса урамĕсем
Вăрăм та çатма пек такăр.
Хулăрта мана чи лайăх
Ылттăн çурт парнелеме
Тытăнсан та—эпĕ кайăп
Хам çуралнă çĕрĕме.

ХĔР

Чун-вартан мана савсан,
Ĕмĕтÿ капла вăй-шайăн
Ăнтăлса сикмĕччĕ сан,—
Кайăн ĕнтĕ, тусăм, кайăн.

САЛТАК

Ан çилен мана, тăванăм,
Ан кÿрен, ÿпкев ан ту!
Çиçĕмрен хăватлă манăн
Тепĕр пысăк юрату.

ХĔР

Санăн шухă чĕрÿне
Халĕ çывăхран та çывăх
Илĕртнĕ хĕрĕн ятне
Ман пĕлес килет.

САЛТАК

Çĕршывăм!

* * *

Салтакпа хĕр ăсансан та,
Нумаййчен çерем çинче
Эпĕ выртрăм, ыррăн кантăм
Влтава шывĕ хĕрринче.
Лимонран та сарă уйăх
Укнĕ симĕс шыв çине,
Кăвакал чĕппи пек лайăх
Ярăнса çăвать питне.
Хĕрĕнчен салтак юлташăм
Уйрăлнă пекех, ыран
Аллăма сĕлтсе ачашшăн
Эпĕ кайăп Прагăран.
Кăн-кăвак пĕлĕтсене
Пистолет пекех тĕлленĕ
Тăрлă çÿлĕ çуртсене
Тĕлĕкре курса тĕлленĕп,
Ма тесен, çĕнÿ уявĕ
Пынă шавлă кунсенче
Ман Тăван çĕршыв ялавĕ
Вăлкĕшрĕ вĕсем çинче.

1945.

---

# ЫРĂ ÇУРТ

Чавкапуç çеçки çинче
Вăранса тĕкĕл-тура
Сывлăмра çинçен-çинçен
Наййалтатнă вăхăтра,
Ирхине, çăра тĕтре
Кăкăрăм таран чухне,
Хуньакамçăм, инçетрен
Çитрĕм эпĕ сан килне.

Тĕркĕмленĕ шинеле
Хулпуççи çине хурса,
Çилсĕр лăпкă хирпеле
Утрăм эпĕ ăнтăлса.
Пĕвĕм-сийĕм вунçичче
Тин кăна тултарнă пек,
Çамăл пытăм пĕр пĕччен
Вăрçăн йывăр аттипе.

Мăнтăркка путенесем
Вĕçĕмсĕр пĕтпĕлтетни
Илтĕнсе вăйланнăçем,
Хуньакам, пĕлетĕн-и,
Эпĕ килнĕ аслă çул
Айккинчи ял уйĕнче
Тĕнчери илемлĕ мул
Пухăннă пек туйăнчĕ.

Сылтăм ал тӳнтерĕпе
Карлăкне кăштах тĕртсен,
Ват кăркка аçийĕ пек
Вăрăммăн кăриклетсе,
Уй хапхийĕ уçăлчĕ,
Выртрĕ анлă такăр çул.
Питĕ капăр курăнчĕ
Вырăсла хапхаллă çурт.

Сар хĕвел хăпарнăçем
Сапаларĕ çуттине
Чĕнтĕрлĕ чӳречесен
Чакăр куçĕсем çине.
Канкаланă вăхăтра,
Чылаях, нумай хутчен,
Эпĕ çакă ыр çуртра
Пулкаланă вăрçăччен.

Çавана çупкийĕпе
Янратса хăйра-хăйра,
Эпĕ çамрăк-кĕрĕмпе
Утă çулнă улăхра;
Кĕркунне, вăрман çинче
Сарă ылттăн тум чухне,
Хуньакам кĕрекинче
Тытнă эп така пуçне.

Иртрĕм эпĕ вăрçăра
Вут та çулăм çулĕпе.
Тăнлавсем çинче сайра
Кăвакарнă çӳçĕмпе,
Шăпчăк пек хавасланса,
Кĕтĕм эпĕ ирхине
Ешĕл курăклă таса
Сарлăка килкартине.

Тутă тĕшĕллĕ икел
Ӳстерсе мулланакан
Ват юман пекех иккен
Эсĕ, савнă хуньакам:
Хушăнуллă пурлăху
Санăн ӳсрĕ çӳлсерен,
Пусăра тирпейлĕ ху
Тăрăшса ĕçленĕрен.

Колхозра ырма пĕлми
Яланах вăй хунăран
Кĕлетӳн юман пӳлми
Тырăпа шăп тулнă сан,
Çавăнпа та ахаль мар
Хăвăр ялăн хушшинче
Пархатарлă сас-хыпар
Халăх сарнă сан çинчен.

Ик ална та хыçала,
Çурăму хыçне тытса,
Васкамасăр, хуçалла
Вăрăммăн кăна утса,
Тухрăн эсĕ ерипен,
Кăтартас тесе мана
Калĕмпĕр шăршийĕпе
Тутлăланнă пахчуна.

Шăтăрнакăн хĕррипе
Ларакан пайтах вĕлле
Халăхĕ ĕçленипе
Кĕрлесе ларать хуллен.
Хурт-хăмăр, кĕрхи туя
Хатĕрленнĕ пек, пылне
Пуçтарма вĕçет уя,
Хуратул çеçки çине.

Пăр та, юр та, çумăр та
Тивейми хирти тырра
Кӳртнĕ хыççăн çу хута
Урăм-сурăм шăрăхра
Шултăрканă пичкене
Сăрапа тултармалла,
Çавăнпа шертесене
Явăнса ӳсет хăмла.

Пысăк çын та сырмалла
Çăпатан çалăпĕнчен
Пысăкрах та тăрăхла
Хăярсем йăран çинче
Ӳснĕ санăн ашкăрса
Тирĕслĕ çĕр нӳррипе,—
Каткипе тăварласа
Лартăн ĕнтĕ нӳхрепе.

Пахчуна шалалларах
Сукмакпа кĕрейнĕçем
Нумайрах та ытларах
Савăнса курмаллисем.
Чĕлхене килентерсе,
Туратсем çинче тулли,
Шĕл кăвар пек хĕрелсе
Курăнать хăмла çырли.

Чĕрĕ кĕмĕл пек таса
Сывлăмăн шăрçисене
Курăксем çинчен тăкса
Утрăм эпĕ—ун чухне
Хăмаççип кĕпеллĕ пек
Хĕрелсе умри чие
Ешĕл çулçă витĕр тек
Пăхкаларĕ ман çие.

Авалхи хурамаран
Юлнă тунката çине
Ларса хăмăн ывăçран
Хурлăхан çырлисене
Çӳçенсе çинĕ чухне
Илтрĕм эпĕ, хуньакам,
Шăнкăр-шăнкăр юхакан
Çывăх шывăн сассине.

Таврара кун пек чечен
Тепĕр вырăн та пур-ши?
Сăрт хĕрри валакĕнчен
Кĕрлесе анать тăр шыв.
Ирхине хĕвел çине
Шыв ванса пĕрхĕннипе
Кăтартать çăл хăй тĕсне
Асамат кĕперĕ пек.

Çавăнпа та кăпăк пек
Çемçелсе хура тăпра
Ăнтарать районĕпе
Паллă пысăк хăяра.
Çавăнпа та çулсерен
Шăрăхра та пĕр чакми
Йăтăнать пĕрех тĕпрен
Вăтăр икĕ çĕрулми.

Çавăнпа та, хуньакам,
Колхозри пуян пахчу,
Çĕр питне çунтаракан
Вăрçăра çӳренĕ чух,
Яланах хутран-ситрен
Килкелетчĕ асăма,
Асăма килмессерен
Хумханатчĕ хурама.

Тăкăс çӳçлĕ хураман
Сулхăнне саппа ларса
Калаçас килетчĕ ман,
Кăмăла йӳле ярса.
Ут çуласчĕ йĕп-йĕпе
Сывлăм ӳкнĕ улăхра,
Çавана çупкийĕпе
Янратса хăйра-хăйра.

Халĕ ĕнтĕ, хуньакам,
Килтĕм санăн ыр çуртна,
Хулпуççи çине çакам
Çивчĕ шăллă çурлуна,
Сарлака пусса ирпе
Хĕвелпе тухам ыран,
Эпĕ çамрăк-кĕрĕмпе
Тавлашса кайса вырам!

Пилĕк ывăнвă чухне
Чĕлĕме туртма кăна
Чăмăркка кĕлте çине
Пĕшкĕнсе ларса канам,
Тутăр витнĕ тап-таса
Чĕресрен уйран ĕçсе,
Ик çанна та тавăрса
Тепĕр хут тăрам ĕçе.

Август, 1946.



# Савни пĕрни

*Калав*

*ВАСИЛИЙ ВЕСЕЛОВ*

Эпĕ юлташа кĕтсе илме каятăп. Вăл паян Хĕрлĕ Çартан таврăнмалла.

Ешĕл çаран тăрăх тухса çырма урлă каçрăм та вĕтлĕх вăрмана пырса кĕтĕм. Сукмакпа чугун çул станцийĕ патнелле утатăп. Вăрманти кайăксем чĕвĕлтетсе, шăхăрса юрлаççĕ. Ватă хурама тăрринче куккук аватать. Унччен те пулмарĕ, инçетре те мар çемçе те уçă, çав тери илемлĕ юрă кĕвви илтĕнчĕ. Эпĕ ăна чарăнса тăрсах тăнларăм. Юрлаканнисем ман паталла çывхарса килекен хĕрсем пулчĕç, иккен. Вĕсем урăх сукмакпа эпĕ утакан сукмак çинелле тухаççĕ.

Пĕрле кайма савăнăçлăрах пултăр тесе, эпĕ вĕсене çул хĕррине ларсах кĕтме пуçларăм.

Сукмак тăрăх икĕ хĕр çывхарса килеççĕ. Вĕсен аллисенче чечек çыххисем.

Çамрăк хĕрсем часах юрлама чарăнчĕç те шăкăлтатса калаçма тытăнчĕç. Хăйсем манран инçе те мар ĕнтĕ. Çавах та мана асăрхаймарĕç пулас.

— Поезд вăхăтра килет-ши?—ыйтрĕ вĕсенчен пĕри.

— Ăçтаваскатăн? Тухрĕ пулсан, килетех ĕнтĕ,—терĕ тепри.

— Часрах курас килет-çке-ха. Тăвată çул ытлаçке-ха пĕр-пĕрине курманни.

Çак сăмахсенчен эпĕ вĕсем такама кĕтсе илме станцине кайнине пĕлтĕм.—Э, кусем çул майĕ-çкеха мана,—терĕм те сиксе тăтăм.

— Ай!—сасартăк кăшкăрса ячĕç хĕрсем.

Анчах эпĕ вĕсене çийĕнчех лăплантартăм.

— Эсир такама кĕтсе илме станцăна каятăр пулас та-ха, хĕрсем?

— Çапла та-ха... Те килет ĕнтĕ? Хăй килетĕпех тесе телеграмма янă та...

— Кам вара вăл?

Хĕрсем манран тĕлĕннĕ пек пулчĕç.

— Эсĕ тата мĕн çăмăлпа станцăна каятăн?—ыйтрĕç вĕсем.

— Эпĕ те юлташа кĕтсе илме,—терĕм çаксене.

— Хăш ялсем вара эсир?

— Пилешкассисем... Эсир?

Вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç те:

— Эпир... Хамăр ялсемех-ха, —терĕç кулкаласа.

— Юрĕ, эппин,—терĕм те, малалла, станци еннелле утма пуçларăм. Вĕсем те манпа пĕрлех пычĕç.

— Сирĕн кама кĕтсе илмелле вара?—ыйтрĕ пĕри манран, кăшт кайсан.

— Юлташа. Хĕрлĕ Çартан таврăнать паян. Телеграммине виçĕм кунах илнĕччĕ.

— Кам вара вăл?

— Герой... фронтра пĕрле пулнăччĕ. Икĕ çул хушши пĕрле çапăçрăмăр. Ара, иксĕмĕр те танкист пулнă вĕт, çитменнине тата пĕр экипажрах. Эпĕ аманса киле таврăнтăм. Вăл—тăшмансене тĕппипе аркатиччене çапăçрĕ... Эсир тата кама кĕтсе илме каятăр? Савнисене пулĕ-ха? Хĕрсен—савнисем пулакан...

— Çу-ук,—терĕç хĕрсем.—Савнине мар.

— Кама тата? Пиччĕрсене-и?

— Çук, шăллăма,—терĕ хăмăр куçли ерипен кăна.

Тепри ман çине пăхса илчĕ те:

— Эсир мĕншĕн тӳрех савни çинчен ыйтатăр вара?—терĕ.

— Çамрăкăн савни ĕнтĕ унăн. Фронтра чухне ман юлташ çаплаччĕ. Те-ек пĕр хĕре асăнатчĕ. Маруç ятлă, тетчĕ. Уншăн пулсан, Маруç пек хĕр тĕнчере çук. Вăл калană тăрăх хĕрне, чăн та ĕнтĕ, ытарма çук.

— Мĕнлескер-ши вăл апла, ытармалла марскер?

— Маттур хĕр. Ун пеккисене чăн-чăн совет хĕрĕсем тесен те юрать. Мухтанма тивĕç эпир ун пеккисемпе. Вĕт вăл хăй ĕçлесе тупнă укçи-тенкипе Хĕрлĕ Çара валли танк туяннă. Танкне вара, Маруç ыйтнипе, ман юлташ аллине пачĕç. Савни савнине танк туянса панă тенине илтнĕ-и эсир халиччен? Ку çеç те мар-ха. Танк илме укça çитерес тесе, туфлине те сутнă, тет. „Çынсем епле капăр çӳреççĕ. Эсĕ пур, урăнти пушмакна сутатăн“, теççĕ тет кăна хăшĕ-пĕрисем. А вăл:—„Халь капăр çӳремелли вăхăт мар. Вăрçăра тăшмана çĕнтерсен вара тумланса çӳрĕпĕр“—тесе калатчĕ, тет.

— Чăн та маттур пулнă иккен,—терĕ пĕри, тĕлĕннĕ пек пулса.

— Кăмăлĕ мĕне тăраты! Юлташăн килĕнче пĕррехинче ватă амăшĕ чирлесе ӳкнĕ, тет. Хĕлле пулнă ку. Ну, хăвăрах пĕлетĕр, пĕччен çын ăçта кайса кĕтĕр. Çитменнине тата йывăр чирлĕ. Пӳрт-çурта та ăшăтас пулать, выльăх-чĕрлĕхне те пăхмалла. Пĕтĕмпех аптăраса çитнĕ карчăк. Çакна пĕлет те Маруç, хайхи ман юлташ амăшĕ патне пырать. Пынă та хулари больницăна илсе кайса леçнĕ. Пĕр икĕ эрнерен больницăран сывалса тухнă карчăк тĕлĕнсех каять. Унăн пӳрчĕ те ăшă, выльăх-чĕрлĕхĕсем те тĕрĕс-тĕкел. Пĕтĕмпех çав Маруç туса тăнă ĕнтĕ çав ĕçсене. Амăшĕ вара савăннипе ман юлташ патне çыру çырса янă. Çыруне иксĕмĕр вуларăмăр. „Ывăлăм, эпĕ çав тери кăмăллă кин тупрăм. Сана çеç кĕтетĕп“,—тенĕ çырăвĕнче.

сем ман сăмаха хавхалансах итлесе пычĕç.

— Мĕн ятлă пулнă вара юлташу?—ыйтрĕç вĕсем.

— Петĕр ятлă,—терĕм эпĕ.—Горохов Петр Иванович. Çав тери лайăх юлташчĕ.

— Савнă хĕрĕ илсе панă танка ертсе çӳренĕ эппин вăл çапăçу хирĕнче? —именнĕ пек пулса ыйтрĕ пĕри.

— Тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ пĕррехинче çав танкпа. Вăл кун кунĕпех хаяр та юнлă çапăçу пычĕ. Артиллерирен вăйлăн хире-хирĕç персе тăнă хыççăн совет танкĕсем çапăçу хирне тухрĕç. Петĕр хăй танкĕпе çапăçăва чи малтан кĕчĕ. Унăн экипажĕ тăшманăн виçĕ танкне аркатса тăкрĕ. Анчах та, чи хĕрсе çапăçнă самантра, Горохов танкĕн гусеницине снаряд тивсе çĕмĕрнĕ. Малалла кайма çук. Танка вара ирĕксĕрех хире лартса хăварма тӳр килнĕ. Каç пулас умĕн хайхи танк юлнă вырăна нимĕçсем пырса кĕнĕ. Çакăн хыççăн Горохов калаçми пулчĕ. Хуйăха ӳкрĕ.

— Мĕн пулнă çак сана, Петĕр,—терĕм çакна пĕрре.

— Пĕлместĕн-и мĕн? Савни туянса панă танк тăшман аллинче,—терĕ вăл, хăйне хăй тарăхнăн.

Тĕттĕмленсен вăл командир патне кайса килчĕ. Пăхатăп, Петĕр ман йăлт улшăннă. Салху мар. Темĕн те пĕр калаçать. Хаваслă.

—Тусăм,—тет,—кĕçĕр хамăр танка тăшман аллинчен хăтарма каятпăр. Хатĕрлен,—тет.

Тепĕр вунпилĕк минутран эпир çула тухрăмăр. Нимĕçсен позицийĕ урлă каçса, Горохов танкĕ патне чиперех шăвăнса çитрĕмĕр. Çитнĕ-çитменех, тĕттĕм пулин те, пĕр тĕлтен таталнă гусеницăна юсама тытăнтăмăр. Ĕç ăнса пычĕ. Гусеница хатĕр. Петĕр хайхи мотора ĕçлеттерме тытăнчĕ. Питĕ аван. Тикĕс ĕçлет. Кĕрлеттертĕмĕр хамăраннисем еннелле. Хайсен позицийĕ урлă ĕрĕхтерсе каçса кайсан тин вĕçĕмсĕр пеме тытăнчĕç нимĕçсем. Çапла эпир хамăр чаçе çитрĕмĕр. Унăн паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа та пĕтерес çук. Ахальрен мар ĕнтĕ унăн кăкăрне çичĕ орден илемлетсе тăрать.

— Малалла, малалла?—хавхаланса ыйтрĕ пĕри.

Çак вăхăтра вăрмантан поезд пашлатса тухрĕ. Эпир станцăна чупрăмăр. Эпĕ ĕнтĕ хам юлташа кĕтетĕп. Вагон çинчен çамрăк та илемлĕ çар çыннисем чемоданĕсене йăтса, кĕпĕрленсе тухрĕç. Вĕсенчен пĕри вагон пусми картлашкисем çинченех:



— Петĕр!—терĕ ун патнелле ыткăнса пĕр хĕр.

— Маруç!—тесе кăшкăрса ячĕ.

— Петĕр!—терĕ ун патнелле ыткăнса пĕр хĕр. Эпĕ шаках хытса кайрăм. Ку хай пĕрле килнĕ хĕрсенчен пĕри пулчĕ. Эпĕ часрах вĕсем патне чупса пыратăп та, иккĕшне те ыталаса илетĕп.

— Петĕр! Тусăм!—терĕм эпĕ нимĕн калама пĕлмесĕр.

Вăл та мана хыттăн ыталса чуптурĕ. Маруç çине пăхатăп. Вăл çав тери илемлĕн çуталса, хĕвел шевли пек çиçсе кăна тăрать.

— Эсĕ пултăн-им ман юлташăн савнă хĕрĕ?—терĕм эпĕ, савăннипе.

— Аха,—терĕ те Маруç, каллех ман юлташа ыталаса илчĕ.

Мĕн тери савăнăçлă самант пулчĕ ку пирĕншĕн. Эпир вара тăваттăн каялла, хамăр килнĕ çул çине тухрăмăр. Петĕр Маруçпа, вĕсен хыççăн эпĕ Маруç юлташĕпе—утрăмăр. Пирĕн пеккисем ушкăнăн-ушкăнăн, çул тăрăшшĕпех станцăран тавăрăнаççĕ иккен.

— Акă, тавăрăнчĕç вĕсем, çĕнтерӳçĕсем!

Хам каялла пăха-пăха çапла калана хушăра, çумри хĕрĕн хам çине ăшшăн пăхакан куçĕсене куратăп. Эпĕ те ун çине ăшшăн пăхатăп.

---

# Сăвăсем

***НИКОЛАЙ ДАЛЬНОВ***

## ÇИЛ

Вăшăл çил, ăшă çил,
Йăпăрт ирт те, хăвăрт кил.
Кассăн-кассăн вĕрнипе
Хăлаçланччĕр армансем;
Хумлă-хумлă, тинĕс пек,
Юхчĕр анлă уй-хирсем.

Нӳрĕк çил, çемçе çил,
Лăпкăн вĕр те, тăтăш кил.
Шăпăр-шăпăр çумăрсем
Шывпа сапчĕр çĕр питне;
Ман çĕршывăн сачĕсем
Сарччĕр çепĕç çеçкине.

Йăваш çил, тӳлек çил,
Лăпкăн ирт те, лăпкăн кил.
Хĕлĕн янкăс кунĕнче
Ан çĕклентĕр юр-тăман,
Тĕттĕм каç ытамĕнче
Шăппăн лартăр сĕм вăрман.

## КӲЛĔ

Пирĕн ялăн çумĕнче
Кӳлĕ лăпкăн чӳхенет.
Çут хĕвелĕн шевлинче,
Çурхи кунăн уççинче
Тыткăнлать вăл чĕрене.

Ун тавра ӳсет йăмра
Вăштăр-вăштăр кашласа.
Шуçăм килнĕ вăхăтра
Шăпчăк шăппăн шăхăрса
Шăрçалать унта юрра.

Çумăр хыççăн чĕкеçсем
Пухăнаççĕ ун çине.
Вăшăл-вăшăл çил вĕрсен
Шăпăл-шăпăл хумĕсем
Çапăнаççĕ сыранне.

# М. С. СПИРИДОНОВ ХУДОЖНИК КАРТИНĔСЕМ

*25 çул искусство ĕçĕнче*









1. Шăпăрçă, 2. Доярка. 3. Ильинкăра. 4. Чăваш Халăх поэчĕ Н. И Полоруссов (Шелепи).




*Ача-пӑча калавӗ*

**ВАЛЕНТИНА АНДРЕЕВА**

Пӗчӗк хӗрача Машукӑн тахҫантанпах пукани пур. Ӑна вӑл Паруҫҫи пукани тесе чӗнет. Машук Паруҫҫи пуканине питӗ юратать. Ир-ирех вырӑн ҫинчен сиксе тӑрать те, хӑвӑртрах тумланса, Паруҫҫи пуканине вӑратма пырать. Ӗнер каҫ Машук Паруҫҫи пуканине пӗчӗкҫӗ кровачӗ ҫине ҫывӑрма вырттарнӑччӗ. Вырӑнӗ ҫине таса простынь, ҫемҫе минтер йӗркелесе сарса панӑ. Паруҫҫи пуканинне вӑл пушмакне, кӗпине хывма тата тутӑрне салтма пулашнӑччӗ. Аялти кӗпе вӗҫҫӗн ҫивитти витсех чу-чуласа, ҫупӑрласа паппа тутарнӑччӗ. Ав Паруҫҫи пукани халь те ҫаплипех Машук килсе вӑратса тумлантарасса кӗтсе выртать. Машук питӗ хастар. Акӑ вӑл Паруҫҫи пуканн патне чупса пырать.

— И-и-их! Хӗвел ӑста ҫити хӑпарнӑ!

— Паруҫҫи! Паруҫҫи пукани! Вӑрансам, тусӑм! Тул тахҫанах ҫутӑлнӑ! Ав пирӗн хӗрлӗ питлӗ автан, пире выляма чӗнсе, паҫӑрах темиҫе хут та ку-ку-рек-ку! ку-ку-рек-ку! тесе авӑтрӗ. Тӑрах, тусӑм Паруҫҫи! Юрататӑп-ҫке сана. Кӳр тутуна, аллусене чуптӑвам, акӑ ҫапла: ч-чуп-ч-чуп!.. ч-чуп!—тет Машук Паруҫҫине ачашласа.

Паруҫҫи пукани чунтан савӑнать. Унӑн тусӗ Машук ытла та ырӑ. Ӑна кровачӗ ҫинчен ҫӗклесе илнӗ хыҫҫӑн унӑн вырӑнне каллех типтерлет.

Машук хӑйӗн пуканипе пӗр чарӑнмасӑр калаҫать:

— Паруҫҫи! Эсӗ пӗлетӗн-и? Пирӗн кӳршӗри ҫитӗннӗ хӗрсем паян ял вӗҫӗнчи вӑрмана аслӑ вӑййя пухӑнаҫҫӗ. Эпир те: Натали, Плаки, Рита юлташсемпе ҫав вӑййя каятпӑр. Паллах ӗнтӗ, сана та хамӑрпа пӗрле илетпӗр. Эпӗ сана паян илемлӗ тумлантаратӑп. Акӑ икӗ аркӑллӑ ҫӗнӗ кӗпӳне тӑхӑн, чечеклӗ ҫӗнӗ саппунна ҫак. Кӳр-ха, ҫӳҫне якатса ҫивӗтлем, акӑ ҫапла... Пуҫна паян тутӑр мар, тухья тӑхӑнтарӑп. Юрать-и, тусӑм? Акӑ ҫапла. Ав мӗнле килӗшет сана тухья. Ӗнер эпӗ сана валли илемлӗ сарӑ ҫӑмҫиппинчен ҫекӗлпе пушмак ҫыхрӑм. Акӑ вӑл! Тӑхӑн! Ай-ай-ай, епле илемлӗ, епле килӗшеҫҫӗ ку тумсем сана! Мӗнле чипер эсӗ паян, Паруҫҫи. Мансах кайнӑ, шӑлкемине те ҫактарам-ха сана.

Тумлантарнӑ хыҫҫӑн Машук Паруҫҫине юрла-юрла сӗтел хушшине апат ҫиме лартрӗ. Паруҫҫи пуканин пӗчӗк сӗтел те, пукан та пур. Ку сӗтел-пукансене Машука ятарласах ашшӗ туса панӑ. Машук пукани умне ҫу сӗрнӗ ҫӑкӑр, сахӑр, конфет хурать. Хӑй вӑл пылак сахӑр катӑкӗпе конфет ӗмсе ҫӳреме питӗ юратать. Ҫавӑнпа та, хӑй ӑсӗпе, сахӑр катӑкӗпе конфета Паруҫҫи пукани те питӗ юратать, тесе шутлать.

Машук Паруҫҫи пуканине апатлантарнӑ вӑхӑтра алӑка шакканӑ сасӑ илтӗнчӗ.

— Ав ман юлташсем килчӗҫ пулмалла,—терӗ Машук.—Кам унта?

Алкумӗнчен хулӑм сасӑ илтӗнчӗ. „Килте кам пур?" Анчах ҫав вӑхӑтрах алӑк уҫӑлчӗ те, пӳрте Машук ашшӗ кӗчӗ.

— Атте! Атте, эсӗ-ҫке ку! Мӗн эсӗ, атте, мана урӑхла сасӑпа хӑрататӑн?—тет Машук савӑнса.

— Ай-ай-ай, Машук! Хӑйӗн ашшӗне те паллаймарӗ,—тет ашшӗ Машука витлесе. Унтан, Машук тутине уснине курсан, ашшӗ йӑпӑлтатнӑ пек каласа хурать:

— Машук, эпӗ сана валли пасартан пӗр япала илсе килтӗм.

Ку сӑмахсене илтсен, Машук савӑнса каять.

Вӑл ашшӗнчен ҫемҫе сасӑпа ыйтать:

— Мӗн илсе килтӗн? Кӑтарт?

— Пӗл ху! Ну, мӗн илсе килтӗм?

Машук ашшӗ Машук валли яланах конфет илсе килет. Ҫавӑнпа та вӑл ним шутласа тӑмасӑр:

— Пӗлетӗп! Конфет!—тет.

— Ҫук, ҫук, конфет мар.

— Мӗн тата, кӑтарт часрах, атте,—тархаслать Машук, ашшӗ патне чупса пырса.

— Ну, юрӗ-ҫке, йӗрсе ан яр тата. Кил кунтарах, акӑ ҫапла,—тет ашшӗ, Машука хӑйпе юнашар тӑратса. Унтан вӑл кушилтен тӗлӗнтермӗш япала туртса кӑларать. Кам шутланӑ кун пек япала ҫинчен! Пӑх-ха, пӗчӗк тетте тӑрантас, тата ӑна лаша кӳлнӗ. Тӑрантас ҫинче Машук ку таринччен курман чипер кӑна пукане ларать. Машук ашшӗ лаша кӳлнӗ тетте тӑрантаса ҫӗре лартрӗ те малалла тӗртсе кустарса ячӗ. Лаши ярлатса чупма тытӑнчӗ, тӑрантас кустӑрмисем кӑлтӑр-кӑлтӑр ҫавӑрӑнаҫҫӗ, ҫатан тӑрантасӗ ярӑнса кӑна пырать. Машук та тӳссе тӑраймарӗ, вӑл та, ахӑлтатса кулса, калаҫа-калаҫа, тетте тӑрантас хыҫҫӑн чупма пуҫларӗ.

— Ара! Чим-ха! Тытам! Тытам! Ай тӗлӗнмелле! Лаши епле хытӑ чупать! Пуканийӗ тӑрантасӗ ҫинче ларса пырать!

Акӑ лаша чарӑнчӗ, Машук ӑна хуса ҫитрӗ.

— Тӑхта-ха, лаша тус, тек ан чуп, эпӗ пуканине лайӑххӑн курам-ха,—тет Машук, пуканине тӑрантас ҫинчен илсе.

— Атте, пӑх-ха, мӗнле чипер пукани!

— Ку теттесем сан кӑмӑлна кайрӗҫ пулсан, хӗрӗм, эпӗ питӗ савӑнатӑп. Улӗмрен сана валли пасартан татах теттесем илсе килӗп. Выля-ха, эппин, эсӗ, эпӗ картишне тухса ҫӳрем,—терӗ те ашшӗ пӳртрен тухса кайрӗ. Машук хӑйне ашшӗ татах теттесем илсе пама пулнишӗн пушшех те хӗпӗртерӗ. Вӑл ашшӗ илсе панӑ ҫӗнӗ теттесемпе сасӑпах калаҫма пуҫларӗ:

— Чӑнах та ку пукани пӗрре те Паруҫҫи пек мар, илемлӗ. Кӗпи те пурҫӑн. Ҫӳҫӗ сап-сарӑ, пуҫне хӗрлӗ лентӑпа ҫыхнӑ. Питӗ кӑмӑла каять ку ҫӗнӗ

пукане мана. Юрататăп. Кӳр, куçунтан чуптăва акă çапла: чуп!.. ч-чуп!..

Машук пĕр вăхăт хушши ним чĕнмесĕр шутласа тăчĕ, унтан хăй тĕллĕн тем мăкăртатма пикенчĕ. —Чим-ха, ман Паруççи ăçта?—терĕ вăл сасăпах. Вăл Паруççи пукани патне чупса пычĕ. Икĕ пуканине юнашар тытса танлаштарчĕ.

— Çук, эпĕ сана тек юратмастăп; эсĕ, Паруççи, кивелнĕ. Ав, кай шăпăр шăтăкне!—терĕ те Паруççи пуканине кăмака хыçне шалах вăрр!.. ывăтса ячĕ. Çĕнĕ пуканине вара ыталаса ăшă сăмахсемпе ачашларĕ. Кăмăл киленичче юратнă хыççăн ăна лаша кӳлнĕ çатанлă тăрантас çине лартрĕ. Вара хăйĕн çĕнĕ пуканине юлташĕсене кăтартма урама туртса тухса кайрĕ.

* *

Кăмака хыçĕ. Йĕри-тавра тĕксĕм. Пĕр пĕчĕк кирпĕч татăкĕ çинче Паруççи пукани пуçне усса ларать. Вăл калама çук хурланнă. Хăй, тӳсейменнипе, ĕсĕклесех йĕрет.

„Эх, кампа выляс ĕнтĕ халь манăн? Машук тусăм манран сивĕнчĕ, мана кивелчĕ тесе тиркет. Халĕ унăн çĕнĕ пукани, тăрантас кӳлнĕ тетте лаша пур. Ах, кураймастăп-çке эпĕ вăл çĕнĕ пуканине: тăрантасĕ-лаши мĕнĕпех тĕртсе ярăттăм. Мĕн тăвас? Кам-ха ĕнтĕ мана каçсерен кровать çине çывăрма вырттарĕ? Кам мана ирсерен сĕтел хушшине лартса пылак сахăр катăкĕ парĕ? Юрататăп çав эпĕ пылак сахăра. Вăрманта пулакан аслă вăййя та кайса кураймарăм. Кичем, кичем, кичем...“—шухăшларĕ Паруççи пукани. Вăл тата ытларах хурланчĕ, куççуль тумламĕсем хăйсемех шăпăртатса юхма тытăнчĕç. Паруççи пукани чăтаймарĕ, çĕнĕ пуканине ылханса сасăпах ӳлесе йĕме пуçларĕ.

Паруççи пукани кăмака хыçĕнче йĕрсе ларнă вăхăтра вăтă шăши хăйĕн шăтăкĕнчен Чичик ятлă пĕчĕк хĕрĕ валли тутлă çимĕç шырама тухрĕ. Вăл унта-кунта чупса çӳрерĕ, тулă пĕрчи, сĕлĕ пĕрчи тĕлпулчĕ. Вĕсене вăл пухмарĕ, тен, пĕр татăк çуллă сысна ашĕ тупăп, терĕ. Çавăнпа та йăпăртатса малаллах чупрĕ. Чупрĕ-чупрĕ те хайхи шăши тус, Машуксен урайне пырса тухрĕ. Сак айĕнче каяллалла-маялла чупса çӳрерĕ. Акă пĕр мăйăр вырта парать. Вăтă шăши сарă тутă мăйăра кăлтăр-кăлтăр кустаркаларĕ.

— Чиук-чиук!.. чĕриклетсе илчĕ шăши савăннипе.—Ку сарă тутă мăйăр Чичик хĕрĕм валли питĕ те селĕм кучченеç пулать. Вăл савăнĕ, киленичче вылĕ, унтан шăлт кăна катса çисе ярĕ. Макăрашма та пăрахĕ.

Вăтă шăши сарă тутă мăйăра çăварне хыпрĕ те йăпăр-йăпăр йăпăртатрĕ йăвинелле, кăмака хыç сукмакĕпе. Чупса пынă май вăтă шăшин хăлхисем темле сасса илтрĕç. „Тем тесен те шăшисен тăшманĕ кушак пулĕ ку“, терĕ хăй ăшĕнче.

Унтан, çăварĕнчи сарă мăйăрне урайне кăларса хучĕ те, кайри урисем çине чĕвен тăчĕ. Хăлхисене вĕлттин-вĕлттин вылятса тимлĕн итлерĕ.

— Ку пирĕн кушак тăшман мăрлатнă сасă мар, пачах урăхла сас-чӳ, чӳ-чӳ-рӳк!—чĕриклетрĕ шăши. Вăтă шăшин чунĕ лăштах пулчĕ. Чĕри те кăртлатса тапма пăрахрĕ. Вăл ерипен кăшт малалла йăпшăнса шурĕ те акă мĕн курчĕ: пĕр пĕчĕк кирпĕч катăкĕ çинче тухьяллă пукани ларать, хăй татăлсах йĕрет.

— Ку Паруççи пукани вĕт,—чӳ-чӳ-рӳк-чӳ-чӳ-рӳк! чĕриклетрĕ шăши.—Кайса каласам-ха, мĕн пулнă ăна.

— Ырă пукани тусăм, мĕншĕн каплах татăлса макăратăн?—терĕ вăл ăшшăн, унтан пуканине пуçĕнчен ачашларĕ. Кам кӳрентерчĕ? Каласам! Эпир, ырă шăшисем, пуканесене пулăшма яланах хатĕр, эпир пуканесене питĕ юрататпăр.

Паруççи пукани пуçне çĕклесе пăхрĕ те хăй умĕнче ытла та ырă шăши тăнине курах кайрĕ.

— Эсир, шăшисем, пуканесене чăнахах та юрататăр-и? Мĕнле ырă шăши эсĕ,—терĕ Паруççи, ассăн сывласа илсе.—Хуйхăм ытла та пысăк çав манăн, шăши тусăм. Эсĕ нимĕнпе те пулăшма пултараймăн.

— Ак тамаша... Кам илсе килчĕ саншăн кун пек инкек-синкеке?—ыйтрĕ шăши татах.

Вара Паруççи пукани ăна хăйĕн хуйхи-суйхине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ. Калав вĕçне çитнĕçемĕн Паруççи пукани пушшех хурланса йĕме пуçларĕ.

Вăтă шăши тус Паруççи пукани калавне итленĕ май çапла шутларĕ: „Манăн Чичик хĕрĕм питĕ юнсăркка, яланах макăрашать, ниме те килĕштермест, ниме те юратмасть. Çакă пуканине киле илсе кайсан, питĕ лайăх пулĕччĕ. Чичик пуканепе вылĕ, макăрма та пăрахĕ. Вара хам ним пăшăрханмасăр апат-çимĕç пухăп. Йăпатам-ха эп ăна пăртак...“

— Паруççи пукани тусăм,—терĕ вăтă шăши ачашсасăпа,—ан макăр, ан кулян. Машук выляма пăрахрĕ пулсан, санăн юлташусем татах пур. Санпа акă Чичик те питĕ туслăн выляма пултарать.

— Чичик! Мĕнле Чичик?—ыйтрĕ тĕлĕнсе пукани.—Халиччен кун пек ятлă хĕрача пачах та илтмен эпĕ.

— Вăл хĕрача мар. Вăл питĕ аслă пĕчĕк шăши,—терĕ вăтă шăши тус мухтанчăк сасăпа.—Вăл манăн хĕр, пĕчĕк шăши Чичик. Чӳ-чӳ-рӳк! Чӳ-чӳ-рӳ-рӳк!

— Халиччен эпĕ шăши хĕрĕпе нихăçан та выляса курман. Кулăшла та ку!—ахăлтатса кулса ячĕ Паруççи пукани.

— Çапла, Паруççи тусăм, ман пата пырсан, питĕ телейлĕ пулăн,—татах сăмах хушрĕ вăтă шăши. Вăл пуканене епле пулсан та хăйĕн килне илсе каясшăн пулчĕ.

Паруççи шухăша кайрĕ. Вăл татах сăмах хушрĕ:

— Санăн Чичик хĕрӳ хăйпе вылянисĕр пуçне ирсерен пылак сахăр татăкĕ парĕ-ши мана? Эпĕ питĕ сахăр юрататăп.

— Манăн Чичик хĕрĕм пĕчĕккĕ-ха. Ĕнчен эсĕ Чичикпе лайăх вылясан, ăна йăпатма пултарсан, сана хамах кашни кун сахăр катăкĕ парăп. Кунсăр пуçне, кашни кунах çуллă какай татăкĕ те çитерĕп,—терĕ шăши тус.

Паруççи пукани пăртак шутласа тăчĕ.

— Чăнах, кăмака хыçĕнче калама çук кичем. Калана пек, Чичике пăхма пырсан, телейлĕ пулăп. Пыратăп, шăши тус!—терĕ вăл.

Вăтă шăши калама çук савăнчĕ. Йăпăр-йăпăр йăпăртатса, паçăр хăварнă сарă тутă мăйăра кайса илчĕ. Пуканепе калаçса пыма ан чăрмантартăр тесе, вăл мăйăра хул айне хĕстерчĕ. Тепĕр аллипе Паруççи пуканене çавăтрĕ. Вара вĕсем шăкăлтатса калаçса тата юрă юрласа шăши сукмакĕпе шăтăкалла кайрĕç. Хыçра кăна, чупнă май, янкăс юрă тата Паруççи пуканин тенки-шӳлкеми чăнкăртатнă сасă илтĕнсе тăчĕ.

Чупрĕç-чупрĕç йӳплĕ-йӳплĕ çулпала вăтă шăши туспа Паруççи пукани, темиçе шăтăк витĕр те тухрĕç пулĕ.

— Авӑ, пукане тусӑм, манӑн килҫуртӑм курӑнать,— терӗ шӑши тус, аллине хӑйӗн ҫурчӗ еннелле тӗллесе.

— Ӑҫта? Курмастӑп-ҫке,— терӗ пукани унталла-кунталла пӑхкаласа, Машуксен пӳрчӗ евӗр ҫурт шыраса.

— Акӑ, ҫитрӗмӗр те. Кӗр ҫакӑ хапхаран,— терӗ ватӑ шӑши тус, уявсенче хӑнасене йышӑнакан пӳлӗм алӑкне уҫса. Паруҫҫи пукани лайӑххӑн сиссе те юлаймарӗ, вӗсем калама ҫук илемлӗ пӳрте кӗчӗҫ тӑчӗҫ. Паруҫҫи пукани тӗлӗннипе куҫне-пуҫне чарсах пӑрахрӗ.

— Ах! Пачах урӑхла килҫурт,— терӗ вӑл.— Эпӗ кун пек килҫурт нихӑҫан та курман. Пӑхӑр-ха, йӗри-тавра хаклӑ йышши пуставсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Урайӗнче мӗнле пустав ку сирӗн? Ытла та ҫемҫе. Утса пынӑ чух хур мамӑкӗ ҫине пуснӑ пекех туйӑнать.

— Пукане тусӑм, мӗн тӗлӗнмелли пур,— терӗ шӑши кӑшт мухтаннӑ сасӑпа.— Эпир, шӑшисем, хамӑр йӑвасене тӗплӗн, питӗ ҫемҫе япаласенчен тӑватпӑр. Эс кунта юрласа кӑна пурӑнӑн. Ак сана хам хӗрпе паллаштаратӑп.

Пуканепе ватӑ шӑши калаҫнӑ вӑхӑтра „чи-чӳ-рӳк, чи-чӳ-рӳк!“ тенӗ сасӑ илтӗнсе кайрӗ.

— Ак тамаша, эпӗ сана мансах кайнӑ. Паруҫҫи, кил-ха кунта. Акӑ манӑн Чичик хӗрӗм сӑпкара ларать.

— Ай-уй! Ытла та пӗчӗккӗ-ҫке ку!— кӑшкӑрса ячӗ Паруҫҫи, сӑпка патне чупса пырса.

— Чи-чӳ-рӳк! Чи-чук!— тесе илчӗ татах сӑпкара ларакан пӗчӗк шӑши.

— Ан макӑр, хӗрӗм, сана валли пукане илсе килтӗм.

— Чӳ-чӳ-чи-чӳрӳк!— тет пӗчӗк шӑши. Ку ӗнтӗ шӑши чӗлхипе: ай-уй, мӗнле паха пукане, тени пулать.

Шӑши хӗрӗ Чичик пуканене питӗ юратрӗ. Паруҫҫи пукани те савӑнчӗ. Вӑл, ҫийӗнчех сӑпка кантрине тытса, юрла-юрла Чичике сиктерме пикенчӗ. Шӑши хӗрӗ вара хӗпӗртесе каҫсах кайрӗ.

Вӑхӑт иртнӗҫемӗн иртрӗ. Пуканепе шӑши хӗрӗ калама ҫук туслӑ пурӑнаҫҫӗ. Шӑши хӗрӗ те нумай пысӑкланчӗ, хитреленчӗ. Ӗнтӗ вӗсем, йӑвара выляни-сӗр пуҫне, ытти ҫӗре те тухса ҫӳреҫҫӗ. Пӗррехинче вӗсем ыйхӑран ирех вӑранчӗҫ.

— Чичик, пӑх-ха тулалла, мӗнле хитре кун!— терӗ Паруҫҫи.

— Чӑнах, Паруҫҫи, хӗвел мӗнле илемлӗн хӑпарать.

— Ӑшӑ кун пулать. Айта, Чичик, выляма каятпӑр.

— Халех. Анне! Анне! Кӳр сана чуптӑвам. Эпир Паруҫҫипе выляма каятпӑр, эсӗ, аннем, ан пӑшӑрхан.

— Чипер ҫӳрӗр, хӗрӗм. Инкек-синкекрен сыхланӑр,— терӗ ватӑ шӑши, Чичикпе Паруҫҫине урама ӑсатса.

Акӑ Чичикпе Паруҫҫи шӑши ҫулӗсемпе ярӑнтарса чупаҫҫӗ. Ӑҫта кӑна ҫитмерӗҫ пулӗ вӗсем. Кӗлете сӗлӗ пӳлмине пырса тухрӗҫ. Чичик пӗр-ик сӗлӗ пӗрчи шӗкӗлчесе тутанса пӑхрӗ. Юнашарах ҫу арчи ларать. Чичик вара ҫӑва чунтан юратса чылайччен кӑтӑртаттарса хырчӗ. Вӑл Паруҫҫине те тутанса пӑхма сӗнчӗ. Вӑй илнӗ хыҫҫӑн вӗсем каллех выляма пуҫларӗҫ. Паруҫҫи чупать, Чичик хуса ҫитет, унтан иртсе каять. Вылянӑ май вӗсем хӑйсем те сисмерӗҫ, пӗр яка урайне пырса тухрӗҫ.

— Фу-у,— терӗ Паруҫҫи пуҫне сулкаласа.— Аранах ирӗке тухрӑмӑр. Пӑх-ха, Чичик, мӗнле аслӑ урай! Кунта ӗнтӗ выляма та ирӗк.



Ҫак вӑхӑтра Чичик йӑлт-ялт унталла-кунталла пӑхкаласа илчӗ те, урайӗнчен вӗлтинк! шӑтӑка кӗрсе тарчӗ. Шӑтӑкран вӑрттӑн кӑна сӑмсине кӑларса пӑхса тӑрать.

— Чичик, ӑҫта эсӗ?— тет Паруҫҫи йӗри-тавра пӑхкаласа.— Тух часрах. Мӗншӗн тартӑн?

— Тӑхта, Паруҫҫи. Эпӗ хӑратӑп.

— Мӗнрен?

— Манӑн ватӑ анне каланӑ тӑрӑх, кун пек ҫӗрте шӑшисен усал тӑшманӗ пурӑнать.

— Кам? Мӗнле тӑшман?

— Усиллӗ мӑр-мӑр кушак.

— Кушак?— ыйтрӗ тӗлӗнсе Паруҫҫи.— Кушак вӑл лайӑх тус, никама та тивмест. Унтан хӑрама та кирлӗ мар. Вӑл сан патна пырать те мӑр-мӑр юрӑ юрлать, хӳрине хуммӑн-хуммӑн авкаласах вылятать. Хӑй сӗртӗнкелесе вӗҫӗмсӗр ачашланать. Аллисемпе ҫемҫен лектеркелесе е тутӑр вӗҫӗпе, е ура пуҫӗпе вылять.

— Улталать вӑл! Вылять-вылять те вара, ҫӑварне хыпса ҫисе ярать.

— Калаҫатӑн ҫав кирлӗ мара. Кушак тӑшман пулма пӗлмест. Ак эсӗ ӑна хӑвах куратӑн.

Унтан Паруҫҫи кушака йыхӑрса пӑхрӗ. Кушакӗ ниҫта та ҫук.

— Кушак пӳртре ҫук, урама тухнӑ пулӗ. Кил, вылятпӑр!— татах тепӗр хут кӑчӑк туртса чӗнчӗ Паруҫҫи Чичике.

— Апла пулсан тухатӑп, у-ук! у-ук!— сиксе мекӗлчӗк хуҫма пуҫларӗ Чичик.

Чип-чипер вылянӑ хушӑра Паруҫҫи пукани сасартӑк лашаллӑ тӑрантаса курах кайрӗ. Паруҫҫи пукани ӑшне вутлӑ ҫиҫӗм кӗрсе кайнӑн туйӑнчӗ. Вӑл тарӑхса тӑрантас патне чупса пычӗ. Урапа ҫинче Машукӑн ҫӗнӗ пуканийӗ лара парать. Паруҫҫи пӗр сӑмах та чӗнме пултараймарӗ. Юрать леш, ҫӗнӗ пуканийӗ, Паруҫҫине курсан, ӑшшӑн сӑмах хушрӗ.

— Ах, Паруҫҫи тусӑм! Эсӗ-и ку? Ӑҫта ҫухалнӑ эсӗ? Эпир Машукпа сана ҫав тери шырарӑмӑр. Машук йӗрет. Вӑл сана пӑрахнӑшӑн хӑйне тем пек ӳпкелет.

Ку сăмахсене илтсен, Паруççин савăннипе чĕри йĕрĕлсех кайрĕ. Йăл кулса илчĕ те вăл çапла сăмах хушрĕ:

— Эпĕ хампа вылямa тепĕр тус тупрăм. Халĕ унпа вылямa тухрăмăр.

Килĕшӳллĕ сăмахсене илтнĕ хыççăн Чичик те йăпăртатса чупса пычĕ.

— Акă вăл манăн тусăм Чичик, паллашăр.

Машукăн çĕнĕ пуканийĕ, Чичике алран тытса, сывлăх сунчĕ те:

— Питĕ аван шăши хĕрĕ Чичик. Айтăр пурте пĕрле выляр. Манăн тăрантас пур. Ав, лаши те кӳлĕнсех тăрать.

— Мĕнле чаплă лаша! Чӳ-чӳ-рӳк, чӳ-чӳ-рӳк!— чĕриклетрĕ Чичик, лаша йĕри-тавра йăпăртатса çавăрăнса.—Пукане туссем, акă мĕн, эсир тăрантас тĕпне ларăр. Эпĕ ларчăк çине ларатăп. Катачи чупатпăр.

Паруççи пуканепе çĕнĕ пукане савăнсах тăрантас тĕпне майлашса ларчĕç, Чичик шăши ларкăç çине ларчĕ. „Ну-ну!" кăрт-карт турткаларĕ вăл тилхепине, унтан чăпăркилпе лашине хистесе илчĕ, лаши вара сиккипе малалла ыткăнчĕ. Тăрантасĕ кăлтăртатса çеç пычĕ. Икĕ пукане—икĕ тус. Юрласа савăнаççĕ пĕрле тетте тăрантас çинче.

Ма савăнас мар, ма юрлас мар: вĕсене паян шăши тус хăй ларкăç çине лартса катачи чуптарать.

Шăп çак вăхăтра кĕтмен çĕртен пӳрт алăкĕ уçăлчĕ те, кушак „мяу-ук!" тени илтĕнсе кайрĕ. Пĕчĕк хĕрача Машук урамран выляса таврăнать, иккен. Машукпа пĕрле алăкран уссиллĕ мăр-мăр кушак та кĕчĕ.

Вăтă шăши хĕрĕ Чичик алăк еннелле çаврăнса пăхрĕ те, усиллĕ мăр-мăр кушака курса: „ах!" тесе кăшкăрса ячĕ. Кушакăн куçĕсем вут пек çунса тăраççĕ. Чичик сехĕрленсе ӳкрĕ. Вăл куç хупса иличчен урайне тринк! кăна сикрĕ. Кушак çавăнтах Чичик шăши патнелле ыткăнчĕ, анчах ăна урисемпе меллĕ ярса тытаймарĕ курăнать, Чичик кушакури айĕнчен чупса тухса юнашарти шăтăкран анса кайрĕ. Вăл хăйĕн йăвине мĕн курса илтнине вăтă амăшне каласа пама вĕçтерчĕ.

Пĕчĕк Машук, хăйĕн тетте тăрантасĕ çинче икĕ пуканепе шăши ларнине курсан, савăнăçлăн кăшкăрса ячĕ.

— Ку манăн Паруççи пулас!—чупса пычĕ Машук тетте тăрантас патне. Вăл, Паруççи пуканине палласа илсе, чунтан савăнса ăшă сăмахсемпе калаçма пуçларĕ:

— Паруççи, Паруççи пукане, мĕнле тупăнма пĕлтĕн эсĕ? Хаваслантартăн та эсĕ мана, манăн санпа выляс килет. Питĕ юрататăп эпĕ сана. Эсĕ мана каçар, Паруççи. Кӳр, чуптăвам сана, акă çапла: „ч-чуп!.. ч-чуп!" Кӳр, аллусене чуптăвам: ч-чуп!.. ч-чуп!.. Эпĕ сире иксĕре те пĕр пекех юрататăп, иксĕре те тек нихăçан та кӳрентерместĕп. Эпĕ пĕтĕм теттесене: лашине, тăрантасне тата ыттисене те,— пурне те юрататăп, пуринпе те вылятăп.

Машук хăйĕн пуканисемпе нумайччен ăшшăн калаçрĕ, вĕсене ачашларĕ. Юлашкинчен вара икĕ пуканине те юнашар тетте тăрантас çине лартрĕ.

— Сире урама илсе тухатăп, юлташсене кăтартатăп,—терĕ вăл.—Но-но! Лаша тус! Чипертерех турткала пуканисене. Сулăнтарса ӳкерсе ан хăвар.

Вара Машук урама тухрĕ те юлташĕсене вылямa хăй патне чĕнчĕ. Урамра Машук хăйĕн юлташĕсемпе килленичченех вылярĕ. Каç пулас умĕн, Паруççи пуканипе çĕнĕ пуканине тăрантас çине лартса, лаша кӳлнĕ урапине киле туртса кĕчĕ. Паруççи пуканепе çĕнĕ пуканине пĕчĕк сĕтел хушшине лартса, Машук пĕрер кашăк пылак сахăр пачĕ, чей ĕçтерчĕ. Машук хăй те ашшĕ-амăшĕпе пĕрле сĕтел хушшине ларса каçхи апат турĕ. Апат çинĕ хыççăн пуканисене салтăнтарса вырăн çине вырттарчĕ, вĕсене чу-чуласа паппа тутарчĕ. Юлашкинчен, Машук амăшне чуптурĕ те, хăй те салтăнса вырăн çине выртрĕ. Тепĕр минутранах вăл тутлă ыйхăпа çывăрса кайрĕ.



АТĂЛ ÇИНЧЕ. М. С. Спиридонов художник ӳкерчĕкĕ.

# ТĂВАН ÇĔРШЫВШĂН ПАТТĂРРĂН ÇАПĂÇСА ПУÇНЕ ХУНĂ ПОЭТСЕН СĂВВИСЕМ

*АНДРЕЙ ПЕТТОКИ*

## Пирĕн пуç Буденный

*(„Çирĕм иккĕ“ поэмăран)*

Вутлă çарĕ эпĕр,
Вут пек Хĕрлĕ Çар,
Çил пек хыт çÿретпĕр—
Çил, пире ан чар!..

Алра çивчĕ шашка,
Тусăм—урхамах.
Эй, казак*), ан ашкăн,
Ан ĕрĕх, ухмах!..

Днепр шыв-и, Дон-и,
Чараймĕç—каçатпăр!
Пирĕн пуç Буденный,—
Хыççăн йăлт каятпăр.

Тапхăр шавлать, тапхăр
Ват юман çилпе.
Тăшмана таптатпăр—
Хыт тыт тилхепе!..

Пирĕн утсем ÿрĕк—
Çилпе тавлашаç!
Пирĕншĕн çул тÿрĕ—
Чармасть тĕттĕм каç.

Днепр шыв-и, Дон-и,
Чараймĕç—каçатпăр!
Пирĕн пуç Буденный—
Хыççăн харс каятпăр!..

Украина хирĕ—
Лаптăк такана.
Итле: çиле хирĕç
Юрлаç çакăнта!

Акă, çавра çилĕн
Вĕçет утлă çар;
Умра-хыçра вилĕм,—
Ан пăх!.. Яра пар!..

Хăв ывăннă-и, лашу-и,—
— Канма вăхăт мар!
— Кам унта? Буржуй-и?!
Айда, хăвалар!

* Граждан вăрçинче Хĕрлĕ Çара хирĕç çапăçнă белогвардеец—казак.

---

*Вл. БАРАЕВ*

## Ю р ă

Атьăр, лётчик пулар-и,
Хĕвел патне вĕçер-и?
Унăн ылттăн укине
Пĕрчĕн-пĕрчĕн суйлар-и!

Атьăр, лётчик пулар-и,
Уйăх патне вĕçер-и?
Уйăх патне вĕçер-и?
Унăн çутă сăн-питне
Пĕр чуптуса илер-и!

Атьăр, лётчик пулар-и,
Çăлтăр патне вĕçер-и?
Савнă сарă хĕрсене
Çăлтăр мăя иллер-и!

Атьăр, лётчик пулар-и,
Çĕр тавралла вĕçер-и?
Хамăр çĕршыв хăватне
Тĕнче умне çĕклер-и!

1938 ç.

---

*УСЛИ ЕАСЛЕЙĔ*

## Юрату

Хăна эп пултăм иртнĕ эрнере,
Юлташăм чĕнчĕ çĕнĕ хваттере.
Калатăп чăннипе: пулман хальччен
Нихçан та ÿсĕр ун чухнехи пек.
Эрехпе мар ÿсĕрĕлчĕ чĕрем,
Чĕрем ÿсĕрĕлчĕ урăххипе
Хисеплĕ çыннăн килĕнче.

Ун кĕçĕн хĕрĕ илчĕ тыткăна,
Вăл тĕлĕнтерчĕ хитрипе мана.
Пит-куçĕсем ытараймиччĕ ун,
Ăна пăхса йăпанчĕ манăн чун.
Сăмах чĕнмесĕрех пĕрне-пĕри
Ăнлантăмăр. Пулать пушшех вĕри
Ун пек чухне яш-кĕрĕмсен чĕри.

Çăл куçĕ пек тăп-тăра куççенче
Эп куртăм савнăç сачĕ ÿснине.
Пулассăм килчĕ шăпчăк ун чухне,
Юрлассăм килчĕ çав сад-пахчинче,
Юрассăм килчĕ унăн хуçине...
Çемçетрĕ сăвăç чĕрине пике,
Çынна халран яран эрех пекех.

## Çурхи садра

Пахча шур тутăрпа пĕркенчĕ, тейĕн—
Улмуççисем лараççĕ çеçкене;
Сад-пахчи мар, этемлĕхĕн телейĕ
Çапла илемленсе чечекленет.

Кунта халь кам телей çуккишĕн йĕрĕ?
Çисет-çке савнăç пирĕн питсенче!
Хĕрсем юрла-юрла тĕрлеççĕ тĕрĕ;
Хĕвел шевли вылять шур пир çинче.

Хĕрсен юррисенче—хаваслă çемĕ,
Кунçул кĕвви вĕсен юррисенче;
Халь çак телейлĕ пурнăçăн илемĕ
Эрешленет вĕсен тĕррисенче.

Эп те сăввăмсене паха тăвасшăн,
Çырасшăн чи хитре сăмахсемпе:
Сăввăмсенче хальхи çынсен хавасĕ
Вылятăр, теп, хĕвел шевлийĕ пек.

*КĔÇТЮК КОЛЬЦОВ*

# Савнă тусне кĕтсе илни

Серте татса çÿрет пикеçĕм,
Утать, итлет вăл тăп тăрса.
Куккук ирхи юрра пикенчĕ,
Сар кайăк ячĕ шăхăртса.

Тулли çаран кунçулшăн уçă,
Сукмак çине тухсассăнах,
Эс те уçса яратăн, тусăм,
Шăнкрав пек уçă сассуна.

Ахах пĕрчи пек сывлăм шывĕ
Мĕнчуль шурут çулçи çинче!
Пухса илесчĕ те пĕр ывăç,
Çакасчĕ кăкăр туллиех.

Кĕç аллуна тытатăн, хĕрĕм,
Сар пурçăн çипĕ, кĕмĕл йĕп;
Эс тĕрлекен чечеклĕ тĕрĕ
Асаматран та кăмăллă.

Сÿтетĕн эс сап-сарă пурçăн
Çăмхин сĕвем çипписене,
Тĕрлетĕн Сталинăн—çулпуçăн
Сăнне катан пирÿ çине.

Шап-шур çеçкеллĕ çĕмĕрт тĕмĕ
Çĕклет сан çамрăк кăмăлна.
Ак, чу! чĕтренчĕ тăрă пĕлĕт,
Шăвать хăватлă самолёт.

Ак, парашют та сарăлать,
Тÿрех вăл хĕр тĕлне анать.

— Аван-и, кĕтнĕ ырă кун?
— Эп çитрĕм, тусăм, аванах...

Вĕçевçĕ анчĕ те çĕре,
Чуптурĕ хыттăн сар хĕре.
1939 ç.

# Фронтра

Паттăрсем вутпала çулăм витĕр
Улăпсем пек утаççĕ паян.
Ман çĕршывăн юрри те, кĕвви те
Аслатиллĕн кĕрлет ян та ян.

Халлапри вуник пуçлă çĕлен пек,
Сăнсăр, ирсĕр, хăрушă, тискер,
Сан юнна шерпет евĕр ĕçесшĕн
Урнă йытă, фашист тенĕскер.

Вăл эсрел пек, вăл—выçлăх та хурлăх,
Вăл мур хирнĕн çÿрет таврара;
Чечекри хуласем, хирсем урлă
Тимĕр сăнчăр хурса хăварать.

Пит телейлĕ çуралнă-мĕн эпĕр—
Çав ылханлă йăха çĕмĕрме.
Мăшкăл витнĕ масар хатĕрлетпĕр
Пытармашкăн фашист ĕмĕрне.

Ирĕк илнĕ Октябрь ялавĕ
Çĕнтерÿллĕн вĕçет паян кун.
Çавăнпа та евитлĕн калатпăр:
— Сая каймĕ эпир тăкнă юн.

Юншăн—юн!
Ирсĕр вилĕмшĕн—вилĕм!
Вăй-хăват ÿсет, хурçă тĕрек.
Асра пирĕн çĕршывăмăр пилĕ:
Малалла, тăшмана çĕмĕрме!

---

*МАКСИМ ЯСТРАН*

# Сăвăçă

Кам итленĕ çулла,
Çап-çут çăлтăр ансан,
Шăпчăксем кĕмĕл саслăн
Юрра тăснине;
Кам сăнанă ир-ир
Кавир пек улăхра
Ахах пек тумламсем
Çуталса выртнине;

Кам тинкернĕ тата,
Çут хĕвел улăхсан,
Ун çутти пÿрт ăшне
Ыр сунса кĕнине—
Çавăн пек чух ирпе
Пирĕн сăвăç куллен
Эрешлет кăмăлпах
Чĕрери сăввине.

Ахах евĕр таса
Çутă ĕмĕтлĕ вăл;
Вăл кĕртет сăввине
Шăпчăксен юррине.
Çут хĕвел çуттинче
Вăл курать çĕршыва,
Ун хĕрÿ ăшшинче—
Аслă Сталин сăнне.

Çавăнпа, ирсерен,
Çут хĕвел тухнă чух,
Пахчари шăпчăксен
Юррине вăл илтсен,—
Ахах евĕр таса
Хăйĕн çут ĕмĕтне
Сывлăм пек шăрçалать
Сăвăри кĕввинче.

# Уйрăлу

Тек пĕрне-пĕри
Тĕл пулаймăпăр-и?—
Ална пар.
Эс кунтах юлан,
Эп каяп кунтан,—
Хам çулпа.

Аса илĕн эс
Ман куççен хĕмне
Пахчара;
Юрлăн эс каçпа
Шăпчăк пек саспа
Ман юрра.

Çăлтăр çуттипе,
Тинĕс çийĕпе
Çÿрĕн эс.
Лăпкĕç çăлтăрсем,—
Тинĕс хумĕсем
Чĕрÿне.

Тинĕс чапĕпе,
Çăлтăр чысĕпе
Ална пар.
Эс кунта юлан,
Эп каяп кунтан—
Хам çулпа.

---

# ЫРӐ ЯТ

Вӑрҫӑ ҫухатусӑр пулмасть...

Ӗмӗр-ӗмӗрне асран кайми аслӑ Ҫӗнтерӳ Кунӗнче эпир хамӑрӑн тунсӑхланӑ Тӑван ҫӗршывран инҫетре, тин сӳнсе шӑпланнӑ вӑрҫӑ хирӗнче, хаваслантӑмӑр-и, е, Мускав салютне илтсе, юратнӑ ҫулпуҫӑмӑрӑн ырӑ сӑмахӗсене тӑнласа, хамӑр хуласемпе ялсенче, килте хавхалантӑмӑр-и,—кирек ӑҫта пулсан та, ҫав кун, чуна ҫӗклентерсе тулли кӑмӑлпа савӑннӑ чух, вӑрҫӑра пуҫӗсене хунӑ тӑвансене, тусюлташсене ырӑ ятпа асӑнтӑмӑр. Тӑван ҫӗршывшӑн, аслӑ Ҫӗнтерӳшӗн ҫапӑҫса пурӑнӑҫӗсене панӑ паттӑрсен ырӑ ячӗ халӑх асӗнчен нихҫан та тухас ҫук.

Вӑрҫӑ ҫухатусӑр пулмасть. Чӑваш писателӗсемпе поэтсен йышӗнче те ҫухатусем пулчӗҫ. Аслӑ Ҫӗнтерӳ Кунӗ пайтах юлташсене вӑрҫӑран кӗтсе илеймерӗмӗр, хамӑр хушӑра паян вӗсене кураймастпӑр эпир. Анчах вӗсем хӑйсен сӑн-сӑпачӗпе яланах пирӗн умра тӑраҫҫӗ, вӗсен ӗҫӗсем халӑх асӗнче пурӑнаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ тивертнӗ сурансене юсаса ҫитерне май, ҫӗршывӑн аталанӑвне пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе малалла ҫитӗнтерсе пынӑ вӑхӑтра, ҫак ҫулсенчех, эпир, хамӑрӑн вилнӗ писательсемпе поэтсен илемлӗ произведенийӗсене пухса, уйрӑммӑн-уйрӑммӑн чаплӑ кӗнекесем пичетлесе кӑларасса шанатпӑр. Ҫав асӑннӑ чаплӑ кӗнекесем пулӗҫех. Халӗ кӗскен те пулин асӑнас килет юлташсене, асӑннӑ май, тивӗҫлӗ ырӑ сӑмах калас килет.

Хут пӗлекен чӑваш ҫыннисенчен кам вуламан-ши, тата халӗ те кам юратса вуламасть-ши пирӗн паллӑ писателӗн Данилов-Чалдунӑн илемлӗ калавӗсемпе повеҫӗсене? Вӑл, граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче Тайга вӑрманӗсенче совет партизанӗ пулса, Колчак ҫарне хирӗҫ кӗрешнӗ чӑтӑмлӑ ҫын, хӑйӗн произведенийӗсенче ҫапӑҫури совет паттӑрӗсене сӑнласа кӑтартса паратчӗ; унӑн литературӑри ӗҫӗсем совет ҫыннисене пултаруллӑ, хӑюллӑ пулма, Тӑван ҫӗршывшӑн парӑнса ӗҫлеме, ҫапӑҫма чӗнетчӗҫ. Вӗсем совет ҫамрӑкӗсене ленинла-сталинла воспитани парас пархатарлӑ ӗҫре хӑватлӑ вӑй пулса тӑчӗҫ. Тӳрех калас пулать: Данилов-Чалдун калавӗсене вуланӑ ҫамрӑк чӑваш ачисем вӑрҫӑра чух унӑн геройӗсене сахал мар асӑннӑ, хӑйсем те ҫавсем пекех, е тата ытларах хӗрӳллӗн ҫапӑҫма тӑрӑшнӑ. Ку—писатель ҫырнӑ сӑмахсен пысӑкран та пысӑк усӑлӑхӗ.

Нихҫан та манас ҫук эпир хастар чӗрелле Андрей Петтоки сӑваҫа. Пӗлмен ҫынна малтан курсан вӑл ҫӑмӑл кӑмӑллӑ пек туйӑнатчӗ. Анчах Петтоки—чӑн-чӑн совет гражданинӗ—питӗ тарӑн шухӑшлӑ, ӑслӑ ҫынччӗ. Вӑл, ҫӗнӗ пурӑнӑҫ социализм саманинче калама ҫук пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе ҫитӗннине кура, ӑна таса тӳйӑм-сисӗмсемпе туйса, чуна ҫӗклентерекен сӑвӑсем шӑрантаратчӗ. Унӑн „Ҫирӗм иккӗ" ятлӑ поэмине асӑнтарса хӑваратпӑр: вӑл Андрей Петтоки пысӑк ӗҫсене хӑюллӑн тытма пултарни ҫинчен калать.

Данилов-Чалдун тата Андрей Петтоки—чӑваш совет литературинче тахҫанах палӑрса ҫитнӗ ятсем. Вӗсем литературӑри вӑйлӑ кӗрешӳсенче, чӑн-чӑн большевикла тӗрӗслӗхпе пырса, питӗ ҫирӗп тӑчӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсен пултарулӑхӗ, ӗҫ-хӗлӗ халӑхӑн малта пыракан шухӑшӗсемпе пӗрле пулнӑ.

Талантлӑ ҫамрӑк писательсемпе поэтсен йышӗнчен Усли Ваҫлейӗ, Кӑтра Мишша, Владимир Бараев, Максим Ястран, Константин Кольцов вӑрҫӑран таврӑнаймарӗҫ. Тӑван ҫӗршывӑн телейӗшӗн паттӑррӑн ҫапӑҫса, вӑрҫӑ хирӗнче ҫамрӑк пуҫӗсене хунӑ вӗсем.

Халь асӑннӑ ҫамрӑксем пирӗн хушӑраччӗ. Шухӑшласан, вӗсем халь пирӗнпе пӗрле ҫуккине ӗненес те килмест. Нумай та пулмасть, 3—4 ҫул каяллах кӑна, хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ытарайми илемлӗ сарлака уйхирӗ ҫинчен, ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ заводсем ҫуралса тӗтӗм мӑкӑрлантарса ларни ҫинчен, ҫамрӑк яш-кӗрӗмсен, ваттисен, ача-пӑчасен савӑнӑҫӗ ҫинчен,—Сталинла Конституци хӗвелӗ айӗнче ырӑ курса ирӗккӗн, хавассӑн ӗҫлекен ҫынсем ҫинчен ӳссе ҫитӗнекен ҫыннӑн чӗререн тапса тӑракан вӑйӗсемпе юрӑ шӑрантаратчӗҫ; ҫӗршывӑмӑр пуянланса пынӑ пекех, литературӑпа искусство садне ҫӗнӗ йывӑҫсем лартса пуянлатас та капӑрлатас ӗҫе тӑрӑшса тытӑннӑччӗ вӗсем. Вӗсем ҫулран-ҫул, куллен-кун ӳссеҫитӗнсе пыратчӗҫ. Вӗсем хӑйсен ҫамрӑк пултарулӑхне пӗтӗмпех тӑван халӑха, харсӑррӑн ӗҫлесе хаваслӑн пурӑнакан ҫынсене парнеленӗ.

„Эп те сӑввӑмсене паха тӑвасшӑн,
Ҫырасшӑн чи хитре сӑмахсемпе:
Сӑввӑмсенче халӑхи ҫынсен хавасӗ
Вылятӑр, теп, хӗвел шевлийӗ пек".

(Усли Ваҫлейӗ—„Ҫурхи садра").

Вӗсем ҫуралнӑ ҫӗршыва тата унӑн пуянлӑхне чунтан-чӗререн юратнӑ. Акӑ, епле илемлӗн те ҫӗклентерӳллӗн янӑраҫҫӗ ун ҫинчен К. Кольцовӑн сӑввисем. (Кӑна К. Кольцов Хӗвеланӑҫ Белоруҫҫире, 1940 ҫулта ҫырнӑ).

...Сарӑ кайӑк евӗрлӗ юрлар-и,
Ӑмӑрткайӑк евӗрлӗ вӗҫер.
Сутҫанталӑк киленме пуҫларӗ;
Чечек сарӑлнӑ уҫланкӑ евӗр
Киленме пуҫларӗ пирӗн ҫӗр.

Кӗркунне ҫитет пулин те ҫепӗҫ.
Ав, куратӑн, хӗп-хӗрлех пилеш?
Ҫак сӑна курсассӑн темшӗн эпӗ
Асилетӗп час-часах киле,
Атӑла курассӑм ман килет...

Унта вӗҫ-хӗррисӗр илӗртеҫҫӗ
Хуравӑшӑн тарӑн кӳллисем.
Пӳрчӗсем ун: хӑнана кӗр, теҫҫӗ,
Ларсам, теҫҫӗ сарӑ саккисем,
Тутанса пӑх, теҫҫӗ сачӗсем.

Унта халӗ ешӗл катасемшӗн
Пин-пин тӗслӗ чечексем ҫунаҫ.
Сад тулли, юмах пек, этемсемшӗн
Улмуҫҫийӗн улмисем ташлаҫ,
Ҫулҫисем хаваслӑн ал ҫупаҫ.

(„*Лирикӑллӑ калаҫу*").

Вӗсем пирӗн ҫӗршывӑмӑр вӑйлӑран-вӑйлӑ, пуянтан-пуян пулса пырасси ҫинчен халӑха ӗнентерсе ӗмӗтленнӗ. Акӑ, Усли Ваҫлейӗ, палӑрса ҫитнӗ поэт, Атӑл ҫинчен ҫапла ҫырать:

Пилӗкҫуллӑх кӳлӗ-ха ӑна та,
Ун вӑйне те ямӑпӑр сая:
Темиҫе ҫӗршер пин киловатӑн
Атӑл тӑрӗ гигантла строя.

(„*Вилӗмсӗр ҫуркунне*").

Пирĕн поэтсем, пулас вăрçа сиссе, вăрçă умĕнхи çулсенче сахал мар витĕмлĕ сăвăсем çырчĕç. Тăван çĕршыва юратан пулсан—ăна тăшмансенчен сыхлас пулать. Ку шухăшсене Усли Васлейĕ хăйĕн асăннă поэминче питĕ аван каласа панă (1934 ç. çарта чух госпитальре çырнă).

Çĕршыв мухтавлă, пирĕн пурнăç савăк,
Илемĕ ун килет йăлт хамăртан.
Ĕçле, кĕреш, юрат, юрла та савăн—
Эпир пурнатпăр чаплă тапхăрта.

Вилес килмест халь çавăнпа никамăн,
Вилес килмест ман хамăн та халех.
Выртас килмест, час сываласчĕ манăн.
Çĕршывăма сыхласчĕ çирĕпрех.

1941 ç. Июнĕн 22-шĕ. Пирĕн поэтсенчен нумайĕшĕсем, аллисене пăшал тытса, нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçăва кĕреççĕ. Ун чух та вĕсем хăйсен тивĕçлĕ ĕçне манмаççĕ... Максим Ястран вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче „Паттăр Хĕрлĕ Çар" ятлă сăвă çырать. Хĕрлĕ Çар пултарулăхĕ, çĕнтерӳ ĕмĕчĕ янăрать ун сăввисенче.

Пирĕн ирĕклĕ, хаваслă,
Тулăх пурнăçа
Куç шăрçи пекех сыхлать вăл
Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Урăм-сурăм тăвăл витĕр
Пĕр хутчен çеç мар
Çĕнтерӳллĕн тухнă пирĕн
Паттăр Хĕрлĕ Çар·

Хурçă алсемпе çĕкленĕ
Хĕрлĕ ялава
Ӳкермен çĕре нихçан та,
Тухнă мухтава.

Паян кун та астăваççĕ:
Перекоп, Чон-гар...
Тăшмана хирĕç хастаррăн
Эпир тăнă кар!

Аслă Ленин, аслă Сталин
Пирĕн ĕмĕте
Хĕрлĕ Çалтăрпа çĕклерĕç
Çĕнĕ ĕмĕрте.

Вĕсен ячĕпе хĕрӳллĕн—
Пĕр хутчен çеç мар—
Тăшмана çапать хăватлăн
Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Ак, каллех тискер фашизм
Килчĕ тулхăрса...
Тĕп туса ăна аркатĕ
Паттăр Хĕрлĕ Çар.

Хурçă алсемпе çĕкленĕ
Хĕрлĕ ялава
Çĕнтерӳллĕн варкăштарĕ,
Тухĕ мухтава!

Çапла ĕмĕтленнĕ пирĕн поэтсем çĕнтерӳ пирĕн пулассине. Çапла халăха хавхалантарма пултарнă вĕсем аслă вăрçăра. Асăннă май, каласа хăварас пулать: вилнĕ поэтсем фонтра сахал мар çырнă, анчах эпир вĕсен произведенийĕсене йăлтах пухса çитерейме н-ха ку вăхăта. Вĕсене пĕтĕмĕшпех шыраса тупасси, пуçтарасси—пирĕн паянхипе малашнехи ĕç.

Писательсемпе поэтсем хăйсен илемлĕ произведенийĕсенче пулас вăрçа тăрăшса хатĕрленесси çинчен тата çав аслă вăрçăра юмахри пек паттăррăн çапăçасси çинчен каланă сăмахсем пĕр илемшĕн кăна калани пулмарĕç. Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансанах, пирĕн писательсем, яланхи пек совет халăхĕпе пĕрле пулса, хăйсен сăмахĕсемпе шухăшĕсене вутра пурăнăçлама фронта тухса кайрĕç. Вĕсен чĕрисенче çав тери тарăн патриотизм вĕресе тапса тăни, вĕсем çав тери хăюллăн, паттăррăн çапăçни, чăн хыпарсем тăрăх, халь паллă. Кĕскен каласан та, акă епле хăйсен пуçĕсене хунă иккен пирĕн юлташсем:

Чăвашсен паллă писателĕ Данилов-Чалдун, çар çулĕнчен тухнăскер, ывăлĕ вăрçăра тăшмансемпе çапăçса вилнине пĕлтернĕ хыпар илсен, савнă ывăлĕшĕн, çĕршыв асапĕшĕн нимĕçсене тавăрас кăмăлĕ хаярланса çитнипе, хăйне часрах фронта яма военкомран темиçе хут йăлăнса ыйтнă. Вара 1941 çултах хăй ирĕккĕн фронта тухса кайнă. Данилов-Чалдун вăрçăри çарта политук пулса çапăçнă. Темиçе хутчен вăл штыка-штык тăрса атакăна кĕнĕ. 1944 çулта Ленинград фронтĕнче ăна йывăр амантнă пулнă, ун хыççăн нумай пурăнайман—госпитальре вилнĕ.

Андрей Петтоки вăрçă пуçланнă çулнех Хĕрлĕ Çар ретне тăнă; 1943-мĕш çулта „Курск пĕккишĕн" (Курская дуга) вăйлă çапăçусем пуçлансан, вăл çав çапăçусенче (поэт ун чух рота командирĕ пулнă) хăйĕн салтакĕсене нимĕçсене хирĕç атакăна ертсе кĕнĕ чух, малта пырса, герой вилĕмĕпе вилнĕ.

Усли Васлейĕ 1941-мĕш çулта Украинăшăн çапăçнă кунсенче вăрçă хирĕнче пуçне хунă. Кăтра Мишша 1938-мĕш çулта, Институтран вĕренсе тухсанах, Хĕрлĕ Çара кайрĕ. 1941-мĕш çулта вăл нимĕçсен окруженине юлать, пăшалне пăрахмасăр партизансен отрядне пырса кĕрет те мĕн 1943-мăш çулччenex, Хĕрлĕ Çар Украинăна нимĕç оккупанчĕсенчен хăтарма тытăничченех, партизансемпе пĕрле тăшмана хирĕç çапăçать. 1943-мĕш çулта каллех Хĕрлĕ Çар ретне тăрать, 1944-мĕш çулта çуркунне Тарнополь тавраш ĕнчи çапăçура герой вилĕмĕпе вилет. Владислав Бараев—„Али-Паттăр" авторĕ, хăй те хăйĕн геройĕ пекех хăюллă та чăрсăрскер, Сталинград патĕнчи историллĕ вăйлă çапăçусенче миномёт батарейĕн командирĕ пулнă. Çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра пирĕн батарея çине нимĕçсем енчен мина вĕççе ӳкнĕ, командире вилмеллех амантнă. Вăл çапах ура çине сиксе тăнă, тăшмансене хирĕç пĕр чарăнми пеме кăшкăрса команда панă, анчах, вăйĕ чакса килнипе, урăх нихăçан тăрас çукла çĕр çине тĕшĕрĕлсе ӳкнĕ. Унăн юлашки сăмахĕ: „Поэт нихăçан та вилмест!" пулнă. Çапла геройла вилнĕ Владимир Бараев. Максим Ястран—çамрăк поэт. Вăл та Сталинград вăрçинче хĕрӳллĕ атакăра паттăррăн çапăçса пуçне хунă. Константин Кольцов—пысăк шанчăк паракан çамрăк поэтчĕ. Фронтра чухне вăл юлташĕсем хушшинче чи маттур, чи хăюллă боецсен шутĕнче тăнă. Ăна хăйĕн паттăрлăхне нумай кăтартнăшăн, унăн организаторла пултарулăхне кура, часах командир туса, старший лейтенант званине параççĕ. 1943-мĕш çулта çуркунне калама çук вăйлă, хаяр çапăçура йывăр амантнă хыççăн, вăл нумай та пурăнаймасть, çамрăклах ĕмĕрлехех куçне хупать.

Çапла, пирен писательсемпе сăвăçсем хăйсем юрра хунă ирĕк саманашăн, Тăван çĕршывшăн чăн-чăн патриотла хăюллăн çапăçса пуçĕсене хунă. Ку ĕнтĕ вĕсем питĕ тӳрĕ кăмăллă, таса чĕреллĕ çынсем пулнă иккене пĕлтерет, вĕсен раскаллă, пархатарлă

# ЮРĂ ĂСТИ

Утмăл çула яхăн ĕлĕкрех Тăвай районĕнчи Элпуçĕнче, пĕр хресчен çемьинче, арçын ача çуралнă. Çĕнĕ чун, пĕр енчен, ашшĕ-амăшне савăнтарнă, мĕншĕн тесен вăл пĕр ят çĕр хушса илме май панă, тепĕр енчен, вăл „ытлашши чун“ пулнă, мĕншĕн тесен Элшыв хĕрринчи сăрт çамкинче, темĕн пек тăрăшсан та, тăраниччен çимелĕх тыр-пул туса илме май пулман.

—„Кӳршĕ хĕрарăмĕсемпе хĕрĕсем урамра, пӳрт умĕнче чĕкеçсем пек чĕвĕлтетсе лараççĕ, тĕрĕ тĕрлеççĕ, кĕпе çĕлеççĕ, юмахлаççĕ, чуна кайса тивекен юрăсем юрлаççĕ. Эпĕ симĕс курăк çинче выртса çав калаçусемпе юрăсене итлетĕп. Калаçасса пурăнăç йывăрри çинчен калаçаççĕ, юррисем те хурлăхлă. Çав хурлăхлă юрăсем пĕчĕк ача чĕрине те хускататчĕç, тарăн шухăша яратчĕç. Эпĕ илтнĕ юрăсене пурне те вĕренме тăрăшаттăм. Хăшпĕрисене, илемлĕрех тухчăр тесе, хамах улăштарса пăхаттăм“—тесе аса илсе, каласа парать вăл халĕ хăйĕн çамрăклăхĕ çинчен.

Каярахпа, ялти шкулта вĕренме пуçласан, ача ялйыш юррисене итлес тесе, улаха та, туйсене те кайса курма тăрăшнă. Вара таврари вăрманта майăрта е кăмпара çӳренĕ чухне çав юрăсене хăйĕн шăнкăрав пек уçă та çамрăк сассипе шăрантарнă.



В. П. ВОРОБЬЕВ

Ача хăйĕн пĕлĕвне ӳстерме тăрăшнă, музыкăна вĕренесшĕн çуннă. Вăл музыкăна вĕренме пĕр-пĕр шкула кайса кĕме те шут тытнă, анчах ашшĕ-амăшĕ чухăн пулнă пирки унăн хулана кайса вĕренес шухăша пăрахмалла пулнă. Вара вăл Шăхасанта тин çеç уçăлнă учительсем хатĕрлекен второклассăй шкула кайса кĕрет.

Шăхасанти второклассăй шкултан вĕренсе тухнă хыççăн 16 çулхи çамрăк Çĕрпӳ вулăсĕнчи Пайкилтри пуçламĕш шкулта учитель пулса ĕçлеме тытăнать. Çамрăк çын, ашшĕ-амăшĕн çунатти айĕнчен тухса, тумхахлă пурăнăç çулĕ çине тăрать. Çапла пуçланнă Василий Петрович Воробьевăн—Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕн—пурăнăçĕ.

Элпуçĕнче вĕреннĕ чух та, Шăхасанта вĕревнĕ чух та шкулти хор ĕçне активлăн хутшăннă Воробьевăн халĕ ĕнтĕ, çамрăксене вулама-çырма вĕрентнисĕр пуçне, юрлаттарма та вĕрентмелле пулнă. Воробьев ертсе пынă Пайкилт хорĕ пĕтĕм Çĕрпӳ уездĕнче чи лайăх хорсенчен пĕри пулнă. Çавăн пекех çамрăк учитель вĕренӳ пахалăхне те манăçа хăварман: çичĕ çул хушшинче шкултан вĕренсе тухнă 92 ачаран 77 ача мухтав листи илнĕ.

Учитель пулса ĕçленĕ вăхăтра Воробьев юрăпа музыка çине ĕлĕкхи пек ачалла мар, тараннăн пăхма

---

пурăнăçĕ вăрçăран чĕрĕ сывă хăтăлса юлнисемшĕн, пирĕн çĕршыври çамрăк ăрушăн пысăк пример пулнине каласа парать.

Отечественнăй аслă вăрçă пирĕншĕн аслă çĕнтерӳпе вĕçленчĕ. Нумай хаклă юлташсем таврăнаймарĕç. Темле кĕтсен те килес çук ĕнтĕ вĕсем. Мĕн тăвăн—вăрçă çухатусăр пулмасть. „Тăпри çăмăл пултăр“—тетпĕр халь эпир, кашнин ятне аса илмессерен, халăх йăлипе, вĕсене сума суса.

Анчах хуйха-суйса парăнса мар аса илетпĕр эпир вĕсене. Çĕнтернĕ халăха хурлăх килĕшмест. Хĕрӳллĕ çапăçура аманнă чăн-чăн салтак хăйĕн суранĕ ыратнишĕн пăшăрханнинчен ытла тăшманне тата ытларах таврăрайманшăн тарăхать. Вилес умĕн вăл хăйĕн юлташĕсене хăйшĕн таврăрма сăмах хушса хăварать. Пирĕн вилнĕ сăвăçсен те, паттăр кĕрешнĕскерсен, юлашки ĕмĕчĕсем çаплах пулнă. Вĕсемшĕн эпир тăшмана нихăçан манмалла мар таврăтăмăр.

Пире хурлăх пусаймарĕ, пирĕн кăмăл çĕкленчĕ.

Вĕсем пурăнăçшăн çапăçнă, эпирех çĕнтерессе ĕненсе ĕмĕтленнĕ, вăрçă хыççăн каллех мирлĕ пурăнăçа малалла илсе пырасси çинчен, этеме нихăçанхинчен ытла телейлĕ тăвасси çинчен шухăшланă. Çеçпĕл Мишши хăй вăхăтĕнче ĕмĕтленнĕ пек ĕмĕтленнĕ вĕсем малашлăх çинчен. Эппин, вĕсен ĕмĕтне, хамăрăн çутă ĕмĕтсене, хăвăртрах пурăнăçласа пырас тесе, куллен-кун тăрăшса ĕçлер. Эппин, çĕнтерӳçĕ аслă халăха тивĕçлĕ илемлĕ произведенисем хамăр Тăван çĕршывра ытарма çук ырă, телейлĕ пурăнăç тăвакан çынсене ĕçре пулăшса пыччăр; халăхăн иртнĕ кунĕсене те, паянхи кунне те, пуласлăхне те тĕлĕнмелле аслă историшĕн ĕмĕрлĕх кĕнекесем çыранччăр; писательсем—вăрçăра пуçне хунисем те, чĕрĕ-сывă юлнисем те—халăх хушшинче кирек хăçан та ырă ятлă пулччăр.

*А. Алга.*

хăнăхса пырать. Вăл халăх юррисене çыра-çыра илет, хăй те юрăсем çырма хăтланса пăхать, çырнă юрăсене шкулти хора юрлаттарать, анчах та музыка искусствине, музыка теорине пачах та тенĕ пек пĕлменни ăна пысăк йывăрлăх кӳрет.

Хăйĕн пĕлĕвне ӳстерсе пырас шутпа, 1912 çулта Василий Петрович Шупашкара куçса килет те кунта пĕр хорăн регенчĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах вăл Шупашкарти шкулсенче музыка преподавателĕ пулса ĕçлет.

Анчах Шупашкарта та хăй тĕллĕн çине тăрса вĕреннипе чылай малалла кайнă Воробьев музыка искусстви тĕлĕшĕпе хăйне пулăшма пултаракан çынсене тупаймасть. Шупашкар купецĕсем, музыкăпа, уйрăмах чăваш халăхĕн юрри-сăввисемпе пачах та интересленмен. Вĕсемшĕн чăваш хушшинче йӳнĕ хакпа илнĕ тырăпа чăптана Атăл тăрăх Аçтăрхана ăсатса услам тăвасси çеç усăллă пулнă.

В. П. Воробьев музыка искусствине вĕренме хавхаланни усăсăр пулман: 1913 çулта вăл Питĕрти учительсемпе регентсем хатĕрлекен шкула кайса кĕрет те музыка теорине йĕркеллĕн вĕренме тытăнать. Питĕрте вĕреннĕ чухне вăл хăйĕн арчи тĕпĕнчен чăваш юрри-сăввисене çырса хунă тетрачĕсене кăларса вĕсене теори тĕлĕшĕнчен анализ туса пăхать; чăваш юрри-сăввисем шухăш тĕлĕшĕнчен мĕн тери тарăннине, музыка тĕлĕшĕнчен мĕн тери пуяннине татах та тепĕр хут курса ĕненет. Халăх юррисене тĕпчене май, вăл тата чăнлăха ăнланса илет: халăх юрăсем урлă хăйĕн йывăр кунçулне çеç каласа памасть иккен, юрăсемпе вăл хăйне кĕрешĕве çĕклентерет, этемлĕх ырлăхĕшĕн кĕрешĕве йыхăрать. Çакă вара чăвашсен музыка искусствине аталантарас тĕлĕшпе ĕçлеме, ăна çирĕп çул çине тăма хавхалантарать.

Курсран вĕренсе тухсанах вăл тăван халăх хушшине таврăнать те чăваш музыки тĕлĕшĕпе çине тăрсах ĕçлеме тытăнать: юрăсем çырать, халăх юррисене гармонизацилет. Хăй çырнă юрăсене хорпа юрлать, анчах Шупашкар мещенĕсемпе хуçасемшĕн мĕне кирлĕ пулнă-ха чăваш юрри? Мĕне кирлĕ пулнă-ха вĕсене халăх шухăш-кăмăлне сăнласа паракан юрă? Шупашкарти „культура“ учрежденийĕсенче: чиркӳсенче турă юрри юрланă, килте, ĕçкĕ-çикĕре, юрлама Вертинский репертуарĕ чухăнах пулман.

Питĕртен таврăннă хыççăн Василий Петрович шкул ачисене музыка искусствине вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлет, чăваш халăх юррисене ăста май килнĕ, унта çырса илет, халăх пуянлăхĕпе хăйĕн творчествинче усă курать. Анчах Россия халăхĕшĕн хурлăхлă кунсем пуçланни—Германи вăрçăпа килсе тапăнни—çамрăк композиторăн чĕрĕ çăлкуçне хавшатать: халăх репертуарĕнче салтак юрри çеç юлать, ытти тĕрлĕ юрăсене халăх вăхăтлăха манăçа хăварать.

Революци ĕçне Воробьев композитор хăйĕн хĕçпăшалĕпе хутшăнать. 1917 çулхи Майăн 1-мĕшне уявлама Василий Петрович Шупашкарти рабочисемпе салтаксенчен 150 çынран хор организацилет те çав кунхи демонстрацире вара çак хор революци юррисене юрласа парать. Каярахпа хор Октябрь кунĕсенче те, революциллĕ ытти праçниксенче те концертсем парать. Концертăн выступленийĕсене халăх кăмăллăн йышăнать.

Чăваш республики туса хунă хыççăн ку хора Шупашкарти шкулсенче вĕренекен чăваш ачисемпе хĕрĕсем хутшăнаççĕ, хорăн репертуарĕ те Ф. П. Павловпа В. П. Воробьев тата ыттисем те çырнă чăваш юррисемпе пуянланать. Çак хор ĕнтĕ малалла аталанса пырса государство хорĕ, унтан чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ пулса тăрать. В. П. Воробьев, Ф. П. Павловпа пĕрле, çак хор коллективне организациленĕ те вара 20 çул хушши—1940 çулччен,—унăн дирижĕрĕ тата художествăллă руководителĕ пулса ертсе пынă.

Воробьев хорпа пĕрле мĕнпур хура-шурра, мĕнпур савăнăçа тӳссе ирттернĕ. Унпа пĕрле вăл ялсене те, республика тулашне те, Совет Союзĕн столицине Мускава та кайса килнĕ.

Хора халăх юратнăçемĕн ытларах юратнă, вăл халăх хушшине чăваш юррине саракан тĕп вучах пулса тăнă, ытти хор коллективĕсем унран хорпа музыка культурине вĕренсе пынă.

1936 çулта, хор коллективĕ Мускаври Пĕтĕм Союзри хор олимпиадинче пулнă вăхăтра, хорăн пĕр концерчĕ Кремльте пулнă. Ку концерта итлеме халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин хăйĕн çывăх соратникĕсемпе пĕрле пынă. Çак çута куна хора ертсе пынă Василий Петрович халĕ те, чĕри варринче тытса, хумханса аса илет.

Воробьев пĕр самант та ĕççĕр ларман. Вăл заочно вĕренсе, тĕрлĕрен курссенче вĕренсе хăйĕн пĕлĕвне ӳстерет, обществăллă ĕçе активлăн хутшăнать: вăл чухăнсен комитечĕн председателĕ, 15 çул хушши местком председателĕ, Верховнăй судăн халăх заседателĕ, тĕрлĕ шкулсенче музыкăпа хор преподавателĕ пулса ĕçлет, шкулсенчи хор кружокĕсене ертсе пырать, кăçсерен вара юрăсем çырать.

Çапла вара вăл, халăхăн иртнĕ вăхăтри творчествипе Совет влаçĕ пулнă хыççăн аталанса пынă творчествипе усă курса, „Вăрман урлă каçрăмăр“, „Октябрь çулĕ“, „Килмен те курман Шупашкарне“, „Туçа хĕрсем, колхоз хĕрсем“ тата ыттисеве те çырать.

Воробьевăн мĕнпур творчестви халăх творчествипе çыхăнса тăрать. Унăн кирек хăш юррине илсе пăхсан та, унта халăх юррин илемлĕхĕ, халăх çеммипе халăх сăмахлăхĕн пуянлăхĕ янăрать.

Хĕрĕх çул ĕçленĕ хушăра Воробьев хор валли 150 юрă ытла çырнă, халăх юррисене 800 ытла çырса илнĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче композитор фашизма хирĕç хăйĕн хĕçпăшалне çĕклет. Ку вăхăтра вăл „Шурă кăвакарчăн“, „Сестра“, „Тĕп пултăр фашизм!“, „Пирĕн аттен çич ывăл“ тата ыттисене те çырать. Хăйĕн туллин янăракан юррисемпе вăл халăха фашизма хирĕç паттăррăн çапăçма, тăшмана çĕнтерес тесе фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлеме чĕнет.

* * *

Улаха тухатăн-и, мăйăр вăхăтĕнче вăрмана каятăн-и, кăçсерен урама тухатăн-и, колхоз хĕрĕсем ĕçленĕ çĕре хире е улăха, итем çине е пахчана пыратăн-и—пур çĕрте те хавасла та илемлĕ юрă шăранать. Çак юрăсен авторĕсем—Совет влаçĕ вăхăтĕнче çитĕннĕ чăваш композиторĕсем. Вĕсем хушшинче Василий Петрович Воробьев паллă вырăн йышăнса тăрать.

*Н. Степанов.*

# Ф. П. ПАВЛОВĂН ХАЛИЧЧЕН ПИЧЕТЛЕНМЕН СĂВВИСЕМ

1946 çулхи июнь уйăхĕнче чăвашсен паллă композиторĕ, талантлă драматургĕ Ф. П. Павлов вилнĕренпе 15 çул тултарчĕ.

Ф. П. Павлов пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ пулнă. Тăван халăх асĕнче вăл чаплă музыкант, композитор, драматург, педагог пулса юлнă. Анчах унăн таланчĕ кунпа кăна çырлахман.

Нумай пулмасть чăвашсен наукăпа тĕпчев институтне Тутар республикинчен пĕр алçыру тетрачĕ илсе килчĕç. Вăл тетрадьре 1910—1913 çулсенче Ф. П. Павлов хăй аллипе çырнă сăвăсем. Çапла вара Ф. П. Павлов Чĕмпĕрти (Ульяновскри) чăваш шкулĕнче вĕреннĕ тата вĕрентнĕ чухне сăвăсем те чылай çырнă.

Тетрадьре пурĕ 30 сăвă, вĕсенчен 4 сăввине чăвашла, ыттисене вырăсла çырнă. Тетрачĕн малтанхи страници çине автор хăй аллипе çапла çырса хунă:

„*Памятник моей юности*
*учитель пения Симбирской*
*чувашской учительской школы*
*Ф. Павлов.*

Симбирск. 1913, август 23."

Кунта эпир вулакансене асăннă тетрадьри чăвашла сăввисемпе паллаштаратпăр. Калас пулать, „Экспромт" тенĕ сăвăри пек юрату çинчен тунсăхласа çырнă лирикăллă сăввисем вырăсла çырнисем хушшинче те сахал мар. Вĕсем аворăн хăватлă шухăшкăмăлĕ ун чухнехи пурăнăçпа çырлахса тăрайманни çинчен калаççĕ.

Тепĕр сăвви—халăхшăн паллă „Вĕлле хурчĕ" юррăн сăмахĕсем. Ку сăвва, ăна кирек кам та пĕлнине асра тытса, эпир пичетлеместпĕр, анчах сăмах майăн çакна каласа хăварасшăн: хăшпĕр композиторсем вăл юрă Ф. П. Павловăн мар, тесе калама хăйнă. Халĕ, хăй аллипе çырнă çав сăвва тупни унăн авторĕ кам пулнă пирки нимĕнле иккĕленӳ те хăвармасть.

Кунта пичетленекен виççĕмĕш сăвви пысăк. Ку сăвăра автор хăйĕн чун-чĕри вăрканипе ăшĕ çунни çинчен мар калать, поэт хăйĕн творчествипе çав вăхăтри йывăр пурăнăç патне, социаллă ыйтусем патне пынине пĕлтерет. Ку сăвăра тата М. Ф. Федоровăн „Арçури" поэмин влиянийĕ палăрнă пек туйăнать.

Ф. П. Павловăн халь тупăннă тетрачĕ Тутар республикинчи Раккасси ялĕнче, Игнатьев (Зайцев) килĕнче упранса тăнă, теççĕ. Халĕ вăл тетрадь наукăпа тĕпчев институчĕн алçыру фондĕнче упранать.

***И. САЛАМБЕК.***

1

„Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр—

Куç-пуç çуталать,
Çӳхе тути йăл кулать,
Яштак пилĕк авăнать,
Чăмăр кăкри хумханать...

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр—

Маншăн куçĕ çутăлмасть,
Çӳхе тути йăл кулмасть,
Яштак пилĕк авăнмасть,
Чăмăр кăкри хумханмасть...

Шет хитре хĕр,
Шет ырă хĕр—

Ман еннелле çаврăнмасть,
Ылттăн пуçне каçăртать,
Мăн кăмăлне палăртать—
Ман чĕрене çунтарать..."

2

„Савнă хĕр,
Хитре хĕр!

Юрататăн пулсассăн,
Итле—купăс мĕн калать...
„Санăн çут илемĕшĕн
„Манăн шухăш пăтранать,
„Эпĕ сана курсассăн
„Хĕвел тухнăн туйăнать..."

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!

Юрататăн пулсассăн,
Итле—купăс мĕн калать...
„Эсĕ куçран пăхсассăн,
„Манăн чĕре çĕкленет,
„Эсĕ сăмах хушсассăн,
„Манăн чунăм çĕкленет..."

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!

Юрататăн пулсассăн,
Итле—купăс мĕн калать...
„Сана чунтан юратса
„Ыталаса макрăттăм,
„Çана пăхса, савăнса
„Ĕмĕр санпа пурнăттăм..."

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!

Юрататăн пулсассăн,
Итле—купăс мĕн калать...
„Ытарайман пиркипе
„Ыталаса йĕрĕттĕм,
„Сана пăхса, савăнса
„Санпа кăна пурнăттăм..."

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!

Эсĕ мана те саван,
Ăна купăс каламасть...

Симбирск, 1912 г. „Лето"

# ЙĂСĂРККА

Кутсăр-пуççăр çил-тăман
Çавра çил пек çаврăнса,
Тĕнче тăрăх кустарать.
Арçури пек ахăрса,
Пин шăпăрпа шăлнă пек
Шурă юра вĕçтерсе,
Çил улать те шăхăрать.
Çĕрпе уйăх хушшинче
Вĕри çĕлен пек ярăнса,
Çуркуннехи авăрти
Пăрлă шыв пек пăтранса,
Хулăм тискер пĕлĕт чупать.
Курăнми уйăх çуттипе
Вут та кăвар хĕмĕ пек
Юр сирпĕнни палăрать.
Çавар уçма, сывлама
Нимле май çук: юр кĕрет,
Вĕрсе, сурса лартнă пек
Куç лапашки питĕрнет.
Шăнса кайнă ал-ура
Вăпăр карчăк тытнă пек
Хытса каять, тапранмасть.
Темĕн ывтса ярас пек
Çилĕ вĕрет уласа,
Вăл чавăхса çитнипе
Пĕлми пулса çуран çын
Кайса ӳкет кĕрт çине.
Çав вăхăтрах йăсăркка
Шыв хĕрринчи патака
Хăйăр хывса кайнă пек
Çынна пытарса каять...
Уй варринче пĕр çуна
Пырать путса, чӳхенсе.
Лаши тăрăх тар юхать,
Тарпа хутăш шыв юхать.
Лаши, ывăнни палах,
Хуллен çемçе кĕрт çинче
Аран пырать хашлатса.
Тăлăп çухи тăратнă,
Ларса пырать хуçийĕ.
Юрă юрлать, кăшкăрать,
Çил-тăманпа ятлаçать.
Чăпăрккапа лашине
Тиверткелет хушăран.
— „Уй, уй урлă каçрăмăр та
Ыраш хăмăл çуттипе,
Вăрман витĕр тухрăмăр та
Вĕрене çулçи çуттипе,
Хăта пуç кукши çуттипе...“ —
Тесе юрлать кăшкăрса.
—„Манăн мĕншĕн кулянас
Маттур лаша пур çинчен,
Çил йăсăркка пулсан та
Çавах киле çитĕпĕр...
Эй, халь, атте лаши!..
Аяр—аяр—аяра!..
Кам чĕмери хушнă-ши
Тăман витĕр çӳреме
Уй варринче ку çынна?
Çитменнине çурçĕр халь..
Ырра сисмен пулĕ вăл—
Усал сывлăш астарса
Хăваласа кăларнă пуль,
Уйра çул йĕр çук çĕрте
Аташтарса çӳретме,
Унтан шăнтса вĕлерме..
Кутсăр-пуççăр çил-тăман
Тĕнче тăрăх кустарать,
Пин шăпăрпа шăлнă пек
Шурă юра вĕçтерсе,
Çил улать те шăхăрать.
Пĕр-пĕринпе хутăшса,
Хулăн пĕлĕт çаврăнать,
Курăнми уйăх çуттипе
Вутпа кăвар хĕмĕ пек
Юр сирпĕнни палăрать...“



Совет Союзĕн Геройĕ Габайдуллин çапăçура. Л. Осинский художник ӳкерчĕкĕ.

# ЛЕОНИД АГАКОВĂН ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ВĂХĂТĔНЧИ ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ

Леонид Агаков. „Çапăçу хирĕнче". Калавсем. Чăвашгосиздат—1944, 138 стр. „Тăван юншăн" (Партизан Мурат). Повесть. Чăвашгосиздат—1943, 145 стр. „Вилĕмрен те вăйлăрах". Повесть. „Тăван Атăл", № 21—22.

Отечественнăй аслă вăрçăра пĕтĕм совет литератури, çав шутра чăваш литератури те, нихăçанхинчен пысăк тĕрĕслӳ витĕр тухрĕ. Нумай писательсем, тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе тивĕçлĕхĕшĕн фронтсенче çапăçса, хăйсен произведенийĕсене час-часах артиллери кĕмсĕртетнĕ хушăра, шăхăрса вĕçекен пульăсен айĕнче çырнă. Теприсем, фронта мĕн кирлине пурне те çитерессишĕн ырми-канми ĕçлекенсем хушшинче пулса, вĕсем пекех паттăрла ĕçсем тунă. Пирĕн литература чи хăрушă тăшмана çĕнтермешкĕн, ăна хирĕç хăрамасăр çапăçма, пулса иртекен событисене тарăн ăнланса илме халăха пулăшса пынă.

Леонид Агаков Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче вăрçă çинчен çырса кăтартас тĕлĕшпе чăваш писателĕсем хушшинче пирвайхи вырăнта тăрать. Калавĕсемпе повеçĕсене вăл вăрçă хирĕсенче чухне çырнă, унăн произведенийĕсем халăх хушшине хăвăртах йышлăн саралнă.

Леонид Агаков хăйĕн писатель сăн-сăпатне кăтартни нумай пулать. Ахальрен мар унăн творчествине шкулсенче те вĕренеççĕ. Отечественнăй аслă вăрçăччен вăл вăрçă тематикипе çырнă. Унăн „Танкист калавĕ," „Разведчик Джунгали", „Пулемётчик юрлать" т. ыт. калавсем пичетленсе тухнă. Халь пăхса тухма илнĕ произведенисем Леонид Агаков творчествин малалли аталанăвне кăтартмалла ĕнтĕ. Çавăнпа эпир Агаковăн вăрçă вăхăтĕнче çырнă произведенийĕсене тĕплĕн пăхса тухасси паха ĕç пулса тăмалла, тесе шутлатпăр.

Агаковăн произведенийĕсенче пуринче те пĕр хăватлă шухăш: фашистла Германие хирĕç пынă вăрçă —пĕтĕм Совет халăхĕн аслă вăрçи пулса тăни, совет çынни хăйĕн пурăнăçне, вăйне, хастарлăхне, пĕлӳлĕхне хаяр тăшмана çĕмĕрсе тăкас тĕллеве пăхăнтарни. Çакна Агаков Хĕрлĕ Çар офицерĕсемпе салтакĕсен, партизансен, тăшман пусмăрĕ айне пулнă совет çыннисен паттăрла ĕçĕсем урлă кăтартса парать. Автор иртнĕ вăрçăн характерне çеç мар, вăрçăри çапăçусене, вĕсен картинисене те пысăк ăсталăхпа кăтартма пĕлет.

Тĕслĕхрен, „Амăшĕн сăмахĕ" калав пуçламĕшĕнче наступлени епле сарăлса пынине кĕскен, анчах манмалла мар сăнласа панă. Батальон çурхи чарусăр шыв юххи пек, ниçта тытăнмасăр, ял хыççăн яла тăшмансенчен тасатса пырать. Кунта авторпа пĕрле вулакана хăйне те, наступлени тăвакан батальон хыççăн васкаса, сывлăш çавăрмасăр малалла кайнă пек туйăнать. Çавăн пекех, „Лăпкă çын" ятлă калава вуланă чухне, батальон наступлени тунине хăвăн куçусем умĕнче пулса иртекен çапăçу пекех куратăн. Çирĕм çулхи капитанпа пĕрле эпир çапăçу епле сарăлса пынине, тӳртен касакан вут айĕнче ротăн çĕр çумне çыпăçса выртма килсе тухнине, çав хушăра салтаксенчен тахăшĕ нимрен хăрамасăр нимĕçсен дзочĕ патнелле шуса пынине хамăр куç умĕнче пекех куратпăр. Вут вăйланчĕ, ун айĕпе йăпшăнса шăвакан салтакшăн пăшăрханнипе пирĕн чĕре хытăрах тапма пуçлать; акă салтак тапранми пулчĕ, вăл вилчĕ тесе чĕре хĕсĕнсе илет, çук, вăл вилмен, вăл виленçи пулса хăй çинчен вутта сиртересшĕн пулнă, халь вăл малалла каять. Кам ку? Ку патриот камне эпир те, капитан та, полковник та, генерал та пĕлесшĕн. Пĕлместпĕр. Юлашкинчен, пирĕн наступленинс чăрмантарса тăнă дзота патриот сывлăшалла сирпĕнтерсе ярать. Е тата сержант Акатов, Сибирь çынни, хăйĕн тусĕпе, Быстров хушаматлă ефрейторпа, разведкăра çӳрени çинчен, каялла килме тухсан пирĕннисем çине налёт тума каякан 25 фрицран 19-шне пĕтерсе тăкни çинчен çырнисем т. ыт. те совет çыннисен геройла ĕçĕсене нихăçан манмалла мар кăтартса тăраççĕ.

Агаков пирĕн боецсем (ку шута эпир рядовойран пуçласа генералсене çитиччченех кĕртетпĕр)—Совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕсем епле паттăр çапăçнине, çав хушăрах вĕсем мĕн тери ырă чунлă иккенне ĕнентерӳллĕн сăнласа кăтартать.

Тăшмана кунĕн-çĕрĕн ырми-канми хăваласа пынă хыççăн, Илья Бичурин батальонĕ шыв хĕрринче канма приказ илет. Батальон вăрманта каннă вăхăтра, çывăрма пĕлмен комбат хăйсем патне ача ыталаса çĕкленĕ ватă хĕрарăм килнине курать. Хĕрарăм шыв леш енчи ялта нимĕçсем халăха аркатнивĕлерни çинчен каласа парать; акă, хăйĕн аллинчи ачине те тăшмансем вĕлернĕ. Командир батальона „в ружье" команда парса çĕклет, анчах çавăнтах ларма хушать те халь килнĕ хĕрарăма сăмах парать. Хăйсемпе юнашарах нимĕçсем совет çыннисене вĕлерни çинчен илтсен, салтаксем чăтаймаççĕ:

— Ма ларатпăр кунта?

— Эпĕ текех тӳссе тăраймастăп!

— Атьăр часрах малалла!

Çĕкленнĕ батальон шыв леш енчи ял халăхне пусмăрпа мăшкăлран хăтарать, нимĕçсен гарнизонне пĕр çын юлмиччен тураса тăкать, наступлени çĕнĕ вăйпа малалла каять. „Хăлхара яланах вăрманта тĕлпулнă ватă хĕрарăмăн сăмахĕсем янăрарĕç:

— Васкăр, ывăлăмсем... Хăтарăр хамăр çынсене, вĕсем сире кĕтеççĕ..."

Пĕр 19 çулхи лейтенант („Салтак чунĕ" калавра) атакăна каяс умĕн кашниччех хăйĕн савнă хĕрĕн—Наташăн—фотокарточки çине пăхса илнĕ. Пĕринче вăл взводпа окруженине лекнĕ, йывăр çапăçура взводра ултă çын çеç тăрса юлнă, юлашки минутсем çывăхарнă. „Неуштă ăна курмасăрах вилес пулать? Йăпăрт кăна гимнастерка кĕсъинчен унăн карточкине туртса кăларса пăхрăм. Унăн куçĕсем ман çине кӳренӳллĕн пăхнă пек туйăнчĕç... „Ваня, парăнатăн и вара?"—тенĕ пек курăнса кайрĕ мана". Çакăн хыççăн, юлашки вăя пухса, пĕчĕк ушкăн нимĕçсен тимĕр ункине татса тухать.

Ватă майор каласа панă тăрăх („Салтак чунĕ"), вăйлă çапăçу вăхăтĕнче, çапăçу хирĕ урлă, тăшман

енчен батальон позицийĕ патнелле икĕ ачаллă хĕрарăм пынă. Хĕрарăм васканă, ун çине нимĕçсем пеме тытăннă. Çавна куракан батальон командирĕ те, унпа пĕрле ытти салтаксем те, хĕрарăмпа ачасен пурăнăçне çăлас тесе, çумăр пек çăвакан пульăсен айĕнчех çĕкленсе, пысăк çĕнтерӳ тунă.

Паçăр эпир пĕр паллă мар салтак нимĕç дзотне сирпĕнтерсе янине курнăччĕ. Кайран ăна палласа илеççĕ. Вăл—Куракин, хĕрĕхсенчен иртнĕскер, колхозри конюх ĕçĕнчен çапăçу хирне килсе, аманнă хыççăн обозра çӳренĕ. Куракин тӳрĕ кăмăлпа тирпейлĕ ĕçленине, мĕн тумаллине приказсăрах туса пынине полковник те, генерал та пĕлсе тăнă. Хисеплесе ăна час-часах „Иван Васильевич" тесе чĕннĕ. Пĕр наступлени умĕн вăл хăйне ротăна яма йăлăнать, комбат ярасшăн мар; юлашкинчен, çак наступлени вăхăтне çеç ротăна яма килĕшет. Куракин пĕтĕм чаçе малалла кайма чăрмантаракан нимĕçсен дзотне хупласа хурать. Çак геройла ĕçе вăл хăйĕн пĕчĕк хĕрĕнчен çыру илнĕ хыççăн тăвать. Нимĕçсене пула тăлăха тăрса юлнă пĕчĕк Клава ашшĕне: „Савнă атте, эсĕ халь нимĕçсене пирĕн аннешĕн те, Юркăшăн та, Машăшăн та хыттăн тавăр"—тесе çырнă.

Çапла Леонид Агаков вулакансене чи çивĕч лару-тăрупа, чĕрене хумхантаракан тĕлпулусемпе çыхăнакан событисем патне илсе каять те, совет çыннисем тĕлĕнмелле паттăр ĕçсене хăйсен тăванĕсен пурăнăçĕшĕн, Совет çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн тунине кăтартать. Унăн геройĕсем, хăйсен чĕринче тăван халăхпа тăван çынсен кунçулĕсемшĕн, тăшмана курайманлăх çунса тăнине пула, хăйсене хĕрхенмесĕр çапăçаççĕ. Тăшмана курайманлăх ӳснипе пĕрле вĕсен çапăçури хастарлăхĕ ӳсет; тăван çĕршыва, тăван халăха, арăмĕсемпе ачисене, амăшĕсемпе йăмăкĕсене пусмăрлакан усал тăшмана тавăрасшăн çунни паттăр ĕçсем тума хастарлăх çуратать. Тăшмана курайманни ӳссе пыни çинчен, салтаксем тăшмана пĕтĕм чун вăйĕпе курайми пулмасăр çĕнтерме çуккине ăнланса илни çинчен Сталин юлташ вăрçăн малтанхи çулĕсенчех паллă туни—Леонид Агаковăн произведенийĕсем урлă пурăнăçра курăнать. Эпир вăрçăра, социализмлă строя пула, социализмлă çĕршыв çыннисем çĕнтернине пĕр минутлăха та манма пултараймастпăр. Çавăнпа, совет çыннин паттăрлăхĕпе геройлăхĕн хăйĕн ăшĕнчи, Совет çĕршывĕнче çеç аталанма пултарнă шалти, психологиллĕ никĕсĕсене тĕплĕнтерех кăтартасси пахаран та паха ĕç пулса тăмалла. Ку енĕпе автор хăйĕн ĕлĕкрех çырнă „Пулемётчик юрлать" калавĕнче кăшт нумайрах ĕçленĕччĕ.

„Вĕри чĕре", „Старик № 33", „Юрă пурĕпĕр янранă" калавсемпе „Вилĕмрен те вăйлăрах" тата „Тăван юншăн" повĕçсем тăшман пусмăрĕ айне пулнă совет çыннисен кĕрешĕвне кăтартаççĕ.

Произведенисенчи геройсен пурăнăçĕпе кĕрешĕвĕ урлă эпир этем сăпатне çухатнă нимĕç-фашист çарĕсем пирĕн чечекленекен ялсемпе хуласене çаратса хăварнине, çунтара-çунтара янине, унччен телейлĕ те ирĕклĕ пурăннă çынсене тискер пусмăрлăха кĕртсе янине, аскăнчăк нимĕçсем пирĕн хĕрарăмсене мăшкăл тунине, пирĕн çынсене этем шухăшласа кăлармалла мар майсемпе асаплантарса вĕлернине куратпăр. Çав тискер кайăксем никама та хĕрхенмен: туяллă ватăсене те, кăкăр ĕмекен ачасене те. Вĕсен пĕртен-пĕр хапсăнăвĕ—совет çыннисене пĕтерсе, тепĕр пайне хăйсен чурисем туса хурасси кăна. Çав асапсем пире Хĕрлĕ Çар совет халăхне—çакăнпа пĕрле тата ирĕке юратакан пĕтĕм тĕнчери халăхсене те—пĕтесрен, чуралăхран çăлса хăварса, тĕнче историйĕнче калама çук пысăк çĕнтерӳ тунине ялан асра тытма хушаççĕ.

Нимĕçсем совет çыннисем хушшинче предательсем шыранă; совет çыннисем, вĕсене темĕскерле майпа хистесен те, тăван çĕршывшăн тăнă, уншăн таса чĕрепе виле-виле выртнă. Сайра хутра нимĕçсем хăйсемшĕн ĕçлекенсене Кузьма Битый („Старик № 33") пек вăрăхурах хушшинче, е унччен таçта пытанса пурăннă раскулаченнăй Наума („Вĕри чĕре"), е ĕлĕкхи шултра усламçă Евстрат Пудов çемьинче („Вилĕмрен те вăйлăрах") тупма пултарнă, анчах пирĕн çынсем предательсене пĕтере-пĕтере пынă.

Совет çыннисем, хĕвелтухăçнелле куçма ĕлкĕрейменнисем, нимĕçсен тылĕнче вĕсене хирĕç вăрçă пушарне сарса яраççĕ.

Партизансен кĕрешĕвне „Тăван юншăн" повесть сарлакан кăтартать.

Фронт хĕвелтухăçнелле куçать. Яла нимĕçсем çитмен-ха, анчах хĕвелтухăçнелле каякан çулсене пурне те татнă. Çакна илтсенех, ялти вăйпитти арçынсенчен никам та юлмарĕ—вĕсем темле пĕр харăс çухалнă. Çамрăк Мурат вĕсене пурне те вăрманта тĕлпулать: вăйпитти арçынсем çеç мар, ватă Микулай Мучи те, МТФ-ра ĕçлекен Груша ятлă хĕр те, ытти çынсем те кунта иккен. Отряд ӳсет, хăюллă операцисем туса ирттерет, нумай халăха нимĕçсен пусмăрĕнчен хăтарать. Кайран партизансен юхăмне ертсе пыракан центрпа çыхăнать.

Ку—йĕркелесе, ӳссе, ăнăçуллăн кĕрешӳсем туса пыракан отряд. Унăн организаторĕ тата командирĕ Игнат Дубов пĕринче, амăшĕпе тĕлпулсан, çапла каланă:

— Вăрçă, аннеçĕм! Темле те пулма пултарать. Анчах хăраса тăрсан ĕç тухмасть вĕт. Кĕрешес пулать. Тăшмана кашни утăмрах пыра-пыра çапмалла, пĕр самантлăха та сывлăш çавăрма памалла мар. Нимĕçсем кунта пире чура тума килчĕç, анчах эпир чура пуласшăн мар.

Çав сăмахсене вĕсем хисеплĕн пурăнăçа кĕртсе пынă.

„Юрă пурĕпĕр янранă" калавра нимĕçсем йышăннă ялта кашни каç пĕр хĕрарăмăн вăйла уçă юрри халăха кĕрешĕве йыхăрнине кăтартнă. Çав хĕрарăм нимĕç захватчикĕсен ĕмĕрĕ кĕскелни çинчен, Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем çинчен, Германие чуралăха хăваласа ярассинчен хăтăлассин çинчен, т. ыт. çинчен те юрланă. Нимĕç коменданчĕ нумай йĕрленĕ ун хыççăн, пĕр хĕрачана тытса, çакса та вĕлерет, анчах юрă пурĕпĕр янăрать; кайран ку юрă ӳссе, партизансем яла ушкăнпа юрласа килекен юрă пулса тăрать.

Партизансен кĕрешĕвне кăтартни çинчен калаçнă чухне „Вĕри чĕре" калав çинче кăштах чарăнма тивет.

Нимĕçсем ял патне çывхараççĕ. Ларис ятлă хĕрарăм патне унăн юлташĕ—çамрăк учительница Нина Филипповна пырса, чирлĕ амăшне пăхкалама ыйтать, хăй вăл ялтан тухса кайма хатĕрленет. Ларис унăн амăшне пăхма пулать, анчах нимĕçсем мĕнле те пулин сиен тăвассине ĕненмест, çавăнпа юлташсене те килтех юлма сĕнет. Нина Филиппов-

вăпа Ларис хушшинче ак çакăн пек калаçу пулса иртет.

„—Никама тивмесен те мана çакаççех. Пĕлетĕн вĕт: эпĕ комсомолка, активистка, райком членĕ, икĕ пичче—фронтра, фашистсене хирĕç вăрçаççĕ.

— Ун çинчен нимĕçсем пĕлмеççĕ-çке!

— Ялта пĕр сутăнчăк тупăнатех.“

Çав сутăнчăк чăнах та тупăнна: вăл Ларис упăшки, хăй инçетрен килнĕ раскулаченнăй пулнине арăмĕнчен те пытарса пурăннă Наум, нимĕçсемпе пĕрле яла аркатаканскер; вăлах учительница амăшне çактарса вĕлерттерет. Ларис, упăшки предатель пулнине пĕлсен, йывăр çын пулнине пăхмасăрах, партизансене шыраса вăрмана каять те, унта Нина Филипповнăна та тупать.

Ларис малтан чунĕпе асапланнине, унтан пĕртенпĕр тĕрĕс çул тупнине автор лайăх кăтартнă. Ларисăн чĕри чăнахах вĕри. Анчах Лариса пирвайхи плана тăратнине пула, автор, хăй сисмесĕрех, Райком членне, активисткăна, хăйĕн чунне сыхлассишĕн çеç вăрмана тарнă пек кăтартса хăварнă. Калăпăр, Ларис пӳртĕнче чухне Нина Филипповна хăйĕн тĕп шухăшне вырăнлă тесе шутламан. Пытанма кирлĕ мар чухне те хăй кĕрешме шутланине, кĕрешнине кăтартмасть-çке вăл, çавăн пекех автор та ун çинчен шарламасть. Ку кăлтăк астумасăр пулнă, тейĕпĕр, çапах ăна пирĕн пит пĕчĕккĕ тесе шутлас килмест. Мĕншĕн тесен, эпир пăхакан произведенисенче тĕлпулакан ытти коммунистсемпе комсомолецсем те хăйсене çителĕклĕ кăтартмаççĕ. „Старик № 33“ калаври комсомолец-активист çинчен, вăл партизан пулнисĕр пуçне, урăх нимех те пĕлместпĕр. Вĕсем малти ретре пынине, хăйсен примерĕпе те, организаторла ĕçĕсемпе те халăхăн чунхавалне вăйлантарса пынине, массăллă кĕрешӳре вĕсен авангардлă вăйне курмасăр иртсе кайни пурăнăçа тĕрĕс курманнипе танлашать.

Ватă коммунистка Варвара Васильевна геройла ĕçсем тăвать. Анчах, темшĕн, фронт хăйсен ялне çитсе, ун килне йывăр аманнă Шăмăрш каччи Палюков пырса кĕриччен хăй мĕн тăвасси çинчен шухăшламан, кĕтмен обстоятельствăсене пула çеç кĕрешĕве хутшăнса каять. Апла пулни Варвара Васильевнăн сутă образне нимĕн чухлĕ те тĕкĕсĕмлетмест. Анчах автор вăл коммунист иккенне пĕлтерчĕ пулсан, кĕтмен обстоятельствăсăрах та нимĕçсем килсен мĕн тумалли çинчен пĕлнине кăтартмаллаччĕ.

Вăрçă ĕçне хутшăнса кайнă мирлĕ çынсем хушшинче тата ватă учитель Яков Иванович палăрса тăрать („Старик № 33“). Нимĕçсем йăлтах çунтарса сиктерсе хăварнă ялта халăх землянкăсенче пурăнать. Ватă Яков Иванович нимĕçсен аллинче тӳсме çук асап курнă, ăна нимĕçсем, вилнĕ тесе, канава кăларса пăрахнă, çапах совет çыннин çирĕплĕхне хуçма пултарайман. Тăшман шкула çĕмĕрнĕ вăхăтра вăл хăшпĕр кĕнекесене çăлса хăварнă. Халь вăл, нимĕçсене хăвалаçса янă хыççăн, ачасене землянкăсенче вĕрентсе çӳрет. Апла тума ăна никам та хушман, ăна тăван çĕршыва, тăван халăха вĕçĕмсĕр юратакан чĕри йывăрлăхсенчен хăрамасăр ĕçлеме хушать.

„Салтак чунĕ“ ятлă калавра пĕр интереснăй калаçу пур. Çамрăк лейтенант калать: салтак таврашĕнче куççуль пулма пултараймасть, тет. Ватă майор унпа килĕшмест: ăна ответлесе, вут айĕпе чупакан хĕрарăма çăлма та май çук пек вăхăтра хăй хумханни çинчен майор çапла калать: „Эпĕ, ватă салтак, хам пурăнăçра тем те курнă çын, макăрса ятăм вĕт“. Майор сăмахĕсем, пĕр енчен, Леонид Агакова хăйне кăштах тивеççĕ. Çынсем макăрма пултарнине кăтартмалла мар, теместпĕр эпир. Анчах калавсенче çӳçентермелле, ăшчике çавăрса хурлантарма пултаракан событисене кăтартнă чухне, автор хăйĕн сăмахĕсемпе сăрăсене вырăнсăрах шеллет. Илер-ха Нина Филипповнăна. Лариса вăл амăшне пăхма шантарса хăварнă, çав Ларисах амăшне çакса вĕлерни çинчен пĕлтерет. Ни макăрмасть, ни хурланмасть Нина Филипповна. Е унăн чĕри ыратмарĕ-ши, чунĕ хурланмарĕ-ши? Шăмăрш каччине Палюкова илĕпĕр. Вăл хăйĕн пурăнăçне çăлса хăварнă хĕрарăма тĕлпулать. Уншăн хĕрарăма мĕн тери тавтумалла пек, хăйĕн амăшĕпе тан шутламалла пек. Анчах вĕсем пĕр-пĕринпе курăнăçнине автор ăнсăртран паллакан çынсен тĕлпулăвĕ пек кăна кăтартать. Вĕсене тĕрĕссипе кăтартсан, çын сăнарлăхĕ, унăн характерĕ чакассинчен, унăн чĕри хавшакăн курăнассинчен хăрамалли çук, йăлтах урăхла, çын хăйĕн мĕнпур хăватлăхĕпе курăнса тăнă пулĕччĕ.

Çакăнпа пĕрлех автор чĕрĕ образсен сăн-питне кăтартма тăрăшманнине паллă тумалла. Унăн геройĕсем кĕрешеççĕ, хăйсене совет çĕршывĕн чи ответлă кунĕсенче чăн-чăн тивĕçлĕ ĕçсемпе кăтартаççĕ. Автор вĕсене тарăн та çивĕч ситуацисемпе усă курса кăтартнă пирки, калавсемпе повеçсем интереснă, тытсан—вуласа тухмасăр пăрахмалла мар, çавăнпа вĕсене юратса вулаççĕ. Ку—авторăн творчествăллă меточĕ, унпа вăл вăрçăчченех усă курма пуçланă. Анчах произведенисенчи геройсем мĕнлескерсем вĕсем?—тесе ыйтсан, эпир кашни геройăн паттăрла ĕçĕсем çинчен каланисĕр пуçне урăх нимех те калама пултараймастпăр: вĕсен сăн-пичĕ, характерĕсем тĕтререн аран-аран çеç палăрса тухма пултараççĕ. Валентин Катаевăн, „Полк ывăлне“ вуланăранпа нумай вăхăт иртрĕ, çапах унăн сăн-питне астума пултаратпăр. „Тăван юншăн“ повĕçе вуланă чухне пирĕн çавăн пекех Мурата курас килчĕ, анчах, тем пек тăрăшсан та, вăл мĕнле сăн-питлĕ, мĕнле характерлă ача пулнине пĕлеймĕрĕмĕр. Ытти образсем тĕлĕшпе те çавнах каламалла. Вулакансем хăйсен юратакан геройĕсен чĕрĕ образĕсене нумайччен астума пултарччăр тесен, çав образсене çывăхрах илсе кăтартни кирлĕ.

Отечественнăй аслă вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлесе, совет халăхĕ аслă ĕçсен çĕнĕ планĕпе ĕçлеме тытăнни—писательсен умне тата пысăкрах, тата ответлăрах задачăсем лартать. Çак çĕнĕ тапхăрта вулакансем Л. Агаковран тата лайăхрах произведенисем кĕтеççĕ.

*Г. АЛЕНДЕЙ.*

# ПУРĂНĂÇА ТĔРĔС МАР КĂТАРТАКАН ПЬЕСА

*(Иван Вашки çырнă „Салют хыççăн“ пьеса пирки)*

Аслă çĕнтерӳ кунĕ. Историре халиччен пулман çĕнтерӳ кунĕ! Кам кĕтмен-ши ăна? Кам ĕмĕтленмен-ши вăл килессе? Нӳрлĕ окопра-и, капмар завод цехĕсенче-и, колхоз хирĕнче-и,—аслă тăван çĕршывăн пур кĕтесĕсенче те пĕтĕм совет халăхĕ куллен-кун ĕмĕтленсе кĕтсе пурăннă ăна. Вăл ĕмĕте пурăнăçласшăн совет халăхĕ йывăрлăх чăтнă, асап тӳснĕ! Çитрĕ вăл, çитрĕ тăвата çула яхăн кĕтнĕ ĕмĕт. Ĕçпе, юнпа, пурăнăçа шеллемесĕр çапăçса илнĕ историллĕ çĕнтерӳ кунĕ. Мĕн тери пысăк уяв, ниçта шăнăçайми савăнăç! Çĕнтерӳçĕсен, совет çыннисен, уявĕ.

Чăн пурăнăçра вăл уява мĕнле кĕтсе илнине, çынсен чĕринче вăл кун иксĕле пĕлми савăнăç вĕресе тăнине кашниех пĕлет. Çапăçу хирĕнче тупăсемпе танксем, самоходкăсем, повозкăсем хăмач ялавсемпе эрешленнине, пĕр-пĕрине палламан салтаксем, офицерсем ыталашса чуптунине, пĕрне-пĕри чунран саламланине курнă нумайĕшĕ. Çаплах пулнă вăл ин-çетри тылра та.

Анчах урăхла, чăн пурăнăçри пек мар, кĕтсе илеççĕ-мĕн ку уява „Салют хыççăн“ пьесăри геройсем. Сасартăках малалла каймăпăр, пĕрремĕш пайĕнче пулса иртекен ĕçсем çинче чарăнса тăрăпăр кăштах, мĕншĕн тесен ку пайри ĕçсем шăп çĕнтерӳ кунĕ пулса иртеççĕ, çавăнпа та вĕсем, пирĕн шутпа, уяв кунĕшĕн характерлăрах пулма тивĕç. Çавăнпа та вăл ĕççене эпир, автора кӳрентерес шухăшпа мар, об“ективлă куçпа пăхса тухма тăрăшăпăр.

Вăрçă пĕтнĕ ĕнтĕ. Мускав салючĕн кĕрлевĕ аслă тăван çĕршыва нихăçан пулман, миллионсен чĕрине шăнăçайми савăнăç çинчен, историллĕ çĕнтерӳ çинчен хыпарлать. Артиллерист-полковник Марченко фронтра-ха. Таврăнман. Мускавра унăн арăмĕ, Клавдия Фирсовна, хăйĕн хваттерĕнче пĕчченех пурăнать. Çак хваттере, полковник Марченко хваттерне, суйласа илнĕ ĕнтĕ автор аслă уява мĕнле кĕтсе илсе иртернине кăтартма. Çак хваттере кĕрен-тухан çынсен шухăш-кăмăлĕ, ĕмĕчĕсем, чăтса ирттернисем урлă курас пулать ĕнтĕ зрителĕн совет халăхĕн аслă савăнăçне. Эпир мĕншĕн капла каланине вулакан ăнланать пулĕ? Вĕт автор ирĕкне пула, эпир вăл савăнăçа çак хваттерсĕр пусне, урăх çĕрте пурĕпĕр курма, туйма пултараймастпăр! Калакансем тупăнĕç. „Автор пьесине урăх тĕллевпе, урăх шухăшпа çырнă, салют хыççăнхи савăнăçа кăтартас тĕллев пулман ун“ тейĕç. Апла пулсан та, пирĕн çакна калас килет: Марченко хваттерне кĕрен-тухан çынсем (геройсем) пĕлĕт çинчен ӳкмен. Вĕсем—Совет çĕршывĕнче пурăнакан совет çыннисем. Нумайĕшĕ вĕсенчен, автор калана тăрăх, юнне шеллемесĕр тăшманпа çапăçнă, çак уява кĕтнĕ. Савăнăçăн вăйлă та иксĕлми хумĕ вĕсен чĕрисене тивмесĕр, хускатмасăр иртсе кайма пултарнă тесен, кам ĕненĕ?

Ку уява савăнмасăр ирттерсе янă çынсем те пулнă тет пулсан автор, эппин, вĕсем совет çыннисем мар, пирĕн тăшмансем. Анчах автор рекомендацийĕ тăрăх, çыннисем пурте совет çывнисем, вĕсен хушшинче хăшпĕр çитменлĕхлисем пур пулсан та. Çавăнпа та куракансен ыйтма права пур:—Кăтарт пире совет çĕршывĕнчи совет çыннисен чăн-чăн савăнăçне, чăн-чăн пурăнăçне! Ку ыйтăва эпир шухăшласа кăларман, ăна пурăнăç хăй кăларса тăрать.

Анчах, автор кăтартнă тăрăх, историллĕ çĕнтерӳ кунĕ пьесăри геройсене телейпе савăнăç кӳреймест-мĕн. Нумайранпа ĕмĕтленсе, кĕтсе пурăннă аслă çĕнтерӳ, иксĕлми савăнăçпа телей кӳрес вырăнне, вĕсен пурăнăçне мăкалтать иккен, кăмăлĕсене хуçать, инкек çуратса парать. Пирĕн сăмах пушă ан пултăр тесе, эпир ăна пьеса геройĕсен пурăнăçĕнчи характерлă тĕслĕхсемпе çирĕплетĕпĕр. Хисеплĕ полковник Марченко, кĕмĕл çӳç пĕрчиллĕ, кăкăр тулли орденлă полковник Марченко арăмне, Клавдия Фирсовнăна, илсе пăхар. Çав тери хисеплĕ упăшкан арăмĕ те йĕркеллĕ хĕрарăм пулма тивĕç ĕнтĕ. Пьеса тăрăх палла, вăрçăччен Марченкопа Клавдия Фирсовна пĕр-пĕрине килĕштерсе, кăмăллă пурăннă, пĕр-пĕрине кĕвĕçме тума сăлтав-мĕн пулман вĕсен хушшинче. Марченкона хăйне илсе пăхсан та, тӳрех каламалла, пули-пулми хĕрарăмпа çав тери нумай çул хушши чăкăлташса пурăнас çын мар вăл. Апла пулсан, Марченкопа Клавдия Фирсовнăна пĕр пек шухăш-кăмăл, пĕр еверлĕ пурăнăç интересĕ пĕрле пурăнтарнă, алран ал тытăнса пурăнăç çулĕ тăрăх уттарнă, пĕр-пĕрине хисеплеттернĕ, кăмăллаттарнă. Çапла пурăннăн туйăнать, пирĕншĕн пулсан, çак хисеплĕ мăшăр вăрçăччен. Ахальрен мар ĕнтĕ вĕсем пĕр-пĕринпе çӳç-пĕрчисем кĕмĕллениччен пурăннă та. Анчах автор—сăлтавĕ пур-и, çук-и—вĕсене урăхла пурăнтарма шут тытать. Упăшки фронта тухса кайсан, Клавдия Фирсовна (тем сăлтавпа-çке?) ют арçынсемпе айкашса çӳреме тытăнать. Çак, автор ирĕкĕпе, тӳр пурăнăç урапи çинчен ӳкнĕ хĕрарăма вăрçă пĕтни, çĕнтерӳ кунĕ килни, паллах, савăнăç кӳме пултараймасть. Халь ĕнтĕ уншăн „урăх норма пуçланать“. Мĕншĕн тесен „хăй (упăшки) килме пултарать!“. Хăйне-хăй тыткалани енчен илсе пăхсан, Клавдия Фирсовнăна ниепле те пирĕн ĕмĕрте пурăнакан хĕрарăм шутне хума çук, ăна тасти архивран, капитализм пуçпулнă ĕмĕрсенчен сĕтĕрсе кăларнă, тейĕн! Çак хĕрарăма пурăнăç условисем çапла пурăнтараççĕ, имĕш?! „Коммерци ĕçĕ: юрамасан сăра та илеймĕн!“ тет вăл. Пирĕн çĕршывра, совет çĕршывĕнче сутуилӳ ĕçĕ Клавдия Фирсовна каланă принцип çинче тытăнса тăманнине кирек кам та пĕлет пулсан та, автор Клавăна çапах та çапла сăмахлаттарма хăять.

Савăнăç мар, инкек çине синкек килсе тухать пьесăри геройсемшĕн çак аслă уяв кунĕнче. Полковник Марченко адъютанчĕ (тĕрĕсрех—ординарецĕ ĕнтĕ) пулса пурăннă старшина Чуваков фронтран таврăннă май Марченко хваттерне, унăн арăмĕ Клавдия Фирсовна патне кĕрсе тухма шут тытать, имĕш. Анчах савăнăçлă тĕлпулу кĕтмест ку хваттерте фронтовик Чувакова. Хăй килте çук чухне хваттере уçса кĕнĕ старшина Чувакова Клавдия Фирсовна кăнтăр кунĕнчех вăрă вырăнне хурать. Чуваков ăнлантарни-мĕнне уямасăрах, вăл ăна комендатурăна ăсатать.

Çапла, чăкăлтăшлă, урăм-сурăм иртет пьесăри геройсемшĕн чи аслă уяв, чи пысăк савăнăç кунĕ.

Ăнăçлă мар иккен ку кун ытти геройсемшĕн те. Çамрăк та талантлă изобретатель Архипов, ăнсăртран тенĕ пек, хăй савнă хĕрне Анюка тĕлпулать. Мĕн

тери саванăçла пулмалла ĕнтĕ пĕр-пĕрине юратакан çамрăксемшĕн çак вăрçă пĕтнĕ хыççăнхи тĕлпулу! Çитменнине тата, ку тĕлпулу ахаль кун мар, салют хыççăн, аслă çĕнтерӳ кунĕ килсе тухать. Çук, телейĕ мар иккен ку кун Архиповпа Анюкшăн. Анюк хăй савнийĕ вăрçă вăхăтне фронтра мар, Мускавра, салют паракан артиллерист пулса çеç иртгернине, вăл ун патне: эпĕ действующи çарта, тесе ултавлă çырусем çырса тăнине пĕлет. Ку хыпар, Анюкшăн пулсан, уяр кун кĕтмен аçа çапнăнах туйăнать. Ăçтан хисеплетĕр, юраттăр ĕнтĕ вăл хăйне намăса пĕлмесĕр улталаса пурăннă йĕкĕте?! Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче совет çыннисем фронтра та, тылра та пĕр ĕç, хисеплĕ ĕç, Тăван çĕршыва тăшманран хӳтĕлес ĕçе тунине, пĕтĕм совет халăхĕ пĕр пулса тăшмана çĕнтересшĕн çапăçнине пĕлет кашниех. Анчах Архиповшăн пулсан, Мускавра салют парса пурăнма тӳр килни хисепсĕр, тивĕççĕр ĕç, ун шухăшĕпе, фронтрисем çеç чăнчăн усăллă ĕçре пулнă, подвиг тунă. Çак тĕрĕс мар ăнлану, хăйне хăй нимĕн выраннe хуманни, хăй ĕçне тивĕçлĕ хак хума пĕлменни асаплантарать те ĕнтĕ тӳр чунлă Архипова. Аслă çĕнтерӳ кунĕнче çакна пула ĕнтĕ чĕрре кĕрсе кайма тивет те вĕсен Анюкпа. Çавăншăн, пуринчен ытла хăйне улталанăшăн, хирĕççе каять унпа Анюк, шанми пулать. Ку сăлтав кăна мар хирĕçтерет ха вĕсене. Хирĕçӳ вăйлăрах, тарăнтарах пултăр тесе, автор урăх ситуаци те шухăшласа кăларма ӳркенмест. Архипов авланман-туман çĕртенех авланнă çын пек пулса тухать, çитменнине тата хисеплĕ Марченко полковник арăмне качча илнĕ пек пулса тухать. Ку никĕссĕр сăлтав чăн та хирĕçӳве вăйлататать, тарăнлататать. Ку сăлтава пула Архиповăн Анюк тăшманĕ çеç мар, Марченко полковник тăшманĕ те пулса тăма тӳр килет. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек обстановкăна лекнĕ геройсен вăрçă пĕтнĕ ятпа, аслă çĕнтерӳ кунĕ çитнĕ ятпа пĕтĕм совет халăхĕн савăнăçĕпе савăнма шухăшĕ те, вăхăчĕ те çук пулса тухнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Халь çеç киле таврăннă Марченко полковникĕн уява чăн совет çынниле ирттерес кăмăлĕ те çук марччĕ, анчах инкек! Хисеплĕ арăмĕ Клавдия Фирсовна хăйне улталаса пурăннине пĕлме тӳр килни унăн савăнăçне самантрах хупласа хурать, вăл „скульптура?!" пек хытса тăрать, ун аллинчен хаклă эрех кĕленчи тухса ӳкет. Ытла пит час, çын сăмаххи урлах, арăмĕпе тĕлпулса калаçмасăрах ĕмĕрлĕхе уйăрать вăл хăйне нумай çул хушши хисеплесе пурăннă арăмĕнчен, Клавдия Фирсовнăран. Ку ĕнтĕ уррăн шухăшлама пĕлекен çынсемшĕн ĕненмелле япала мар.

Пирĕн резюме çакăн пек: чăн-чăн пурăнăçри пек мар кĕтсе илеççĕ „Салют хыççăн" пьесăри геройсем аслă уяв кунне. Апла пулсан, тӳррипе калама тивĕç, пирĕн çĕршыври чăн-чăн пурăнăçа автор пире аванчăк тĕкĕр витĕр, нумай енчен пăсса, мăкăлтаса кăтартать.

Сăмах пуçланă май, пьесăри уйрăм геройсен образĕсем пирки те кăштах калаçма килет пулĕ. Характерлă-и вĕсем пирĕн вăхăтшăн, вĕсенче паянхи совет çыннине, тăшмана аркатса тăкнă хыççăн пĕтĕм чун-хавалĕпе мирлĕ пурăнăçа аталантарма тытăннă совет çыннине куратпăр-и эпир?

Лейтенант Архипов, автор шухăшĕпе лайăх çын, чăн-чăн совет çынни, хăйĕн ĕçне чун-чĕререн юратакан талантлă, пултарулла изобретатель. Вуланшăн паллă ĕнтĕ, Архипов пек çынсемшĕн пулсан, пирĕн çĕршывра çул уçă, ун пек çынсен талантне, пултарулăхне чечеклеме кирлĕ пек условисем пурте пур. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн условисенче халăх хушшинчен тухнă талантсем, пултарулла çынсем Сталинла Конституци хĕвелĕ ăшшинче епле вăй илнине, вĕсен пултарулăхĕ çӳл тӳпене çити çĕкленнине, вĕсене государство, халăх, çывăх юлташĕсем çывăх тусла пулăшса пынине кăтартса пани харектерлă пулма тивĕç. Урăхларах каласан, пурăнăç ыйтнă тăрăх, автора пирĕн тапхăршăн, сталинла саманашăн характерлă изобретатель, ученăй образне кăтартса парас енĕпе питĕ те пархатарлă ĕç тума май пулнă, тесшĕн эпир. Анчах та, тӳрех каламалла: автор ку тĕлĕшпе йăнăш çул çине тăнă. Вашки кăтартса панă изобретатель, ученăй образĕ, пирĕн саманашăн характерлă образ мар. Архипов пек изобретательсем, обществăран, халăхран, хăй юлташĕсенчен татăлса пурăнакан талантсем пирĕн ĕмĕрте мар, капитализм пуç пулнă обществăра пулма пултарнă тесен тĕрĕсрех пулĕ. Капитализмлă обществăра халăх хушшинчен тухнă талантсене валли çул пулман, çавăнпа та вĕсем, обществăра пĕчченскерсем, никамран хӳтлĕх, пулăшу курманскерсем, аталанма мар, урăхларах, хăйсен тертлĕ çулĕпе утса тухма вăй çитерейменĕр, е пуçламĕшĕнчех, е çурма çула кармашса çитсен, сӳннĕ. Çапла пулнă çавă ĕмĕрти халăх таланчĕсен шăпи. Темшĕн-çке, Вашки хăй геройне, пирĕн ĕмĕрти герой тăвас тенĕ çĕртенех, çав капитализм ĕмĕрĕнчи талантлă изобретательсемшĕн характерлăрах тертлĕ çул çине кăларса тăрататать, ăна çав тертлĕ çулпа уттарать. Лейтенант Архипов пирĕн куç умне эпир пурăнакан кунсенчи талантлă изобретатель пек мар, мĕскĕн те телейсĕр, обществăра пĕр пĕччен тăрса юлнă çын пек тухса тăрать. Апăрша! тес килет Архипова. Тепĕр тесен, мĕскĕн пулмасăр! Вĕт унăн хăй юратнă ĕçне тума ĕç выранĕ те пулин çук, экспериментсем тума кирлĕ условисем çинчен сăмах та хускатмăпăр. Таврари обстановка, таврари условисем Архипова мĕн тери хĕснине, вăл ялан пĕччен, ялан вăрттăн, вăрăлла ĕçлени кăтартса парать пулĕ, тетпĕр эпир. Калакансем тупăнĕç каллех: „Архипов—çынни çавăн пекрех, характерĕ çаплалла унăн" тейĕç. Характерĕ-мĕнĕ пирки калаçма кирлех те мар пулĕ, мĕншĕн тесен, действи тăрăх эпир Архипов мĕнле çыннине хамăрах куратпăр. Вăл хăйĕн изобретенийĕ, вăрттăн ĕçĕ пирки Марченко полковникпе калаçасшăн çуннине кирек кам та курать пулмалла. Анчах вăл тăрăшни, автор кăларса тăратнă сăлтавсене пула, кăлăхах. Нимĕн те каламăпăр кун пирки: асаплă, тертлĕ çамрăк талант Архиповăн çулĕ! Мĕн-мĕн кăна асаплантармасть пулĕ ăна! Пĕр енчен, вăл хăйне пĕччен ĕçлеме услови çуккипе пăшахать, тепĕр енчен—эксперимент тунă май хăйĕн авторитетне çухатни кулянтарать ăна, тата хăй юратнă хĕрĕ умĕнче шанчăкран тухни, вăл ӳкĕте кĕме пĕлменни ыраттарать ун чĕрине, чи юлашки—Марченко полковник хăйпе калаçманни, çавна пула хăйĕн изобретенийĕ сая кайма пултарасран хăрани асаплантарать мĕскĕне!

Ăçта, пирĕн çĕршывăн хăш кĕтессинче курнă-ши автор пирĕн условисенче çамрăк талантсен çулне Янушин пек „хура этемсем" картласа, пӳлсе пынине? Мĕнле çамрăк талантăн ĕçĕ ăнассипе ăнмасси пĕр çынран (Марченко полковник пулман пулсан

Архипов ĕçне хаклама пултаракан урăх çын çук пек туса кăтартнăран калатпăр ĕнтĕ кăна) килсе тухнине курнă-ши автор пирĕн çĕршывра?!.. Архипова чăнна кăлараканни, Янушин маскине сĕвсе пăрахаканни, Прокоç тейĕпĕр. Анчах кам-ха Прокоç? Вак-тĕвек спекулянт, кивĕ тĕнче çӳп-çапĕ, „мистер", „фирма" сăмахсемпе тĕлсĕр перкелешсе çӳрекен çапкаланчăк. Çавăн пек çапкаланчăксенчен те, хăш чухне, килет имĕш пирĕн çĕршыври çамрăк талантсен шăпи телейпе вĕçленесси. Çапла кăтартать пире автор. Апла пулсан, пирĕн çĕршыври чăн-чăн пурнăç çинчен элекленисĕр пуçне урăх мĕн пур-ши çапла кăтартниче?! Пирĕн шухăшпа, кăна урăхла ăнланма йывăр, майĕ те çук.

Марченко полковник çинчен те сăмах хускатмасăр иртме йывăр. Автор шухăшĕпе, Марченко образĕ—идеаллă образ, чăн-чăн совет çыннин образĕ. Çук, хăйĕн интересне общество интересĕнчен çӳле хуракан çынна идеаллă çын теме пултаратпăр-ши эпир? Пирĕн саманари совет çынни общество интересне хăй интересĕнчен çӳле хунипе характерлă та. Анчах Марченко пирĕн умма шăпах урăхла тухса тăрать. Сăлтавпа-и, сăлтавсăр-и, пурĕпĕрех, Марченко полковник Архипов лейтенанта хăйĕн чи тискер тăшманĕ выранне хурать, ăна хăйĕн арăмне туртса илнĕ арçын тесе шутлать. Çак сăлтава пула вара, вăл Архипова хăй патне çывхартмасть, чи кирлĕ ĕç пулсан та, унпа калаçмасть. Архипов унпа, артиллери ĕçĕнчи специалистпа калаçнă пек, калаçасшăн пулсан та—вăл ăна, хăй звани тĕлĕшпе аслăрах пулнă май, ним мар аяккалла сирсе ярать. Архиповăн интересне, хăйĕн-и вĕсем, общество интересĕ-и, шута хумасть, пур ĕçе те хăй виçипе, кӳреннĕ, тарăхнă çын виçипе виçет. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек çынна эпир пур енчен те çирĕп, совет çыннинче пулма тивĕç пахалăхсемлĕ çын теме пултараймастпăр. Тепĕр енчен илсе пăхсан та, Марченкора çитменлĕх çук мар. Чăнлăха вĕçне çитиччен шырама юратман çын та теес килет ун çинчен. Арăмĕ хăйне чăнах пăрахнине те, Архипов чăн та чăнах хăй тăшманĕ, е тăшманĕ маррине те пĕлесшĕн тăрăшмасть вăл, ку ыйтупа, вăл хăйĕн чĕрине ыраттарать пулин те, интересленмест.

Архиповăн савнă хĕрне Анюка илсе пăхар. Автор ăна, чăн та ĕнтĕ, пур енчен те тивĕçлĕ хĕр пек кăтартма тăрăшать. Анчах та, кăлăхах автор тăрăшни. Хăйне хăй тыткалас енĕпе вăл Марченкоран нимĕнпе те уйăрăлса тăмасть. Архипов айăплă-и, айăплă мар-и, ăна-кăна тĕплĕн пĕлме тăрăшни çук унăн, никĕссĕр принципне пула вăл Архипова мĕн пьеса вĕçне çитиччене аяккалла сире-сире ярать. Ăнланăвĕсем те унăн—совет хĕрĕн ăнланăвĕсем мар. Унăн шухăшĕпе, тăван çĕршывшăн çапăçма кайнă совет çыннисем пуринчен малтан тăван çĕршыва хӳтĕлеме мар, орден илесшĕн çапăçăва тухнă, имĕш. Ку вăл Архипова тĕлпулнă тĕлпулманах... „Кала... хăçан Кремĕле кĕмелле сан?" тесе ыйтниччен те пит аван курăнса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнче кашни совет çынни, фронтра-и вăл, тылра-и, тăшмана çĕнтерес ĕçе мĕн пама пултарнине йăлт панă, тетпĕр эпир. Анюк ку чăнлăха урăхла ăнланать, имĕш. Архипов Мускавра çеç вăрçă вăхăтне ирттернине пĕлсен, вăл нимĕнле орден та илейменнине пĕлсен—вăл унтан аяккалла пăрăнать те. Тĕлĕнмелле шухăш Анюк пуçĕнче. Ку шухăш, пирĕн шутпа, Анюк пуçне автор хутшăнмасăр кĕрсе выранаçманах. Архипова вăл çапла калать: „Мĕн аташатăн ара? Мĕн тери тăрăшса вĕрентĕн те—çарта пĕтĕмпех сая кайтăр-и? Çук, Илюш, эсĕ шӳтлетĕн"... Апла, эппин, пирĕн Совет çарĕнче вĕреннĕ çынсем хăйсен пĕлĕвне сая анчах яраççĕ. Ку шухăш сиенлине, совет çыннин шухăшĕ маррине, вулакан ăнлантармасăрах ăнланма тивĕç.

Пур образсем çинче те чарăнса тăмăпăр. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, пьесăри геройсем пĕр-пĕринчен, „улми йывăççинчен аякка ӳкмест" тенĕ пек, сахал уйăрăлса тăраççĕ. Пурте вĕсем çитменлĕхлĕ, пĕрине те чăн-чăн совет çынни теме çук вĕсене. Вĕсен пурнăçĕ пĕр-пĕрине шанманни çинче никĕсленсе тăрать. Илер Янушина, илер Шоринăна, Кулинене илер, Прокоçа—пурте вĕсем вăрăлла вăрттăн йăпшăнса çӳреççĕ, çын мĕн калаçнине вăрттăн итлесе çӳреççĕ. Çавăн пек пурăнакан çынсем совет обществинче пурăнаççĕ, тет, пулсан автор, паллах ĕнтĕ, вăл совет саманинчи чăн-чăн пурнăç çинчен элек сарни пулать.

Элек çинчен калатпăр пулсан, каласа хăварас пулать çакна та: автор Совет Çарĕн пурнăçне пăсса кăтартать. Элеклет вăл ун çинчен. Ку тĕрĕссине ытти пайсенчи действисене илмесĕрех, полигонри пурнăçа епле кăтартнине илсе пăхниех аван кăтартса парать, тесшĕн эпир. Ăçта, Совет Çарĕн хăш чаçĕнче, курнă-ши автор хăй кăтартнă артполигонри пек йĕркесĕрлĕхе, дисциплинăсăрлăха?! Кунта стрельба ирттернĕ вăхăтра орудирен перекенни (Янушин) тĕле тивретейменскер, канав тăрăх вăрттăн тухса тарма пултарать, кунта Чуваков старшина Архипов лейтенантран куçкĕретех мăшкăлама пултарать, лейтенант Янушин тĕлли-паллисĕр полигон тăрăх юртса çӳреме пултарать, кĕçĕнни аслине пăхăнас, хисеплес йăла та тухса ӳкнĕ ку артполигон пурнăçĕнчен. Çавăн пек курăнать Совет Çарĕн пурнăçĕ Вашки сăрласа кăтартнă картинăра. Чăн-чăн Совет Çарĕн пурнăçĕ тĕнчери ытти çарсенчи пурнăçран калама çук çӳлте тăракан дисциплинăпа, йĕркелĕхпе, çӳлте тăракан культурăпа, никам çĕнтерейми вăйĕпе, техникипе уйăрăлса тăнине халь ĕнтĕ, уйрăмăнах Отечественнăй аслă вăрçă çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн, кашни совет çынни пĕлет. Тĕрĕс мар кăтартнă Вашки Совет Çарĕн чăн-чăн пурнăçне, Совет Çарĕн çыннисене.

Юлашкинчен эпир çакна каласа хăварасшăн. Вашки чăваш совет драматургийĕнче çамрăк автор. „Салют хыççăн" пьесси унăн пирвайхи пьесси. Ку пьесăна вăл ăнăççăр, сиенлĕ пьеса çырас тесе çырнă тесшĕн мар эпир. Анчах та драматурги ĕçĕнче опыт сахалли, пурнăçра мĕн характерлипе характерлă маррине çителĕклĕ таран курма пĕлейменни, пурнăçа тараннăн тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлейменни, т. ыт. тĕрлĕ сăлтавсене пула пьеси унăн ăнăççăр, сиенлĕ, юрăхсăр пулса тухнă. Малашнехи творчествăллă ĕçре пирĕн çамрăк автăра çакăнта асăннă пек çитменлĕхсенчен сыхланма, çак урока кирек хăçан та асра тытма сĕнес килет. Ку урок пĕр Вашкишĕн çеç мар, пур писатель-драматургсемшĕн те паха урок. Пĕрре тунă йăнăша тек тăвас мар,—çапла ĕмĕтпе ĕçлемелле пирĕн кашниннех.

*В. Алагер.*

# ЮРАТУ ВАЛЬСӖ




*Музыкӗ Г. Хирбюн*
*Сӑвви А. Эсхелӗн*

Атӑл тулать, хумӗ вылять
Юрату евӗр йӑлтӑртатса.

Хушса юрламалли:

Чун савӑнать, юрлас килет
Ырӑ та кӑмӑллӑ,
Тусӑм, эс хытӑ савсан.

Чӗре сиккет, ӗмӗт ҫиҫет,—
Пурнӑҫ хӗвелӗ ҫутӑ, таса.

Хушса юрламалли...

Аслӑ ҫӗршыв илемленет,
Халӑхшӑн ырлӑх килчӗ тулса.

Хушса юрламалли...

Пирӗн кунҫул ӗмӗр пӗрле
Юратупа вӑл тӑтӑр ҫунса.

Хушса юрламалли...

**Асӑрхаттарни:** Пӗччен юрлакане хушса юрламаллине малтанхи хут пӗччен юрлать, иккӗмӗш хутӗнче хор хутшӑнать.

---

# ПӖЛЕТӖР-И ЭСИР?

...Иккӗмӗш планета Венера тавра сывлӑш пуррине чи малтан Михайло Васильевич Ломоносов пӗлнӗ. Ҫакна Ломоносов Венера хӗвел тӗлне пулнӑ чухне сӑнаса илнӗ.

...Иван Иванович Ползунов Уаттран ҫирӗм ҫул маларах пӑспа ӗҫлекен машинӑн поршенне икӗ енчен те пӑспа ӗҫлеттермелле тунӑ. Унччен пӑса поршенӗн пӗр енне анчах ярса ӗҫлеттерекен пӑслӑ машинӑсене ҫеҫ тума пӗлнӗ.

...Шыв айӗнчен каякан телеграф кабельне тӗнчере чи малтан Кронштадтпа Петербург хушшинче тунӑ. Ҫак ӗҫе пӗтӗмпех вырӑс инженерӗсемпе техниксем тунӑ.

...Электричество ҫуттипе усӑ курас ӗҫе чи малтан вырӑс ученайӗсем Василий Владимирович Петров, Александр Николаевич Ладыгин, Павел Николаевич Яблочков пуҫарса янӑ.

...Чи малтанхи электродвигатӗле вырӑс ученайӗ Борис Семенович Якоби тунӑ.

...Виҫӗ фазӑллӑ электричествӑпа усӑ курас ӗҫе вырӑс ученайӗ Михаил Осипович Доливо—Добровольский питӗ нумай малалла янӑ. Урӑх ҫӗршыври электротехниксем вӑл ҫырса хӑварнӑ кӗнекесем тӑрӑх вӗреннӗ.

...Металлография текен наукӑна вырӑс ученайӗ Димитрий Константинович Чернов тунӑ.

*Ф. К.*

Хакě 8 тенкě
[illegible] 8 рублей

„ЯЛАВ“ („ЗНАМЯ“)

*литературно-художественный журнал*
*Союза Советских писателей Чувашии*